24-57

Раççей Фетератсийĕ Сотсиалисăмпа Канаш Респуплĕк

Тимуххя Хĕветĕрĕ

# Çăваш Çĕлхийĕн Крамматтикĕ

1. Фонеттик
2. Морфолоки

РЕСПУПЛĔКРИ
ÇĂВАШ КĔНЕКИ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ
ШУПАШКАР — 1924

Раҫҫей Хветератсийӗн Сотсиалисӑмпа Канаш Респуплӗк

Тимухха Хӗветӗрӗ

# Т̧ӑваш Т̧ӗлхийӗн крамматтикӗ

1. Фонеттик
2. Морфолоки

РЕСПУПЛӖКРИ
Т̧ӐВАШ КӖНЕКИ КӐЛАРАКАН УЙРӐМ
Ш̧УПАШКАР 1924

КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АСС

Областлит № 118. Печат. 2000 экз.

г. Чебоксары Типография Чувашгосиздата

# Умĕн каланă сăмах.

Ҫăвашла ҫырнă крамматтик ҫук пирки, нумайĕшĕ ҫăвашла крамматтике те вырăсла вĕренеҫҫĕ. Ку пит аван мар. Ҫавăнпа епĕр ҫăваш ҫĕлхийĕн крамматтикне ҫăвашла ҫырма шухăшларăмăр. Маттериалсене Н. И. Ашмарин, тата Т. М. Матвейăв ҫырнă крамматтикрен илтĕмĕр.

Тĕрлĕ терминсене куҫармалла пулҫĕ. Куҫарнă, йе шухăшласа кăларнă терминсене Ҫăваш Оплăҫĕнҫи Халăха Сутта Кăларакан Пайра пулнă комиҫҫи пăхса тухса йышăнҫĕ.

Епĕр тĕрлĕ терминсене вырăсла калама вĕреннĕ. Ҫавăнпа ҫăвашла терминсене тĕрĕс кăларнă пулин те, вĕсене хăнăхма вăхăт кирлĕ. Нимĕҫ вăрҫи тухсан Петербург вырăнне Петроград тесе каламалла турĕҫ. Петроград сăмаха хăнăхиҫҫен мĕн ҫухлĕ вăхăт иртрĕ. Терминсене ҫăвашла каласси те ҫавăн пекех. Ҫи малтан илтсен вĕсем тискерĕн туйăнаҫҫĕ. Вăл калама хăнăхмаҫран килет.

Крамматтик терминĕсене епĕр ҫапла йышăнтăмăр:

Халап—речь.

Пуплев—предложение.

Пуплев хуҫи, хуҫа—подлежащее.

Пуплев калавĕ, калав — сказуемое.

Йатҫумĕ — определение.

Калавҫумĕ — дополнение, обстоятельственное слово.

Тĕп пуплев — простое предложение, главное предложение.

Хуҫаллă пуплев — личное предложение.

Хуҫасăр пуплев — безличное предложение.

Пĕрлешнĕ пуплев — слитное предложение.

Йышлă пуплев — сложное предложение, придаточное предложение.

Ыйтуллă пуплев — вопросительное предложение.

Кăшкăруллă (вăйлă) пуплев—восклицательное предложение.

Саруллă пуплев — распространенное предложение.

Сарусăр пуплев — нераспространенное предложение.
Ҫĕнӳ — обращение.
Пуплевсумĕ — вводное слово.
Харкамсăмахĕ — вносные слова, чужие слова.
Хушмалҫă — приложение.
Пăнҫă — точка.
Хӳрепăнҫă — запятая.
Йĕкĕрпăнҫă — двоеточие.
Пăнҫăпа хӳрепăнҫă — точка с запятой.
Нумайпăнҫă — многоточие.
Йĕкĕрхӳре — кавычка.
Кăшкăру палли — восклицательный знак.
Ыйту палли — вопросительный знак.
Тĕп сăмах — простое слово.
Сыпăк — аффикс.
Сыпăклă сăмах — производное слово.
Йĕкĕр сăмах — сложное слово.
Сăмах татăкĕ, татăк — слог.
Уҫă сасă — гласный звук, открытый звук.
Хытă уҫă сасă — твердый гласный.
Хупă сасă — согласный звук, закрытый звук.
Ҫемҫе хупă сасă — мягкий согласный.
Йанăра сасă — звонкий звук.
Йанăрасăр сасă — глухой звук.
Сасăсен килĕшĕвĕ — созвучие.
Уҫă сасăсен килĕшĕвĕ — гармония гласных.
Хупă сасăсен хытăлăхпа ҫемҫелĕх мăшăрлăхĕ — парность согласных по твердости и мягкости.
Ку термине кĕскенĕн «хупă сасăсен хытăлăх мăшăрлăхĕ» теме пулаҫ.
Хупă сасăсен йанăралăхпа йанăрасăрлăх мăшăрлăхĕ — парность согласных по звонкости и глухости. Кĕскенĕн — сасăсен йанăралăх мăшăрлăхĕ.
Хупă сасăсем вăрăмланни — удвоение согласных.
Сасăсем кӳршĕленни — сочетание звуков.
Сасăсем сухални — элизия, выпадение звуков.
Тулли кӳлепе — полная форма.
Кĕске кӳлепе — краткая форма.
Сасăсем пĕрешкеленни — ассимиляция звуков.

Сасӑсем ылмашланни — чередование звуков.

Сасӑсен папӑравӗ, папӑрав — ударение.

Йапала йаҫӗ — имя существительное.

Палла йаҫӗ — имя прилагательное.

Сум йаҫӗ — имя числительное.

Йат вырӑнҫи, йат вырӑнҫискер — местоимение.

Сӑмахҫумӗ — предлог, послеслог.

Ӗҫхӗл йаҫӗ, ӗҫхӗл — глагол.

Ӗҫхӗлҫумӗ — наречие.

Пӗтӗҫтерӳ — союз.

Татӑсем — частицы.

Ҫӗвӗ — междометие. «Сасҫӗвӗ» сӑмахран илнӗ.

Йевӗр ҫӗввисем — звукоподражательные междометия. «Йевӗр» сӑмахран «йевӗрлӗ» сӑмах пур.

Пайӑр йат — собственное имя.

Пайӑрмар йат — нарицательное имя.

Пӗҫӗклетӳллӗ йат — уменшительное имя.

Пысӑклатулла йат — увеличительное имя.

Савӑшлӑ йат — ласкательное имя.

Хурлавлӑ йат — уничижительное имя.

Ар несӗлӗ — мужской род. Ар — йӑх, ӑратӑ. Йӑх йӑха туртать, несӗл несӗле туртать.

Ама несӗлӗ — женский род.

Тӗллевсӗр несӗл — средний род.

Пӗрреллӗ хисеп — единственное число.

Пумайла хисеп — множественное число.

Вӗҫле — склонять.

Вӗҫлесе пар, вӗҫлесе тух — просклонять.

Вӗҫленет — склоняется.

Вӗҫлев — склонение.

Вӗҫлевлӗх — падеж.

Йат вӗҫлевлӗхӗ — именительный падеж.

Хархам вӗҫлевлӗхӗ — родит., притяжительный падеж.

Пару вӗҫлевлӗхӗ — дательный падеж.

Айӑплав вӗҫлевлӗхӗ — винительный падеж.

Вырӑн вӗҫлевлӗхӗ — местный падеж.

Туху вӗҫлевлӗхӗ — исходный падеж.

Пӗрле вӗҫлевлӗх — творительный падеж.

Пирке вӗҫлевлӗх — причинный падеж.

Йен вĕçлевлĕх—направительный падеж.

Тухупа пĕрле вĕçлевлĕхĕ—исходнотворительный падеж.

Илпетлĕ пусăм—положительная степень.

Танлаштару пусăмĕ—сравнительная степень.

Илпетсĕр пусăм—превосходная степень.

Йĕрке сумĕ—порядковые числительные.

Шут сумĕ—количественные числительные.

Вак сумĕ—дробные числительные.

Валеçӳ сумĕ—разделительные числительные.

Сăпат йатвырăнђийĕ—личное местоимение.

Таварăнăçлă йатвырăнђи—возвратное местоимение.

Кăтартуллă йатвырăнђи — указательное местоимение.

Ыйтуллă йатвырăнђи — вопросительное местоимение.

Тувуллă йатвырăнђи — отрицательное местоимение.

Пĕлӳсĕр йатвырăнђи — местоимение неведения.

Тĕллевсĕр йатвырăнђи -- неопределенное местоимение.

Хирехирĕç йатвырăнђи — взаимное местоимение.

Пулайу ĕçхĕлĕсем — глаголы возможности.

Хăтлану ĕçхĕлĕсем — глаголы неоднократности.

Таварăнăçлă ĕçхĕлсем — возвратные глаголы.

Хистев ĕçхĕлĕсем — понудительные глаголы.

Пулăшу ĕçхĕлĕсем — воспомогательные глаголы.

Хал керунтийĕ — слитное деепричастие.

Вăхăт керунтийĕсем — временные деепричастия.

Ĕç керунтийĕ — соединительное деепричастие.

Пайташ — припастие.

Причастие тени крамматтикре пайсенђе тăракан тени пулаť. Читающий сăмаха илер. Пĕр йенђен вăл ĕçхĕлеен ушкăнĕнђе тăраť, мĕншĕн тесен, вăхăта пĕлтерет; тепĕр йенђен паллă йатђесен ушкăнĕнђе тăраť, м. т., несĕле пĕлтерет, тата вĕçленет. Причастие тенĕ сăмаха ђăвашла пайташ теме пулаť: п а й — часть т а ш пĕрлине пĕлтерекен сыпăк. Пайташ тени вара пĕр пайли, пайсенђе тăраканни тени пулаť.

Хађхи вăхăт—настоящее время.

Пулас вăхăт—будущее время.

Иртнĕ ĕçвăхăђĕ—прошедшее действия.

Иртнĕ хал вăхăђĕ—прошедшее состояние.

Малтан иртнĕ ĕç вăхăђĕ—предварительное действия.

Малтан иртнĕ халвăхăђĕ—предварительное состояния.

Тахҫан иртнӗ вӑхӑт—прошедшее многократное.

Тайӑм—наклонение.

Кӑтартуллӑ тайӑм—изъявительное наклонение.

Кӑтартусӑр тайӑм—неопределенное наклонение.

Тытӑнҫӑк тайӑм—сослагательное наклонение.

Килӗшупе ӗмӗт тайӑмӗ—уступительно-желательное наклонение.

Хушу тайӑмӗ—повелительное наклонение.

Тыту тайӑмӗ—условное наклонение.

Сӑпат—лицо. Сӑнсӑпат сӑмахран илнӗ.

Сапатла—спрягай. Сӑпатласа пар, сӑпатласа тух—проспрягай. Сӑпатланаҫ—спрягается.

Сӑпатлав—спряжение.

Ытла ырах марри те ҫуккинҫен лайӑх тесе, епӗр ку кӗнекене васкарах кӑлартӑмӑр. Тӗл пулакан йӑнӑшсем ҫинҫен пире пӗлтерме ыйтатпӑр.

*Т. Хӗветӗрӗ.*

# ЂӐВАШ ЂӖЛХИЙӖН ФОНЕТТИКӖ [1].

## § 1. Ђӑваш ҫырӑвӗнђи саспаллисем.

Ђӑваш ҫырӑвӗнђе 25 саспалли. Вӗсенђен саккӑрӑшӗ: А, Е, У, Ў, Ы, И, Ӑ, Ӗ саспаллисене *уҫӑ саспаллисем* теҫҫӗ; ыттисене вунҫиђђӗшне: В, Л, Љ, М, Н, Њ, Р, Й, К, П, Т, Ђ, Т̆, Ш, Х саспаллисене *хупӑ саспаллисем* теҫҫӗ. Вӗсене ҫапла йат акӑ мӗншӗн панӑ: А, Е, У, Ў, Ы, И, Ӑ, Ӗ сасӑсем уҫӑ сасӑсем—вӗсем илтӗнессе те уҫҫӑн илтӗнеҫҫӗ, тата вӗсене каланӑ ђух, ҫӑвар та уҫӑларах тӑрать: В, Л, Љ, М, Н, Њ, Р, Й, К, П, С, Ҫ, Т, Т̆, Ђ, Ш, Х сасӑсем *хупӑ сасӑсем*—вӗсене каланӑ ђух, ҫӑвар пӗтӗмпех хупӑ йе хупӑнарах тӑрать. Ҫакӑн пирки вара ҫав сасӑсенӗн паллисене те хӑшне уҫӑ саспаллисем теҫҫӗ, хӑшне хупӑ саспаллисем теҫҫӗ.

Хыттӑн, йе ҫемҫенӗн илтӗннине пӑхса, уҫӑ сасӑсене икӗ пайа уйӑраҫҫӗ: А, У, Ы, Ӑ сасӑсене *хытӑ уҫӑ сасӑсем* теҫҫӗ, Е, Ў, И, Ӗ сасӑсене *ҫемҫе уҫӑ сасӑсем* теҫҫӗ. Сӑмахра уҫӑ сасӑсем хыттисем пулсан, ӑна—*хытӑ сӑмах* теҫҫӗ, ҫемҫисем пулсассӑн, *ҫемҫе сӑмах* теҫҫӗ. Апат, кӑнђала, ,ыраш сӑмахсем хытӑ сӑмахсем пулаҫҫӗ; пўрт, хӗвел кӗвенте сӑмахсем ҫемҫе сӑмахсем пулаҫҫӗ.

Вӑрӑмӑн йе кӗскенӗн илтӗннине пӑхса, уҫӑ сасӑсене тата урӑхла уйӑраҫҫӗ: А, У, Ы, Е, Ў, И, сасӑсене *вӑрӑм сасӑсем* теҫҫӗ; Ӑ, Ӗ сасӑсене *кӗске* сасӑсем теҫҫӗ. Ђӑнах та Ӑ-па Ӗ сасӑсем хӑш сӑмахра: тӗслӗхрен, тӑрас, утмӑл, ҫирӗм, кӗрес сӑмахра ытла та кӗскен илтӗнеҫҫӗ.

Кӗске уҫӑ сасӑллӑ сӑмах татӑкне *кӗске* татӑк, вӑрӑм уҫӑ сасӑллӑ татӑка *вӑрӑм татӑк* теҫҫӗ. Пирӗн, кашкӑр сӑмахсенђе *пи, каш* вӑрӑм татӑксем пулаҫҫӗ, рӗн, кӑр—кӗске татӑксем пулаҫҫӗ.

Ђ, Ҫ, Т̆, Љ, Њ сасӑсене йалапах ҫемҫе илтӗннӗрен, *ҫемҫе хупӑ* сасӑсем теҫҫӗ.

25 саспалләрен пуҫне тата, ђӑваш ђӗлхинђе О саспалли пур. Ӑна йут ђӗлхесенђен куҫнӑ сӑмахсенђе ҫыраҫҫӗ.

---

1) Пирӗн ђӑваш алхвавитӗнђе Ф сас палли ҫук. Анђах Тимухха Хӗветӗрӗ йепле ҫырнӑ, ҫапллипех ҫапатпӑр. Ретакси.

# Уçă сасăсем.

## § 2. А.

Ђăваш ђĕлхинђи А йаланах таса илтĕнет. Çавăнпа епир ђăваш кĕнекинђе А сасцаллине курсан, йăна йаланах А тесе вуламалла: лаша, пайач, ыран. Вырăс ђĕлхинђи А апла мар. Вырăс ђĕлхинђи А йанăравлă пулсан анђах таса илтĕнет. Йавăрав пулмасан, вăл хăш ђухпе ђăвашла Ă сасă пек илтĕнет. Сахар, лошадь, думал сăмахсене илер. Çак сăмахсенђе пусăмлă А таса илтĕнет, пусăмсăр А таса илтĕнмест ђăвашла Ă пек илтĕнет.

## § 3. У.

Пашалу, лашу, тата упа, нумай тепĕ сăмахсенђи У сасăсене хытăрах итлесе пĕр пĕринпе танлаштарса пăхар. Мĕн систерĕр епĕр?—У сасă сăмах тĕпĕ*) вĕсенђе таса, уçă илтĕнет. Сăмах пуçламăшĕнђе, йе варринђе тасах илтĕнмест.

Тури ђăвашшем çавăн пек таса илтĕнмен У сасă вырăнне О калаççĕ: тĕслĕхрен, укçа, нумай, ура тес вырăнне окçа, номай, ора теççĕ. Сăмах тĕпĕ вĕçĕнђи У сасса вĕсем те тĕрĕсех калаççĕ: апу, пашалу, ору, оксу теççĕ.

Хăш калаçура ђăваш ђелхи О сасăпа У сасă пĕр сăмахра çывăх тăпине йуратмасť. Çавăнпа пĕр пĕр вырăс сăмахĕнђе О сасăпа У сасă та пулсассăн çавăн пек самахсене ђăваш ађисем тӱрех тĕрĕс калаймаççĕ: *хомут* тес вырăнне *хомот* йе *хумут* теççĕ, *пою* тес вырăнне *пойо*, йе *пуйу* теççĕ.

## § 4. Ы.

Ы сасса ђăвашла та, вырăсла та пĕр пекех калаççĕ. Анђах йаланах мар. Вырăсла Ы красный, белый, тата ытти çавăн пек сăмахсенђе ђăвашла Ă пек илтĕнет, тата ђăваш ђелхинђе Ы сасă çемçе хупă сасăсем Ť. Ç, Ђ хыççăн семçелет те, çемçепĕн И пекрех илтĕнет: çырма çыру, ђыкан, ђылай, ђышкă. Ťыха. Çавăнпа хытă сăмахра Ђ, Ç, Ť хыççăн илтĕнекен Ы сасса çемçе Ы теççĕ.

---

*) Пуç, пуçăн. пуçра, пуççенђе, тата, вăрман, вăрмансем, вăрмансенĕн, вăрмансене сăмахсене илер. Çак сăмахсенђе пуç, вăрман сăмахсене **сăмах тĕпĕсем** теççĕ. Сăмах тĕпĕсем вĕсем хăйсем улшăнмаççĕ, анђах вĕсенђен тĕрлĕ сăмах тума пулаť. Кăмака, алăк тĕпсене илер. Вĕсенђен кăмакари, кăмакасенђи, кăмакасемшĕн. алăкпа, алăкран, алăксенђен сăмахсем тума пулаť. Çавăнпа вара кăмака, алăк сăмахсем сăмах тĕпĕсем пулаççĕ.

## § 5. Ă.

А саса хаш сăмахсенђе ытла та кĕскен илтĕнет. Тĕслехрен. тăр, пăрçа, тăвар сăмахсенђе вăл çавăн пек илтĕнет. Вырăс ђĕлхинђе А çинђе йе О синђе пусăм пулмасан, вĕсем - Ă пек илтĕнеççĕ *). Тĕслĕхрен: думаю, лошадь, сапоги, доктор, тата ытти сăмахсенђе те. Çапла вара нумайĕшĕ вырăс ђĕлхинђе Ă сасă çук тепи тĕрĕс мар. Вырăс ђĕлхинђе те Ă сасă пур, палли анђах çук.

*Шăнăç, ђăрăш, ђăхă,* тата *çăмăл, çăкăр, хăрăм* сăмахсене илер. Çакă сăмахсенђе «Ă» саспалли пуринђе те пĕрешкел, анђах сасси пĕрешкелех мар, пăртак уйрăмрах илтĕнет. Малтанхи виçĕ сăмахра Ă сасă çăрарах илтĕнет, кайранхи виçĕ сăмахра шĕвĕрех илтĕнет. Анђах пур çĕрти ђăвашшем те çав сасăсене, хађ каланă пек, икĕ тĕрлĕ каламаççĕ. Анатри ђăвашшем, тата турисем те нумайĕшĕ пĕр пекех калаççĕ.

## § 6. Е.

Е вырăсла Э сасă пек, йе *перо, петь* сăмахсенђи Е сасă пек. Ђăвашла Е саспалли пĕр сасса кăна пĕлтерет—Е сасса. Вырăсла Е саспалли сăмах пуçламăшĕнђе, Ъ па Ь умĕнђе, тата уçă сасăсем умĕнђе пулсан, икĕ сасса пĕлтерет--Й тата Э сасса: Егор—Йэгор, лает—лайэт, съест, стихотворение—стихотворенийэ. Йе илтĕнсен, ђăвашла *йе* çыраççĕ: йепле, тийек, Йетĕрпе.

Вырăслипе танлаштарса пăхсан ђăвашла Е йаланах таса, уçă илтĕнет. Вырăсла Е апла мар. Тĕслĕхрен: *ведь, видеть, учитель* сăмахра вăл ђăвашла Ĕ пек илтĕнет: *пишет, пляшет* сăмахра ђăвашла Ă пек илтĕнет: пишăт, пляшăт **).

---

*) Вырăсла А сасăпа О сасă йанăрав умĕнђи иккĕмĕш татăкра тăраççĕ пулсан, йе йанăрав хыççăн сăмах варринђе тăраççĕ пулсан, вĕсем ђăвашла Ă пек илтĕнеççĕ: доктор—доктăр хорошо—хăрошо, даром—дарăм, посмотрел—пăсмотрел. сапоги—сапăги, знаменитый—знăменитăй, сахар—сахăр, кожанный—кожăннăй, агитатор—ăгитатăр, сăмах вĕçĕнђи йанăравсăр А, О кĕске А пек, анђах кăшт ђăвашла А майлăрах илтĕнет: слăва, ур'яма·

**) Вырăсла Е йанăрав умĕнђи, иккĕмĕш татăкра, йе йанăрав хыççăн сăмах варринђе пулсан, ђăвашла Ĕ пек илтĕнет, çав вырăнсенђех: Ж, Ш, Ч, Ц хыççăн ђăвашла Ă пек илтĕнет: метена—мĕтена бегуна—бĕгуна, полем—полĕм, видел—видĕл, жестяной—жăстяной, можем—можăм, целовать—цăловать, кажется—кажăтцă, человек—чăловек.

## § 7. Ӳ.

Вырăссен Ӳ сасă çук. Ӳ калас тесессĕн, тутана У каланă ђух-нехи пекех ђăмăртамалла, анђах шĕвĕртсе маларах тăсмалла, тата ђĕлхе вĕçне çӳлерех çĕклемелле: çӳхе, çӳпçе, çӳлĕк, çӳхӳ.

## § 8. И.

Ку сасă вырăсла йанăравлă И пек илтĕнет. Вырăсла И. йанăравсăр пулсан хăш сăмахсенђе Ă пек, хăш сăмахсенђе Ĕ пек илтĕнет; тĕслĕхрен, *мальчик, колокольчик, русский* сăмахра вăл Ă пек илтĕнет, *видит, закуривать* сăмахра Ĕ пек илтĕнет. „*В избу, мужик, лисьи, в их*“ сăмахсенђе вырăсла И сасă Ы пек, йе ЙИ пек илтĕнет.

Анђах ђăвашла И те йаланах пĕр пек мар, хытă сăмах вĕçĕнђи И саспаллине хыттăнтарах Ы майлăрах вуламалла; тĕслĕхрен: *алли, пăтти, ури, усалли, каймалли* сăмахсенђе хытă сăмах вĕçĕнђи И сасса *хытă* И теççĕ.

Ђăваш ђĕлхинђе сăмах вĕçĕнђе Ы нихăçан та пулмасть. Ун вырăнне хытă И пулать: упи, алли. Кăрмăш калаçăвĕнђе кăна хăш вырăнсенђе хытă И вырăнне Ы калаççĕ: упы, аллы, улы теççĕ.

## § 9. Ĕ.

Ĕ сасă нумай сăмахсенђе кĕскенĕн, сисмелле те мар илтĕнет: тĕслĕхрен, çивĕт, ђĕре, çирĕм, çитмĕл сăмахсенђе.

Ă саспалли пекех Ĕ саспалли те ĕлĕк икĕ сасса пĕлтернĕ. Йĕр, кĕр (кĕрес), кĕпе, çĕр (çĕр çине) тата шĕвĕр, кĕмĕл, кĕрĕк, çĕр, (çĕр тепкĕ) çĕрле сăмахсене илер. Кайранхи сăмахсенђе Ĕ малтанхисенђен урăхларах, çăрарах илтĕнет.

Хăшĕ вырăс ђĕлхинђе Ĕ сасă çук теççĕ. Вăл тĕрĕс мар. „Е“ сасă çинђен каланă ђух епир вырăссен те ĕ пуррине куртăмăр.

Ăна кăтартма тата икĕ сăмах илер. Девять, десять, сăмахсенђи я сасă ђăвашла Ĕ пекех илтенет. *).

## Хупă сасăсем.

## § 10. В, С, Ç, Ш, Ђ, Н.

Хупă сасăсем çинђен пурин çинђен калама кирлĕ мар. Вĕсем нумайĕшĕ вырăсли пекех илтĕнеççĕ. Анђах пурте мар. Епĕр çак йулашки сасăсене кăна пăхса тухăпăр.

---

*) Йанăрав уйĕнђи иккĕмĕш татăкра, тата йанăравпа сăмах пĕтмĕшĕ хушшинђи Я ђăвашла Ĕ пек илтĕнет: рядовой-рĕдовой, пятерик-пĕтерик, пятачок-пĕтачок, сеять-сейĕть, видят-видĕт.

В. Вырӑсла В сасӑ сӑмах вӗҫӗнђе, тата йанӑрасӑр сасӑсем умӗн Ф сасса тухаӗ. Ҫыраҫҫӗ: Петров, лавка тесе—вулаҫҫӗ Петроф, лафка тесе. Ђӑвашла В апла мар, йалан В илтӗпет, сӑмах вӗҫӗнђе те: лав, мухтав, йалав.

С. Вырӑсла С ҫемҫе уҫӑ сасӑсем умӗн ҫемҫенӗн-Ҫ пек илтӗнет: все-вҫе, неси-неҫи, спеть-ҫпеть. Ђӑвашла С хытӑ сӑмахра та. ҫемҫе сӑмахра та хыттӑн илтӗнет: сана, сирӗн, симӗс, сӳс. Ҫакӑн пирки Ҫ илтӗнекен ҫемҫе сӑмахра та йалан Ҫ ҫыраҫҫӗ: ҫӳре, ҫимӗҫ, пиҫ, ҫиплӗ, ҫӗр, ҫӳҫ ҫырас пулаӗ, ахалин—сӳре, симӗс, пис, сиплӗ, сӗр, сӳс ҫырнӑ пулаӗ.

Ҫ. Ку сасӑ вырӑсла СЬ пек илтӗнет, анђах кӑшт урӑхларах. Ҫ сасӑ ђӑваш ђӗлхинђе хытӑ сӑмахра та, ҫемҫе сӑмахра та пулаӗ. Вӑл ҫемҫелнӗ С мар, хайне уйрӑм сасӑ: ҫап, ҫип, ҫуп, ҫӳпӗ, ҫирӗк, ҫыран.

Ш. Вырӑсла Ш нихӑҫан та ҫемҫелмест, хыҫҫӑн ҫемҫе пал-лӑ пулсан та, йалан хыттӑн илтӗнет: мышь-мыш, шалишь-шалиш, сидишь-сидиш. Ђӑвашла Ш семҫе сӑмахсенђе пӗтӗмпех ҫемҫелмесен те, ҫавах ђылай ҫемҫелет: паллаш-пилеш, шӑрпӑк-шӳрпе.

Ђ. Ђӑвашла Ђ вырӑсла Ч пек илтӗнет, анђах пӑртак ҫемҫерех, Ц майлӑрах: ђӑн, ђир, ђеђек, ђӳређе, ђипер.

Н. сасӑ К сасӑ умӗн сӑмсанӑн Н сасӑ пек илтӗнет: куршанкӑ, кӑрђанкӑ, манка, ункӑ, тенкел, шӑнкӑрђӑ, мӑн кӑмпа, мӗн куртӑн, мӑн куҫ.

## § 11. В. П. М.

Вырӑс ђӗлхинђе В, П, М, сасӑсем ҫемҫе уҫӑ сасӑсем умӗн хытӑ ҫемҫелеҫҫӗ. Ђӑваш ђӗлхинђе ун пекех ҫемҫелмеҫҫӗ—Ш, пек, кӑшт хытӑрах илтӗнеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та вара ђӑваш ађисем вырӑсла вӗреннӗ ђухне В, П, М, сасӑсене Я, Ю, Е сасӑсемпе лайӑх ҫыпӑҫтараймаҫҫӗ: *мясо-м'асо* *) тес вырӑнне: *масо*, *месо* йе *мйасо* теҫҫӗ; *пять-п'ат* тес вырӑнне *пет* йе *пйайат*-теҫҫӗ. *Овес*-ов'ос тес вырӑнне *овос*, *овес*, *ойвос* йе овйос теҫҫӗ.

*) Вырӑс ђӗлхинђе вӗренӳлӗх транскриптсинђе ҫемҫелнӗ хупӑ сасӑсене ҫапла паллӑ тӑваҫҫӗ: саспаллин сылтӑм йенђен аппостроф лаҫтаҫҫӗ. Тӗслӗхрен. любить, свет, перепись, лентяй, дядюшка, Сидоров сӑмахсене ҫапла ҫыраҫҫӗ: л'юбить; с'в'эт, п,эр'еп'ис', л'эн'тай, д'д'ушка," С'идороф. Вӗренӳлӗх трепскрипсине ҫырас тесен, ҫемҫелнӗ ђӑвашла сасӑсене те ҫавнашкалах ҫырма пулаӗ. Тенкел, тӗлӗк, пиллӗк сӑмахсем ӑнашкал ҫырсан, т'ен'г ел', т'ъл'ьк'. п'ил'л'ьк, пулаҫҫӗ.

## § 12. Ť, Ԓ, Ӈ.

Ť сасă ҫемҫелнĕ Т пек илтĕнет: кураť—илет, кайаť—килет. Тури калаҫура Ť анатри калаҫуринђен ҫемҫерех илтĕнет. Ҫапах та тури калаҫури Ť те вырăсла ТЬ сасăпа тан мар. Вырăсла ТЬ пăртак ЦЬ майлăрах илтĕнет: мать, материя.

Ԓ Ҫемҫелнĕ Л пек Ӈ ҫемҫелнĕ Н пек илтĕнет. Вырăсла саспаллисемпе паллă тусан, вĕсене ак ҫапла ҫырма пулаť: ТЬ, ЛЬ, НЬ, йе Т', Л', Н'; Ť, Ԓ, Ӈ, саспаллисене хытă сăмахра, хытă сыпăкра кăна ҫыраҫҫĕ.

Авалхи ђăваш ђĕлхинђе хытă сăмахра Ť, Ԓ, Ӈ, сасăсем пулман. Вĕсем ҫĕнĕ сасăсем. Вĕсем хытă сăмахра Й, йе Ь, йе тата пĕрпĕр ҫемҫе усă сасă ҫухалнăран пулнă.

Выђа, выђăх сăмахсене илер. Ҫак сăмахсенђен малтанхи вăйă—вăйăла сăмахран выђа пулса ларнă; тепри „вăй=вăйлăх (вăй паракан) сăмахран тухнă, выђăх пулса ларнă. Выђа, выђăх сăмахсенђе Ԓ сасă ăҫтан тухса ларнă? Й сасă ҫухалнă, анђах пĕтĕмпе ҫухалса ҫитмен, асăнмалăх Л сасса ҫемҫетсе Ԓ туса хăварнă. *Хуӈ* сăмаха илер. Вăл хăйĕн тепĕ сăмахран пулнă. Мĕнле? Й сасăпа Е сасă ҫухалнă, каллех пĕтĕмпех мар, Н сасса ҫемҫетсе Ӈ туса хăварнă. Тата аťа, паťах, пуťă сăмахсене илер. Вĕсем мĕнле сăмахсенђен пулнă? Айта, пайтах, пыйтă сăмахсенђен. Мĕнле? Й сасă ҫухалнă та, Т сасса Ť туса хăварнă.

Тата хытă сăмахсенђе: Ť, Ԓ, Ӈ сасăсем хăйсем умĕнђи Е сасă ҫухалнăран пулаҫҫĕ: кайатĕ, вулатĕ, тăватĕ халĕ тес вырăнне кайаť, вулаť, тăваť, хаԓ-теҫҫĕ. Кунта Т, Л, сасăран Ť, Ԓ, йепле пулнă?

— Е сасă ҫухалнăран *) йалсенĕн, пăрусенĕн, путене, путек, каллех тес вырăнне тури ђăвашшем йалсаӈ, пăрусаӈ, пуťана, пуťак, каллах—теҫҫĕ, ҫакăнта Ӈ сасă, Ť сасăпа Ԓ сасă ăҫтан тухса ларнă? Ҫемҫе сăмахсем, ҫемҫе татăксем хыта пуҫланă, анђах пĕтĕмтех хытса ҫитеймен-ха,—Ԓ, Ӈ, Ť-сасăсем вĕсем сăмахсем, йе сăмах татăкĕсем ĕлĕк ҫемҫе пулнине кăтартаҫҫĕ.

Ҫапла вара Ԓ, Ӈ, Ť сасăсем ҫемҫе татăксем хытвăран та пулнă.

**Хушша калани:** Тури калаҫури р' сасă та Й сасă тухса ӳкнĕрен пулнă: кайран—кар'ан майра—мар'а, сайра—сар'а уйран—ур'ан хытă сăмахри Р сасă вăл ҫĕнĕ сасă.

*) Пĕтмĕш Е ҫухалсан, ытти хупă сасăсем те ҫемҫелеҫҫĕ: амăшĕ—амăш', сурăхĕ—сурăх', тăлăпĕ тăлăп', урамĕ—урам', патакĕ—патак'.

## § 13. Сасăсен килĕшĕвĕ.

Ҫăваш ҫĕлхинҫе хытă уҫă сасăсем хытă уҫă сасăсемпе килештерессĕ, ҫемҫе уҫă сасăсем ҫемҫе уҫă сасăсемпе килĕштерессĕ. Хытă уҫă сасăсемпе ҫемҫе уҫă сасăсем килештермессĕ. Ҫавăнпа ҫăваш сăмахĕнҫе пĕр уҫă сасă хытти йулсассăн, ытти уҫă сасăсем те хыттисем пулассĕ, пĕр уҫă сасă ҫемҫе пулсассăн, ытти уҫă сасăсем те ҫемҫисем пулассĕ. Кăмака, урам, ыраш, ыттăн, тата, тимĕрҫĕ, кĕмĕл, ĕне, ҫўреҫе сăмахсене илер. Ҫавăнта малтанхи тăватă сăмахра уҫă сасăсем пур те хыттисем, йулашки сăмахсенҫе пур те ҫемҫисем.

1. Шăнкăр-шăнкăр шыв йухат,
Шăнкăрҫ ҫĕппи шыв ĕҫет.
Ҫĕкеҫ ҫĕппин мĕн ĕҫ пур?
Ыттăнпа кĕмĕл тавлашат
Пăхăр укҫанăн мĕн ĕҫ пур?
Тăванпа тăван савăшат,
Ҫыҫĕ йутăн мĕн ĕҫ пур?

* * *

2. Шухăшлана пĕр ухмах
Инҫе кайса ҫўреме,
Ҫутă ҫанталăк курма.
Хăйĕн ăсне кăтартма.

Икĕ сăмахран пуҫне, ҫак сăвăсенҫе те ҫавнах куратпăр: сăмахра пĕр уҫă сасă хытти пулсассăн, ытти уҫă сасăсем те хыттисем пулассĕ: пĕр уҫă сасă ҫемҫи пулсассăн, ыттисем те ҫемҫисемех пулассĕ.

Ку пĕтĕмпех мар-ха. Ҫав сăмахсенех илер, анҫах уҫă сасăсене мар, хупă сасăсене асăрхар. Мĕн сисетпĕр епĕр? Акă мĕн. Сăмахра уҫă сасăсем, хыттисем пулсассăн, хупă сасăсем хыттăн илтĕнессĕ, уҫă сасăсем ҫемҫисем пулсассăн, хупă сасăсем ҫемҫенĕн илтенессĕ. Ытти сăмахсенҫе те вĕсем ҫавнашкал. Тĕслĕхрен тылă—тилĕ, ăна—ĕне, паракан—перекен, куракан—кўрекен, пулнă—пўлнĕ сăмахсенҫе хăшĕнҫе хупă сасăсем пур те хыттăн илтĕнессĕ, хăшĕнҫе ҫавсемех ҫемҫенĕн илтĕнессĕ.

Ҫапла ĕнтĕ уҫă сасăсене анҫах мар, хупă сасăсене те хыттăн йе ҫемҫенĕн илтĕнnине пăхса икĕ пайа уйăрассĕ: пĕр пайĕ хытă хупă сасăсем, теперь пайĕ хупă сасăсем. Хупă сасăсем йевĕрĕн илтĕнессĕ пулсан та, сапах вĕсене пĕр саспаллипе паллă

тăваççĕ, мĕншĕн тесен, уçă сасăсен паллисене кура, епĕр вĕсене хыттăн та, çемçен те вулама пултаратпăр: уçă сасăсем хыттисем пулсан, хыттăн вулатпăр, çемçисем пулсан, çемçенĕн вулатпăр; тĕслĕхрен: Т, Р, К, вырăнне Т′, Р′, К′ тетпĕр. Пĕр хупă сассах икĕ тĕрлĕ илтĕнипе *хупă сасăсен хытăлăхпа çемçелĕх мăшăрлăхĕ теççĕ: хупă сасăсен килĕштерĕвĕ теме те пулать.*

Ђăвашшенĕн çемçенĕн илтĕнекен хупă сасăсене те аппострафпах паллă тусан, епĕр акă мĕнле тапăлитсă тума пултаратпăр:

Хупă сасăсен хытăлăхпа çемçелĕх мăшăрлăхĕ.

| | | | | | | | | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Хытă сасăсем: | В | Л | М | Н | Р | К | П | Т | Ш | Х | С | — | — | — | — | — | — |
| Çемçе сасăсем: | В | Л | М | Н | Р | К | П | Т | Ш | Х | — | Љ | Њ | Й | Ç | Т̆ | Ђ |

Анђах астăвас пулать: М′, В′, П′, сасăсем, тата ыттисем хăшĕ вырăс ђĕлхинђи пекех çемçе мар, пăртак хытăрах.

Сăмахра уççисем те, хупписем те хыттăн илтĕнеççĕ пулсан, çаван пек сăмаха *хытă сăмах* теççĕ: тылă, паракан, куракан—хытă сăмахсем пулаççĕ: çемçенĕн илтĕнеççĕ пулсан, *çемçе сăмах* теççĕ: тилĕ, перекен, кўрекен—çемçе сăмахсем пулаççĕ.

Çапла ĕнтĕ ђаваш сăмахĕсем йе хытă, йе çемçе пулмалла. Анђах çак саккун пăрăнаççăр мар. Вĕсенђен пуçне тата ђăвашшен *хутăш* сăмахсем те пур. *Хутăш* сăмах тесе епĕр хытă сасăсемпе çемçе сасăсене килĕштерекен сăмаха калатпăр. Упăте, тăри, путене, путек, пурне, анне сăмахсем хутăш сăмахсем, мĕншĕн тесен, вĕсен хăш татăксем малтанхисем—хыттисем; хăш татăкĕсем—йулашкисем, çемçисем.

## § 14. Сасăсен килĕшĕвĕпе сыпăксем.

Епĕр ку таранђђен килĕшў саккунĕ йенђен тĕп сăмахсене пăхрăмăр. Халĕ сыпăксене пăхар. Хăш сыпăк сăмах тĕпĕпе килĕштерет, хăшĕ килĕштермест. Лашала-ĕнеце, лашаран-ĕнерен, кайатăн-килетĕн, кайатпăр-килетпĕр, кайах-килех, кайсам-килсем, çакăн пек кўлепесенђе, тата ытти нумай кўлепесенђе сыпăксем сăмах тĕпĕсемпе килĕштереççĕ: сăмах тĕпĕ хытă пулсан, вĕсем хытă пулаççĕ; çемçе пулсан, вĕсем те çемçе пулаççĕ.

Вакçеççӗ, усалскер, пуçтараççӗ, пуçтарӗçин, пуçтарӑпин, пулиђђен, каймассерен, кайађђӗ çакӑн пек кӳлепесенђе *çеççӗ, скер, çӗ, ин, ђен, серен, ђӗ,* тата нумай ытти сыпӑксем те сӑмах тӗпӗпе килӗштермеççӗ, йаланах çемçе пулаççӗ.

Нумайлӑ хисеп сыпӑкӗ *сем*, виççӗмӗш сӑпат*) сыпӑкӗ Ӗ, тата хытӑ И уçӑ сасӑсен килӗшӳ саккунне йалан пӑсаççӗ: сӑмах тӗпӗ хытӑ пулсан та, вӗсем çемçе пулаççӗ; тӗслӗхсем: лашасем, йавӑççем, йытти, алли, кайманни, хуђӗ, кушакӗ, умӗ, тӑратӗ, кулатӗ, ларӗ, кулӗ, ларђӗ, кулђӗ, кайађђӗ, каймӗђђӗ.

Сӑмахра пӗр сыпӑк çемçе пулсан, ун хыççӗнђи ытти сыпӑксем те вара çемçисем пулаççӗ, хыттисем пулмаççӗ. Тӗслӗхсем: лашисемпе, йыттинђенех, хурсемпе.

Аватри ђӑвашшен çемçе сыпӑк хыççӑн хытӑ сыпӑк нихӑçан та пулмасӗ. Тури ђӑвашшен çемçе сыпӑк хыççӑн та хытӑ сыпӑксем пулма пултараççӗ. Вӗсем, тӗслӗхрен: ӗнейӑн, ӗнепа, ђиркуйӑн, пирӑн, пира теççӗ. Нумайлӑ хисепӗн *сем* сыпӑкӗ вырӑнне вӗсем хытӑ сӑмахсенђе *сам* теççӗ, тӗслӗхрен: лашасам, алӑсам, кашкӑрсам теççӗ.

Çемçе сыпӑк хутшӑнсан, хытӑ сӑмах вӗсӗнђи хупӑ сасӑ çемçелет; пулмӗ—пул′мӗ, татмӗ—тат′мӗ, анмӗ—ан′мӗ, анне—ан′не, ывӑлне—ывӑл′не, тӑванне—тӑван′не. Сем, сен сыпӑк анђах хӑй умӗнђи хупӑ сасса çемçетмест: çынсем, туратсем, çынсенӗн, туратсенӗн. Вӑл С сасӑ çемçелментен килет.

Нумай калаçусенђе Ђ, Ç, Ť çемçе хупӑ сасӑсем умӗнђе Л, Н çемçелет: панťа—пан′ťа, панťӑк—па′нť′ӑк, калђа—кал′ђа, шанђӑк—шан′ђӑк, шалçа—шал′çа, çулçӑ—çул′çӑ, анђах—ан′ђах.

Вырӑс сӑмахӗсенђе те хупӑ сасӑсен хытӑлӑхпа çемçелӗх мӑшӑрлӑхӗ пур, анђах урӑхларах. Вырӑс ђӗлхинђе хупӑ сасӑсем çемçе уçӑ сасӑсем умӗнђе кӑна çемçелеççӗ п′этух, в′эс′ьло, фс′э.

---

*) Ђӑваш ђӗлхинђе йапала йађӗсем, хӑш йатвырӑнђисем, тата хӑшхӑш ытти сӑмахсем те, камӑн пулнине пӑхса тӑватӑ кӳлепене уйӑралаççӗ: 1-мӗш кӳлепе йапала камӑнне пӗлтермест, йапаланӑн йатне анђах пӗлтерет: лаша, кӗнеке, тӑван сӑмахсем нийепле сӑпат сӑмахӗсем те пулмаççӗ, вӗсем сӑпатсӑр сӑмахсем: лашам, кӗнекем, тӑванӑм—пӗррремӗш сӑпат сӑмахӗсем пулаççӗ, вӗсем манӑннине пӗлтереççӗ: Лашу, кӗнекӳ, тӑвану сӑмахсем иккӗмӗш сӑпат сӑмахӗсем вӗсем санӑннине пӗлтереççӗ: Лаши, кӗнеки, тӑванӗ виççӗмӗш сӑпат сӑмахӗсем, вӗсем унӑннине пӗлтереççӗ.

## § 15. Килĕшў саккунин фиçиолокийĕ.

Килĕшў саккунĕ сасăсен фиçиолокинђен килет. Уçă, йе хупă сасăсем çемçенĕн илтĕнни ђĕлхе варри çĕкленнĕрен килет. Тĕслĕхе *пер* сăмаха илер. Пер сăмахра ђи вăйли Е сасă. Хупă сасăсем унпа килĕштерме, ун майлă пулма тăрăшаççĕ.

Е сасса каланă ђух епĕр ђĕлхе варрине çăвар мађђи патнелле çĕклетпĕр. Ку ђи аслă сасă пирки, ђĕлхе ăна калама П сасă каланă ђухах хатĕрленсе çўлелле çĕкленет. Çавăнпа П сасă та çемçенĕн илтĕнет. Р сасса каланă ђух, ђĕлхе ытлашши ĕç тумасť, çўлелле çĕкленнипех тăраť. Çавăнпа Р сасă та çемçенĕн илтĕнет. Тата *килетĕп* сăмаха илер. Хупă сасăсем çемçелмеççĕ пулнă пулсан, çак сăмаха каланă ђух, ђĕлхе çавăрăннине çапла ўкерме пулнă пулĕђђĕ:




Çапла çавăрăнма ђĕлхене çăмăл мар: вăхăт та, вăй та нумай кирлĕ. Хупă сасăсене çемçетсе каласан, çав çул тўрĕленет те, ђĕлхе ĕçĕ вара çăмăлланаť, пăнђăллă йĕрке майлă пулаť. Сасă оркăнĕсем, калаçнă ђух, вăхăтпа енеркп економийĕ тăвас тесе, ытлашши протсес тумаççĕ, пĕр майлăрах пулма тăрăшаççĕ. Çавăнпа вара сăмахсем те пĕр майлăрах тухаççĕ.

## § 16. Уçă сасăсем хытса пыни.

Килĕшў саккунĕ тăрăх, ђăваш ђĕлхинђи сăмахсем йе хытă, йе çемçе пулмалла. Анђах пур сăмах та ăнашкал мар, хутăш сăмахсем, тата нумай сыпăксем килĕшў саккунне пăхăнса тăмаççĕ. Ăçтан пулнă хутăш сăмахсем? Мĕншĕн хăшхăш сыпăксем йаланӑх çемçе пулаççĕ? Ђăваш ђĕлхине пĕлекен вĕренўçĕсем ăна çапла ăнлантараççĕ. Вĕсем авалхи ђăваш ђĕлхинђе çемçе сăмахсем хађхинђен нумай пулнă теççĕ. Çав çемçе сăмахсенђен хăшĕ пурăна киле хыта пуçланă. Вĕсенђен хăшĕ пĕтĕмпех хытса çитнĕ, хытă сăмахах пулса кайнă, вĕсене çемçенĕн калама пур çĕрте те пăрахнă: ыттисем те хытса çитнĕ, анђах вĕсене хăш çĕрте авалхи пек çемçенĕн калаççĕ; хăшĕ çурри хытнă, çурри хытайман— хутăш сăмах пулса тăнă: хăшĕ тата пĕтĕмпех хытнă, анђах вĕсен ĕлĕк çемçе сăмах пулнин паллисем йулнă.

Сăмахсем хытса пынине пăхса ҫакнашкал карта тума пулат̆.

| Сăмах пĕтĕмпех ҫемҫе | Сăмах ҫурри хытнă | Сăмах хытса ҫитнĕ, анђах ҫемҫе пулнин паллисем йулнă | Сăмах пĕтĕмпех хытса ҫитнĕ, ĕлĕк ҫемҫе пулнине пĕлме ҫук. |
|---|---|---|---|
| Ӳпелен (ђ) *) | упален (а) | опален (й) | — |
| Пикене (ђ) | пукане (а) | покаңа (й) | — |
| Питек | путек (а) | пут̆ак (й) | — |
| Бӳдене (тт) | путене (а) | пут̆ана (й) | — |
| Кенĕр (вен) | канҫĕр (а) | канҫăр (й) | канђăр (к) |
| Пӳрне | пурне (а) | порђа (й) | порна (ђ) |
| Емел | — | амаӆ | амал (й) |
| Сев (тур) | саватĕ | сават̆ | сават |
| Тийе | тийа (й) | т̆а (й, ђ, кр) | — |
| — | каллех | каллах | каллах |
| — | йалсенĕн | йалсаң | йалсан (ђик) |
| — | лашасенĕн | лашасаң | лашасан |
| Пире | пира (кăрш) | — | — |
| Ěнейĕн | ĕнейăн (кш) | — | — |
| Тен | — | т̆ан (й) | — |
| Кепмер (кш) | — | — | капмар |
| — | хатĕрле | хат̆ăрла | — |
| Вĕлле | — | вăђђа | — |
| Ерне | (ҫăв) арни | — | — |
| Ќеђке (вен) | — | — | кађака |
| Ӳле | — | — | ула |
| Сехет | — | — | сахат |
| Ҫемҫе | — | — | ҫамҫа |
| Шит | — | — | шыт |
| Тĕрне | — | — | тăрна |
| Ме | — | — | ма |
| Еке (вен) | — | — | ака (пуҫ) |
| Мĕн | — | — | мăн шыран |
| Пек | — | — | пак |
| Теке (тут) | — | — | така |
| Кем (тут) | — | — | кам |
| Кес (тур) | — | — | кас |
| Ен (тур) | — | — | ан |
| Пĕр | — | — | пăр (так) |

Сайра сăмахсенђе хытă уҫă сасăсем ҫемҫе сасса тухни пур: ку ҫĕр—кĕҫĕр: ку ђухне—кĕђӳне; вăлсем—вĕсем. Ку пулăм сассен килĕшĕвĕнђен килет пулмалла.

*) Кĕскетнĕ паллăсем: ђ—Ђистай, ђк—Ђикме, й—Йетĕрне, кш—Кăрмăш, вен—венкер, тр—туркка, тĕрĕк; крс—кăркăс, тт.—тутар, а—анатри, т—тури

Тӳрӗк ԃӗлхин хытӑ сӑмахӗ вырӑнне ԃӑваш ԃӗлхинԃе ҫемҫе сӑмах та пулкалаԏ: сӗлӗ—тӳрӗкле сула, ԃӗрне—тырнак, пӳрне—бармак.

## § 17. Уҫӑ сасӑсен мӑшӑрлӑхӗ.

Епӗр хупӑ сасӑсен хытӑлӑхпа ҫемҫелӗх мӑшӑрлӑхне куртӑмӑр: хупӑ сасӑсем хытӑ сӑмахра хыттӑн, ҫемҫе сӑмахра ҫемҫенӗн илтӗнеҫҫӗ. Уҫӑ сасӑсем те ҫавсем пекех мӑшӑрлӑ, анԃах вӗсен кашни хӑраххин хӑйне саспалли пур. А сасӑпа Е сасӑ мӑшӑрлӑ, Ӑ сасӑпа Ӗ сасӑ, У сасӑпа Ӳ сасӑ, Ы сасӑпа И сасӑ мӑшӑрлӑ: ула—ӳле, ԃӑрна—ԃӗрне, ыш—иш, шыт—шит. Ҫак сӑмахсен уҫӑ сассисене танлаштарса пӑхсан, епӗр хаԃ калана мӑшӑрлӑха аван куратпӑр:

| т | ӑ | р | н | а | | ш | ы | т | | у | л | а |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| \| | \| | \| | \| | \| | | \| | \| | \| | | \| | \| | \| |
| т | ӗ | р | н | е | | ш | и | т | | ӳ | л | е |

Кунта ҫемҫе Т′, Р′, Н′, Ш′, Л′, сасӑсем хытса Т, Р, Н, Ш, Л сасӑсем пулнӑ, А—Е, У—Ӳ, Ы—И, Ӑ—Ӗ пулнӑ. Тата урӑх тӗслӗхсем илер:

лаша та — Лашу — Кайатпӑр
ӗне те — ӗнӳ — Килетпӗр.

Кунта уҫӑ сасӑсем мӑшӑрли пӗр сасах икӗ илтӗнӳлли тата лайӑхрах курӑнаԏ. Ҫапла вара нумай тӗлсенԃи А сасӑпа Е сасӑ пӗр сасах, анԃах икӗ илтӗнӳллӗ сасӑ, кашнӑ илтӗнӗвин хӑйӗн палли пур. Ытти мӑшӑрлӑ уҫӑ сасӑсем те ҫавах. Хупӑ сасӑсем те нумайӗшӗ икӗ илтӗнӳллӗ, анԃах вӗсен кашнӑ илтӗнӗвин хӑйӗн палли ҫук.

### Уҫӑ сасӑсен мӑшӑрлӑхин карти.

| Хыттисем | А | У | Ы | Ъ (ӑ) |
|---|---|---|---|---|
| Ҫемҫисем | Е | Ӳ | И | Ь (ӗ) |

Ы сасӑ ҫемҫе хупӑ сасӑсем хыҫҫӑн—Ԃ, Ԏ, Ҫ сасӑсем хыҫҫӑн ҫемҫелет. Ы сасӑ ҫемҫелет пулсан, И сассӑн мӗн тӑвас пулаԏ? Хытас пулаԏ. Ԃӑнах та, хытӑ сӑмах хыҫӑнԃн И сасӑ хытаԏ, Ы майлӑрах илтӗнет. Ҫапла вара Ы сасӑпа И сасӑ пӗр пӗрин патне туртӑнаҫҫӗ. А сасӑ хӑш сӑмахсенԃе ытла та кӗскенӗн илтӗнет.

Уҫӑ сасӑсен мӑшӑрлӑхӗ тӑрӑх, Ӗ сасӑн мӗн тӑвас пулат? Кӗскенӗн илтӗнес пулат. Ђӑнах та, вӑл та кӗскенӗн илтӗнет. Епӗр тата Ӑ сасӑ икӗ тӗрлӗрех терӗмӗр: пӗри ҫӑрарах, тепри шӗвӗрех. Уҫӑ сасӑсен мӑшӑрлӑхӗ тӑрӑх, Ӗ сасӑн та мӗнле илтӗнмелле пулат?—Икӗ тӗрлӗ. Вӑл та ђӑнах ҫапла, епӗр ун ҫинђен малтах каланӑђђӗ.

Ҫапла вара ака мӗн курӑнат: пӗр хӑраххин паллӑлӑхӗ тепӗр хӑраххинђе те пулмалла. Анђах вӑл йаланах апла мар. Сӑмахран, У сасӑпа Ӳ сасӑ мӑшӑрлӑ. Тури ђӑвашшен икӗ У: У тата О. Уҫӑ сасӑсен мӑшӑрлӑхӗ тӑрӑх, вӗсен Ӳ сасӑ та иккӗ пулмалла, анђах вӑл апла мар,—вӗсен те халӗ пӗр Ӳ кӑна. Ӗлӗкрех ђӑнахах икӗ Ӳ пулнӑ: Ӳ тата Ӧ. Ҫак сасӑ Ђиине калаҫӑвӗнђе халӗ те пур: унта, сӑмахран каласан, кӳр, сӳре, пӳрт вырӑнне кӧр, ҫӧре, пӧрт теҫҫӗ. Ытти тури калаҫусенђе Ӧ сасӑ Ӳ сасса тухнӑ. Тури ђӑвашшен О ӑҫтан сиксе тухнӑши? Мӗншӗн вӗсем хӑш ђухне У вырӑнне О калаҫҫӗ? Ҫакна хирӗҫ пирӗн хурав ҫукха. Тӳрӗксен ђӗлхинђе те пӗр халӑхӑн У, тепӗрин ун вырӑнне О. Тури ђӑвашшем У вырӑнне О калани вӗсем ӗлӗк О калакан тӳрӗк халӑхӗпе йунашар пурӑннӑран килет пулмалла.

## § 18. Хупӑ сасӑсен йанӑралӑхпа йанӑрасӑрлӑх мӑшӑрлӑхӗ.

Икӗ йӗрке сӑмах илер:

| | |
|---|---|
| аш | ашӗ |
| ђӑваш | ђӑваша |
| хуш | хушу. |

Малтанхи йӗркери сӑмахсенђе Ш сасӑ йанрамаст, иккӗмӗш йӗркери сӑмахсенђе йанрат*) вырӑсла Ж пек илтӗнет. Тата Т сасӑллӑ сӑмахсене илер:

| | |
|---|---|
| кат | катӑк |
| тыт | тытас |
| ут | утӑм |

Кунта Т сасса сӑнар. Малтанхи йӗркере Т сасӑ йанрамаст, иккӗмӗш йӗркере ҫав сасах йанрат, Д пек илтӗнет. Мӗншӗнши вӑл? Ӑна пӗлме тата сӑмахсем илер:

| | |
|---|---|
| кас | касӑ |
| пиҫ | пиҫет |
| тух | тухас |
| хуп | хупас |
| Пађ | Пђах. |

*) Йанӑра сасӑ тесе Б, Г, Д, Ж, З сасӑсене калаҫҫӗ, йанӑрасӑр сасӑ тесе П, К, Т, Ш, С сасӑсене калаҫҫӗ.

Кунта С, Ç, Х, Н, Ђ сасăсем мĕнле илтĕннине сăнар.

Мĕн сисетпĕр? Малтанхи йĕркере вĕсем йанăраймаççĕ, кайранхи йĕркере йанăраççĕ, вырăсла З ЗЬ, П, Д, ДЗЬ пек илтĕнеççĕ. Мĕншĕн вĕсем апла?—Малтанхи йĕркере вĕсем икĕ уçă сасă хушшинђе тăмаççĕ, кайранхи йĕркере икĕ уçă сасă хушшинђе тăраççĕ,—çавăнпа.

Çапла вара хупă сасăсем тепĕр йенђен те мăшăрлă. Ăна хупă сасăсен *йанăралăхпа йанăрасăрлăх мăшăрлăхĕ* теççĕ.

Уçă сасăсем пур те йанăра сасăсем. Сасăсене йанăралăхпа йанăрасăрлăх мăшăрлăхĕ йенђен пăхса çакăн пĕк карта тума пулаť.

| Йанăра сасăсем | А | У | Ы | Ă | Е | Ӳ | И | Ĕ | Д | Д′ | ДЗ′ | Б | Г | П | Ж | З | З′ | Й | Р | М | Л | Љ | Н | Ӊ | В |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Йанăрасăр сасăсем | – | – | – | – | – | – | – | – | Т | Ť | Ђ | П | К | Х | Ш | С | Ç | – | – | | – | – | – | – | – |

Çапла ĕнтĕ ђăваш ђĕлхинђе 9 хупă сасă: П, К, Х, С, Ç, Т, Ť, Ђ, Ш, икĕ уçă сасă хушшинђе йалан йанăра илтĕнет, сăмах пуçламăшĕнђе йе пĕтмĕшĕнђе йанрамаť. Сакăр хупă сасă: Й, Р, М, Л, Љ, Н, Ӊ, В йалан йанăра илтĕнет, йанăрамасăр нихăçăн та—илтĕнмест. Вĕсене *мăшăрсăр* йе *хăрахăсăр* хупă сасăсем теççĕ.

Тата малалла сăнар: илсе, супăӊпа, малтан, унтан. вăйсăр, ђăрсăр, шулђă, пайанхи—сăмахсене илер. Унта С, П, Т, Ђ, Х сасăсем, уçă сасăсем хушшинђе пулмасан та, йанăра илтĕнеççĕ. Мĕншĕн вăл?—Мăшăрсăр хупă сасăпа уçă сасăсем хушшинђе тăнăран. Мăшăрлă хупă сăсăсем уçă сасăсĕм хушшинђе тăнăран анђах мар, мăшăрсăр хупă сасăпа уçă сасă хушшинђе тăнăран та йанăра илтĕнеççĕ.

Йанăрасăр сасăсене йанăра сасса кăларакан икĕ условийе пĕрлештерсе пĕр услови тума пулаť. Уçă сасă та, хăрахăсăр сасă та йанăра сасăсем. Çапла вара хăвăл сасă икĕ йанăра сасă хушшинђе пулсан, йанăра сасса тухаť. Анђах çакна та астăвас пулаť: икĕ йанăра сасăран йулашкийĕ уçă сасă пулмалла. Апла пулмасан, йанăрасăр сасă, икĕ йанăра сасă хушшинђе пулсан та, йанăра сасса тухмасť: пўртре, телре, курăкра, туратран, ђĕтре.

*) Ђăваш ђĕлхинђи Б, Г, Д, ЗЬ, Ж, Ћ сасăсем вырăслисем пекех мар вĕсенђен пăртак йанăрамирех. Вырăсли пек йанăра илтĕнеççĕ тесе, епĕр вĕсене, услови туса кăна калатпăр. Ћ сасă богатый, когда, тогда сăмахсенђи вырăсла т пек илтĕнет.

Тата малалла кайар. Йумахсем илер. *Туман тыханăн пилĕкне ан хуç. Мана виç улма пар. Хĕвел ансан Хĕветĕр (ессĕр ăна пĕлетĕр), хĕвне çăкăр тыкрĕ те, лаша кўлсе ларђĕ те, тухрĕ кайрĕ вăрмана хăрăк турат пуçтарма.*

Çак йумахри хăш хăш сăмахсене калаçнă ђухнехи пек пĕр уйăрмасăр калар. Çапла калаçние илтĕннĕ пек çырсан, акă мĕн пулат̆: Туман д'ыћа пилĕкне анћуç. Мана визьулма бар. Хĕвел анзан Хĕведĕр, езирăнабĕледĕр, хĕвнез'агăр ђикрĕде лашагўлзеларђĕде, тухрĕ кайрĕ вăрмана хăрăк турат пуçтарма. Çакăнта епĕр мĕн куратпăр? Сăмахсене пĕрле çыпăçтарса каласан, йанăрасăр сасăсем сăмах вĕçĕнђе пулсан та, йанăра илтĕнеççĕ. Мĕншĕн вăл? Калаçнă ђухне епĕр сăмахсене çыпăçтарса калатпăр; пирĕн хайхи сасăсем икĕ йанăра сасă хушшинђе пулса тăраççĕ те, йанăраса илтĕнеççĕ. Çакăн пирки вара сăмах пуçламăшĕнђи, йе пĕтмĕшĕнђи хупă сасăсем те йанăра илтĕнме пултараççĕ.

„Хĕвел тухсан Хĕветĕр", „туманд'ыћа пилĕкне". Мĕншĕн Хĕветĕр сăмахра ћ, пилĕкне сăмахра Б çырман: вĕсем те йанăра сасăсем хушшинђе тăраççĕçке?— Йанăра илтĕнментен. Хăш сăмах вĕçĕнђи йанăрасăр сасăсем нумай калаçусенђе, икĕ йанăра сасă хушшинђе пулсан та, йанăра сасса тухмаççĕ, йе тухсан та уйăрса илеймелле мар, хăш анђах йанăранăн илтĕнеççĕ.

Йанăрасăр сасă йанăра илтĕнекен пулат̆. Йанăра илтĕнекен сасă та хăш ђухне йанăрасăра тухса кайат̆. Вăл хăçан пулат̆ши? Хушшине улăштарсан. Лаша, суха, кайса сăмахсене татмасăр каласан, унта К, Ж, З, илтĕнет. Çав сăмахсенех татса татăкăн калар: ла-ша, су-ха, кай-са, тийер. Çапла каласан, пирĕн хайхи йанăра сасăсем йанăрасăр сасăсем пулса тăраççĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен татăкăн каласан, вĕсем йанăра сасăсем хушшинђе мар ĕнтĕ. *Шухăшĕпе.* Кунта Х, Ш, П, сасăсем йанăра илтĕнеççĕ. Халĕ шухăшпе тийер. Халĕ Х анђах йанăра илтенет. Ш-па П йанăрасăр илтĕнеççĕ. Мĕншĕн?—Ĕ сасă тухса ўкрĕ те, Ш-па П йанăра сасăсем хушшинђе пулми пулђĕç—çавăнпа.

Хупă сасăсен йанăралăхпа йанăрасăрлăх мăшăрлăхĕ вырăс ђĕлхинђе те пур, анђах унта вăл пăртак урăхларах условисенђен килет:

| | |
|---|---|
| Дуб—дуп. | просьба—прозьба. |
| к дубу—гдубу. | под ним—поднимъ. |
| в поле—фпол'э. | под собой—потсобой |

Йетӗрнепе. Сысӑран уйесӗнђи хӑш каласусенђе тепӗре, кантӑра, ҫуртӑри. Ентӗри вырӑнне тепре, кантра, ҫуртри, Ентри теҫҫӗ, анђах П. Т, сасӑсене йанӑра каласҫӗ. Хупӑ сасӑсен йанӑралӑхӗ тӑрӑх вӑл апла пулма кирлӗ мар. Анђах ку пулӑма ӑнланма ҫӑмӑл: пӗре йанӑра калама вӗреннӗ П, Т сасӑсене йанӑралӑх условисенђе ҫук пулсан та, йанӑра калаҫҫӗ. Ку ђӑваш ђӗлхинђе ҫӗнӗ протсес пуҫланса кайнине кӑтартат̆..

## § 19.

## Йанӑралӑхпа йанӑрасӑрлӑх мӑшӑрлӑхин фиҫиолокийӗ.

Ӑна ҫапла ӑнланма пулат̆. Йанӑра сасӑ пыртан сывлӑш тухнӑ ђух пыр ђӗлӗхӗ ђӗтренӗрен килет. Пыр ђӗлӗхӗ ђӗтресен, сасӑ йанӑраса тухат̆. Пыр ђӗлӗхӗсем ђӗтремесен, вӗсем лӑпкӑн, канлӗ тӑраҫҫӗ пулсан, вӗсем хушшипе сывлӑш ирӗкӗн тухат̆ пулсан, сасӑ йанӑрасӑр пулат̆.

Уҫӑ сасӑсем, тата мӑшӑрсӑр хупӑ сасӑсем тулли йанӑра сасӑсем. Йанӑрасӑр сасӑсем йанӑра сасса тухаҫҫӗ пулин те, тулли йанӑра сасӑ пулаймаҫҫӗ. Вӑл вӗсене каланӑ ђух, пыр ђӗлӗхӗсем хытах ђӗтременнинђен килет. Ҫак саккуй та сасӑ оркӑнӗсем вӑхӑтпа енерки екокомийӗ тума тӑрӑшнинђен килет. *Ашӗ* сӑмаха илер. А сасса каланӑ ђук пыр ђӗлӗхӗ хытӑ ђӗтренет. Ш саса каланӑ ђух вӑл инертси вӑйӗпе, тата Ё сасса каланӑ ђух ђӗтренмеллине сиссе, ђитренме ђарӑнмаст̆, анђах хуллентерех ђӗтренет. *Ашӗ*, тата *ашшӗ* сӑмаха кананӑ ђух пыр ђӗлӗхӗ ђӗтренине ҫапла Ўкерсе кӑтартма пулат̆:




Пӗрре ђӗтренекен ђӗлӗхе Ш сасса калас вӑхӑтлӑха кӑна ђарма, унтан ҫӗнӗрен тепӗр хут тапратса йама хуллен ђӗтресе тӑнинђен йӑвӑртарах пулмалла.

## § 20.

## Сасӑсемпе саспаллисем.

Ђӑваш ђӗлхинђе 25 саспалли. Ҫав саспаллисенђен сӑмахсенђе хӑшӗ нумайтарах, хӑшӗ сахалтарах пулвине пӑхса акӑ мӗнле кар-

та тума пулаӗ: епӗр шутланӑ пилӗк страницӑра саспаллисем ҫакӑн ђухлӗ пулђӗҫ.

| | |
|---|---|
| А 12,8% | У 3,5% |
| Н 9% | М 3,3% |
| Е 9% | В 3% |
| Ӑ 7% | Й 2,2% |
| Р 6,7% | Х 2% |
| Ӗ 6% | Ђ 1,7% |
| Т 5,8% | Ш 1,6% |
| С 5,8% | Ы 1,4% |
| h 4,5% | Ӳ 0,3% |
| И 4,5% | Ҭ 0,2% |
| Л 4,3% | Љ 0,1% |
| Ҫ 3,5% | Ђ 0,05% |
| К 3,5% | |

Ђаваш ҫырӑвӗнђе 25 саспалли, анђах сасси 25 кӑна мар, нумайрах—48 сасӑ. Вӗсем ак ҫаксем:

Уҫӑ сасӑсем: А, У, Ы, Ӑ, Ӗ, Ӳ, И, Ӗ, И-ы—пурӗ 9 сасӑ. Ку шута тури калаҫури О кӗмест. Ӑ Ӗ вырӑнне икшер сасӑ илтӗннине шутласан, тури калаҫура 12 уҫӑ сасӑ пулаӗ.

Хупӑ сасӑсем: Н, Н′, Нг, Нг, Л, Л′, В, В′, Р, Р′, М, М′, Х, Х′, h, h′, П, П′, Б, Б′, Т, Т′, Д, Д′, К, К′, Г, Г′, Ш, Ш′, Ж, Ж′, Ђ, ДЗ′, С, З, Ҫ, З′, Й—пурӗ 39 сасӑ.

Тӗппипех шутласан, ђӑваш ђӗлхинђи сасӑсем 48-тан иртеҫҫӗ. Вӗсене шутласа кӑларма, кашнине уйрӑм паллӑ пама йӑвӑр та, пулмасӗ те. Тӗслӗхрен, пар сӑмахри а парне сӑмахри А сасӑран урӑхларах илтӗнет: пар сӑмахра хытӑрах, парне сӑмахра ҫемҫерех илтӗнет. Пур хытӑ уҫӑ сасӑсем ҫинђен те ҫавнах калама пулаӗ. Тата С сасса илер. Вӑл ҫемҫе сӑмахра кӑшт ҫемҫелетех.

## § 21. Илтӗннӗ пек ҫырнӑ статйасем.

### Ҫил′дӑвӑл.

Ӗб′ир′ п′ӗр′е ҫула ҫер′е,м′зин′дз′е вӑрлахҫабаппӑр сис′м′ен-д′еп hамӑр п′ир′ӗн′д′ӗл′е п′ӗлӗт′хуплӑнил′н′ӗ ҫандалӑк сӗмдӗттӗм пул′дз′ӗдӑдз′ӗ унђђен′д′е пулмар′ӗ ҫил′дӑвӑл пирӑнзарӑма тырри-м′ӗкӗбе′ анӗн′зийӗн′ ҫавӑра пуҫлар′ӗ ним′ен′дӑва п′ӗл′м′есп′ӗр′ хӑш′ӗ аллине к′ерезедитнӑда т′ӗр′т′к′еле′зӳ′ре′т′ хӑшӗ сен′ӗк′ил-пӗ′д′е и тырӑ хырмадыдӑнҫарат′дӑ пир′ӗн′бе′бӗ′рл′е тырзабаган к′ӳр′шӗ лажин′еутланнӑда п′ирин′давра сик′к′иб′е кустарзаз′ӳр′ет′

т́ён́д́з́ебе́д́ет́ т́еп́дз́ебе́д́ет ђӗл́ем́ӗмăçтажи т́ет́ хаи тавăлдз́арăнзан хамăрдан хамăр кулаппăр аптранăгăвакăл кудăтд́ђăмнăд́ет́ çавăнб́еќ пул́дз́ӗ.

Т́имӗ́рдз́ӗлх́е.

Пăхăрбала тăхлана хăндз́азоранд́ат́ çандз́оп́ед́ин соранболдăр т́фу ќӗм́ӗл́бел́е т́им́ӗр́е хăпдз́а зоран́дат́ çапдз́онедин соранболдăр т́фу ылдăмбала ђăгăна хăçдз́азоранд́ат́ сандз́он́одки сорайболдăр т́фу пулбак пуллăндăр çубак çуллăндăр унтắхп́аќ типт́ӗр́ т́фу т́фу т́фу.

Пӗлсех тăмалла: лăп илтӗннӗ пекех çыру пулма пултараймасть.

Унашкал çыру тăвас тесен, пирӗн вулавă ђухне пулакан сăмахпа локик пусăмӗсене, сасăсене хăпартнипе антарнине, хыттăн каланипе хуллен каланисене, мăн сасăпа йе çинђе сасăпа, васканипе ђăсса каланине пурен те ăрасна паллăпа паллă тăвас пулать.

## § 22.

## Хупă сасăсем вăрăмланни.

Хупă сасăсем ђăваш ђӗлхинђе нумай сăмахра, йе кӳлепесенђе вăрăмăн илтӗнеççӗ. Хупă сасăсем вăрăмăн илтӗннине пӗлме ăна икӗ пӗр пек саспаллипе çыраççӗ: тӗттӗм, атте, анне çыраççӗ, ахалин тӗтӗм, ате, ане пулать. Икӗ саспалли çырнăран, саккунне те хăшӗ хупă сасăсем иккĕленнӗ саккун теççӗ. Мӗнле сăмахсенђе йе кӳлепесенђе хупă сасăсем вăрăмăн илтӗнеççӗ, халӗ çавна пăхса тухăпăр.

1. Пӗр сăмахрах хăш калаçури хупă сасса вăрăмлатаççӗ, хăшӗнђе вăрăмлатмаççӗ. Çавăн пек сăмахсенђен хăшӗ хăшӗ ак çаксем: тутăр—тоттăр, çакăр—çаккăр, ать—атте, кукăр—коккăр, ылтăм—ылттăн.

Анатри ђăвашшем хурăнташ сăмахӗсенђе хупă сасăсене хăпне вăрăмлатаççӗ; ать—атте, апай—анне, аки—акка, пиђи—пиђђе.

2. Йапала йађӗ Ă, Ӗ сасăпа пӗтет пулсан, ун умӗн пӗр хупă сасă анђах пулсан, çав хупă сасă харкампа пару вӗçлевлӗхӗнђе вăрăмланать: тилӗ - тиллӗн - тилле, ђăхă - ђăххăн - ђăхха, кӗлӗ - кӗллӗн - кӗлле:

Çавăн пек сăмахсем 1, 2, 3-мӗш сăнра та вăрăмланаççӗ: тиллӗм - тиллӳ - тилли, ђăххăм - ђăхху - ђăххи, кӗллӗм - кӗллӳ - кӗлли.

Тури ҫ̌авашшем ҫакăн пек сăмахсенҫ̌е хупă сасăсене харкам вĕҫлевлĕхĕнҫ̌е, тата пĕрмĕш сăпатра вăрăмлатмаҫҫĕ: пару вĕҫлевлĕхĕнҫ̌е, тата 2-мĕшпе 3-мĕш сăпатра кăна вăрăмлатаҫҫĕ.

3. Паллă йаҫ̌ĕ пĕрмĕш кÿлепере хупă сасăпа, йе Ă, Ĕ сасăпа пĕтет пулсан, Ă, Ĕ умĕн пĕр хупă сасă кăна пулсан, ҫав хупă сасă виҫҫĕмĕш кÿлепере вăрăмланаҫ̌: наҫ̌ар-наҫ̌арри, ҫук-ҫукки, пуйан-пуйанни, ырă-ырри, ҫ̌ĕрĕ-ҫ̌ĕрри, сĕнĕ-сĕнни.

Пайташшем ĕҫ йĕнҫ̌ен пулнă паллă йаҫ̌ĕсем. Ҫавăнпа вĕсем те 3-мĕш кÿлепере хупă сасăсене вăрăмлатаҫҫĕ: кайакан-кайаканни, тăвакан-тăваканни, курман-курманни, илмен-илменни, курас-курасси, илес-илесси.

4. Усă сасăпа пĕтекен йапала йаҫ̌ĕнҫ̌ен *лă, лĕ* хушсан, паллă йаҫ̌ĕ тусан, ҫав сăмахри Л сасă тури ҫ̌аваш каласăвĕнҫ̌е вăрăмланаҫ̌: ҫ̌ĕре-ҫ̌ĕрелле, окҫа-окҫаллă, лаша-лашаллă.

Анатри ҫ̌авашшен кун пек кÿлепере Л вăрăмланмаҫ̌. Вĕсем ҫ̌ĕрелĕ, укҫалă, лашалă теҫҫĕ.

5. Вуннăҫ̌ҫ̌енхи сумсем йатсăр каласа сусан, хăйсен варринҫ̌и хупă сасăсене вăрăмлатаҫҫĕ: пĕрре, иккĕ, виҫҫĕ... вуннă. Йатлă каласа сусан, вăрăмлатмаҫҫĕ: пĕр йапала, икĕ пăт, виҫĕ ҫын... вунă ҫул.

Тури калаҫура хăш йалсенҫ̌е Л сасса, йатсăр каласан та, пиллĕк сăмахра вăрăмлатмаҫҫĕ: пилĕк теҫҫĕ.

6. Тупаттăм—илеттĕм, тупăттăм—илĕттĕм, тупсаттăм—илсеттĕм—ĕҫ йаҫ̌ĕн ҫакăн пек кÿлепесенҫ̌е Т сасса вăрăмлатаҫҫĕ. Тупсассăн, тупмассерен пек кÿлепесенҫ̌е С вăрăмлапаҫ̌.

7. Тупатăр—илетĕр пек кÿлепесенҫ̌е тури ҫ̌авашшем Т вăрăмлатаҫҫĕ, анатри ҫ̌авашшем вăрăмлатмаҫҫĕ. Тупмалла илмелле пек кÿлепесенҫ̌е анатри ҫ̌авашшем Л сасса вăрăмлатаҫҫĕ, турисем вăрăмлатмаҫҫĕ, тупмала—илмеле теҫҫĕ.

8. Йанăра сасăсем хыҫҫăн *ҫ̌ĕ, ҫ̌ен, ҫ̌ăр—ҫ̌ĕр* сыпăкри Ҫ̌ вăрăмланаҫ̌: ыранҫ̌ҫ̌ен, хĕллеҫ̌ҫ̌ен, епĕҫ̌ҫ̌ĕ, кайĕҫ̌ҫ̌ĕ, пурҫ̌ҫ̌ĕ, кайҫ̌ҫ̌ăр, илҫ̌ҫ̌ĕр.

Йавăрасăр сасăсем хыҫҫăн ҫав Ҫ̌ сасах вăрăмланмаҫ̌: каҫҫ̌ен, тупҫ̌ăр, пĕтҫ̌ĕр, ҫукҫ̌ĕ, ҫывăхҫ̌ĕ, тупаҫ̌ҫ̌ĕ, кайаҫ̌ҫ̌ĕ.

9. Хăш йеннеллине кăтартакан сăмахсенҫ̌е Л сасă вăрăмланаҫ̌: вăрманалла, килелле, унталла.

10. Вырăс ҫ̌ĕлхинҫ̌ен куҫнă сăмахсенҫ̌е нумайĕшĕнҫ̌е хупă сасăсене иккĕлетсе ҫыраҫҫĕ: Йакку, Лукка, ăставкан, уҫ̌ҫ̌иттĕл,

тараккан сыраççĕ. Ахалин Йаку, Лука, ăстакан, уђитĕл, таракан пулаť.

Ђăваш ђĕлхинђе сасăсем мĕншĕн вăрăмланнине пĕтĕмпех пĕлмеççĕха. Хăш пулăмсене анђах ăнланса илме пулаť. Пуççап., савăннă сăмахсене, тата йурлаççĕ, шырăттăм пек хурăмсене илер. Пуççап сăмах *пуç* тата *çап* сăмахран пулнă. Савăннă—кунта *савăн* сăмах тĕпĕ *нă* иртнĕ хал вăхăђĕн сыпăкĕ.

Йурлаççĕ: «йурла»—сăмах тĕпĕ, малтанхи Ç сасă Т сасăран пулнă (йурлатçĕ), иккĕмĕш Ç нумайлă хисеп сыпăкĕ, Ĕ виççĕмĕш сăн сыпăкĕ, иккĕмĕш Т тĕпсĕр ĕçхĕл йађĕ (виççĕмĕш сăнра вăл «Ђ» пулаť: шырат-ђĕ); ăм кĕскелнĕ ман,=епĕ (40-мĕш §-а пăх).

## § 23. Сасăсем кўршĕленни.

Сăмах пуçламĕшĕнђе, йе сăмах вĕçĕнђе икĕ хупă сасă тăма йуратмасť. Çавăн пирки, вырăс ђĕлхинђен ђăваш ђĕлхине куçнă сăмахсенђе икĕ хупă сасă йунашар пулсан, ђăвашшем вĕсене уçă сасăпа уйăраççĕ: стол, крупа, книга сăмахсене сĕтел, кĕрпе, кĕнеке теççĕ, хупă сасăсем хушшине Ĕ сасă кўртсе лартаççĕ. Мĕншĕн вăл апла? Сăмах пуçламăшĕнђе икĕ хупă сасă йунашар тăма йуратманран. Спас, спасибо, Григорий, старик, клеть, школа, шкап, сăмахсене çавăн пиркийех сăпас, сăпаççыпă, Кĕркурц, кĕлет, ăшкул, ăшкап теççĕ.

Пĕтмĕшĕнђе икĕ хупă сасăллă вырăс сăмахĕ ђăваш ђĕлхине куçнă пулсан, ун вĕçне Ă, Ĕ хушаççĕ: полк, банк, волк, сăмахсене, полккă, панккă, волккă теççĕ.

Халĕ, пурăна киле, ђăваш ђĕлхи çивĕђĕленнĕçемĕн çивĕђĕленсе пыраť. Çавăн пирки вĕсем кĕђўне сăмах пуçламăшĕнђе икĕ хупă сасă та кала пуçлаççĕ. Сăмахран, старик, стел, трупа теççĕ.

Уçă сасăсем те, хупă сасăсем пек, ђăваш ђĕлхинђе йунашар тăма йуратмаççĕ. Вĕсем тата хупă сасăсенђен те кутан, йунашар нихăçан та тăмаççĕ. Сăмах пулăвĕ тăрăх, пĕрпĕр сăмахра икĕ уçă сасă йунашар тăмалла пулсан, вĕсенђен пĕри йе çухалаť, йе вĕсен хушшине пĕрпĕр хупă сасă кĕрсе лараť, вĕсене уйăрса тăраť, йе икĕ уçă сасса уйăрса тăма авалхи кĕлетке улшăнмасăр йулаť.

Уçă сасăсем çухалнине курма епĕр акă мĕн пăхар. Кай, кил, лар, сăмахсем хупă сасăсемпе пĕтеççĕ. Шухăша хытăрах калас пулсан, вĕсен çумне *ах, ех* хушаççĕ: кайах, килех, ларах. Сăмах тĕпĕ уçă сасăпа пĕтет пулсан, *ах, ех* хушмаççĕ, Х кăна хушаççĕ,

А сассине пăрахса хăвараççĕ. Сăмахран, çӳрех, вулах, ташлах теççĕ, çӳреех, вулаах, ташлаах, выранне. Мĕншĕн вăл çапла? Сăмахра икĕ уçă сасă йунашар тăма йуратманран. Пухас пайташ тума тĕп çумне *ас, ес* хушаççĕ: лар—ларас, кур—курас, ил—илес. çапла шухăшласан вула, çӳре тĕпрен пулакан пайташшем вулаас, çӳреес пулмалла пек. Анђах пулас пайташшенђе икĕ А, Е нихăçан та йунашар пулмасť, пĕрре анђах пулаť. Мĕншĕн? Икĕ уçă сасă йунашар тăма йуратмаççĕ. Çавăнпа вĕсенђен пĕри тухса ӳкет.

Иккĕмĕш сăпатлă йапала йађĕ тума, тĕп çумне У, Ӳ хушмалла: ут—уту, çăвар—çăвару, урай—урайу, пит—питӳ. Уçă сасăпа пĕтекен йапала йађĕсен иккĕмĕш питре тĕпри уçă сасă çухалаť. Вара, лашау, ĕнеӳ, кăмакау, ђӳређеӳ тес вырăнне лашу, ĕнӳ, кăмаку, ђӳређӳ кăна теççĕ.

А, Е сасăсем ăçта кайса кĕреççĕ? Уçă сасăсем йунашар тăма йуратманран çухалаççĕ. Виççĕмĕш сăпатра та çавăн пекех. Виççĕмĕш сăпатлă сăмах тума, тĕп çумне Ĕ хушаççĕ, хут — хуђĕ хак—хакĕ. Тĕп уçă сасăпа пĕтет пулсан, çав уçă сасă улăшăнса Ĕ сасăпа пĕрлешет. Çавăн пирки вара: лашаĕ, алаĕ, урайĕ тес вырăнне лаши, урн, алли теççĕ. Уçă сасăсем йунашар тăма йуратман пиркийех вулаăп, çӳреĕп, ташлаăп тес вырăнне вулăп, çӳрĕп, ташлăп теççĕ. .

Уçă сасăсем хушшине хупă сасă кӳртсе лартнине курма акă мĕн пахар. Пулаш пайташ тума тĕп çумне *ас, ес* хушаççĕ терĕмĕр: лар—ларас, тĕк—тĕкес. Çапла шутласан *çи* сăмах çумне пулас пайташ тума *ес* хушмалла пек—çиес пулмалла пек Анђах çапла пулсан икĕ уçă сасă йунашар пулаť. Апла ан пултăр тесе, çиес вырăнне çийес теççĕ, икĕ уçă сасă хушшине Й кӳртсе лартаççĕ. Йурийех, пиркийех сăмахсенђе те Й çав икĕ уçă сасă хушшине пырса ларнăскер.

Ларасскер, курасскер, ђасрах вырăнне хăш калаçура ларасăскер, курасăскер, ђасăрах теççĕ. Кунта икĕ хупă сасă хушшинђе А пур. Харкам вĕçлевлĕхĕ *ăн, ĕн* сыпăкпа пĕтмелле, пару вĕçлĕхĕ А, сыпăкпа пĕтмелле: тăванăн—тăвана, пӳртĕн—пӳрте, сурăхăн—сурăха сăмахсем пек. Анђах сăмах тĕпĕ уçă сасăпа пĕтĕт пулсан, тĕппе сыпăк хушшинђе Н, йе, Й пулаť: лашаăн—лашаа, ĕнеĕн—ĕнее тес вырăнне лашанăн—лашана, ененĕн—ĕнене йе лашайăн—лашайа, ĕнейĕн—ĕнейе теççĕ. Кунти Ă, Н, Й сасăсем авалхи кĕлеткесенђен пулнă сасăсем. Вĕсем халиђђен сыхланса тăни уçă сасăсем йунашар тăма йуратманран килет.

## § 24. Уҫӑ сасӑсем ҫухални.

Иртнӗ паракӑрӑфра епӗр уҫӑ сасӑсем йунашар тӑма йуратманни ҫинҫен каларӑмӑр. Унта кӳнӗ тӗслӗхсенҫе уҫӑ сасӑсем ҫухални куҫӑнах курӑнса тӑмасӗ. Ытти сӑмахсемпе танлаштарса пӑхсан тин, вӗсем ҫухалнине пӗлме пулаӗ. Кунта епӗр ҫухални курӑнсах тӑракан пулӑмсене пӑхса тухар.

Тухса ӳкнӗ, туртса илнӗ, йарса илнӗ, карта урлӑ. Ҫинҫе улӑх тес вырӑнне тухс′ ӳкнӗ туртс′ илнӗ, йарс′ илнӗ, карт′ урлӑ, ҫинҫ′ улӑх теҫҫӗ. Кӳ сӑмахсенҫе А, Е тухса ӳкет. Вӑл уҫӑ сасӑсем йунашар тӑма йуратманран килет пулмалла. Аҫасем, ҫӳреҫесем, лашасем, ереке, посу, урапапа вырӑнне — аҫсем, ҫӳреҫсем, лашсем, ерех, пос, урапа теҫҫӗ. Кунта уҫӑ сасӑсем мӗншӗн тухса ӳкни паллӑ мар.

Пуринҫен ытла сӑмах вӗҫӗнҫи Ӑ, Ӗ тухса ӳкет. Сарӑ аҫа, хытӑ пуйан, йӳҫӗ кӑшман, ватӑ ҫын, виҫӗ пӑт, ҫӳпӗ, халӗ тес вырӑнне ҫасах сар аҫа, хыт пуйан, йӳҫ кӑшман, ват ҫын, ҫӳп, хаҫ теҫҫӗ. Курӑнсах тӑраӗ кунта Ӑ, Ӗ сасӑ уҫӑ сасӑпа йунашар пулсан анҫах мар, йунашар пулмасан та ҫухалаӗ.

Ӑ, Ӗ, сӑмах вӗҫӗнҫе анҫах мар, варринҫе те тухса ӳкет: «хурҫӑка—хурҫка, турҫӑка—турҫка, пиҫӗке—пиҫке, пурӑнас—пурнас, макӑрас--макрас, ҫухӑрас—ҫухрас, ку Ӑ, Ӗ кӗскенӗн илтӗннӗрен килет пулмалла.

Хӑш ҫух йапала йаҫӗсенҫе виҫҫӗмӗш сӑпат сыпӑкӗ Ӗ ҫухалаӗ, хӑй умӗнҫи хупӑ сасса ҫемҫетсе хӑвараӗ, хупӑ сасӑ умӗнҫи уҫӑ сасӑ та вара ҫемҫерех илтӗнет, Ӑ пулсассӑн Ӗ пулса тӑраӗ. Тӗслӗхсем: кайӑкӗ—кайӗкӗ—кайӗк, амӑшӗ—амӗшӗ—амӗш, выҫӑхӗ—выҫӗхӗ—вылӗх. Кашкӑрӗ—кашкӗрӗ—кашкӗр, пуканӗ—пукаҫ, урамӗ—урам′, салтакӗ—салтак′, ҫӑвашӗ—ҫӑваш′.

Виҫҫӗмӗш сӑпат сыпӑкӗ Ӗ пӗреллӗ хисепре пару вӗҫлевлӗхӗнҫе йалапах тухса ӳкет; ывӑлӗне, тӑванӗне, тураҫӗне тес вырӑнне ывӑлне, тӑванне, туратне теҫҫӗ.

## § 25. Тулли кӳлепепе катӑк кӳлепе.

Ҫӑвашшем хӑш кӳлепесене йалапах пӗр пек каламаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, пит, калаӗ, ҫӳрет, кайсассӑн, парсассӑн, аҫасенӗн, тилӗсенӗн тес вырӑнне, кайсан, парсан, аҫасен, тилӗсен теҫҫӗ. Ҫавӑн пекех тата кайатӑп, кайатӑн вырӑнне, кайап, кайан, теҫҫӗ, патӗнҫе, ҫавӑнпа тес вырӑнне панҫа, ҫанпа теҫҫӗ.

Ҫапла ӗнтӗ хӑш сӑмахсем икӗ кӳлепеллӗ пулаҫҫӗ: тулли кӳлепеллӗ, тата кӗске кӳлепеллӗ. Хӑҫан тулли кӳлепе, хӑҫан кӗске кӳлепе калаҫҫӗ? Вӗсене пур те тиркесех каламаҫҫӗ, йепле килнӗ, апла калаҫҫӗ. Хӑше нимӗнсӗрех тулли вырӑнне кӗскине, йе кӗски вырӑнне туллине калаҫҫӗ. Анҫах сӑнарах пӑхсассӑн, акӑ мӗн сисме пулать. Самах ҫинҫе пуплӗв йанӑравӗ пулсан, тулли кӳлепе калаҫҫӗ пулмасан—кӗске кӳлепе калаҫҫӗ. Кӑрмӑш ҫӑвашӗсем икӗ сӑмах анҫах: «лаша ҫупать» темелле пулсан, лаша ҫопать теҫҫӗ. Есӗ малта пыр, сан лашу ҫупать темелле пулсан, тулли кӳлепе калаҫҫӗ: «есӗ валта пур, сан лаша ҫопатӗ теҫҫӗ. Мӗншӗн тесен», йулашки йумахра ҫопатӗ сӑмах ҫинҫе пуплев йанӑравӗ пур.

Тулӑ йе кӗске кӳлепе тата сӑвӑсем ҫырма пит пулӑшать: мӗнле каласан сӑвӑ илемлӗрех тухать, ҫавнашкал кӳлепе калаҫҫӗ те;

1. Хӗвел ансан Хӗветӗр,
Есӗр ӑна пӗлетӗр,
Хӗвне ҫӑкӑр ҫикрӗ те,
Лаша кӳлсе ларҫӗ те,
Тухрӗ кайрӗ вӑрмана
Хӑрӑк турат пуҫтарма.

* * *

2. Арманпатне ҫитсессӗн,
Арӑн йулҫӗ арҫури;
Тарӑн вара ҫитсессӗн,
Таркӑн салтак пулайрӗ.

Ҫак сӑвӑсенҫе ансан сӑмаха кӗскенӗн ҫырнӑ, ҫитсессӗн сӑмаха туллинӗн ҫырнӑ. Мӗншӗн тесен, ҫапла ҫырсассӑн, сӑвӑ илемлӗ тухать.

23, 24, 25-мӗш §-ра ҫӑваш ҫӗлхинҫи сӑмахсем кӗскелни ҫинҫен калани ҫумне тата пӑртак хушша калар.

Хӑш хӑш хупӑ сасӑсем тухса ӳкме йуратаҫҫӗ.

**Н:** Мӗншӗн—мӗшӗн-ме, ленк—лек, темӗн—тем, хӑйӗн—хуҫ, лашапалан—лашапала, унпалан—унпала, лашанӑн—лашан—лаша (апаҫӗ), сурӑхӑн—сурӑх (тирӗ).

**Л:** вӑлсем—вӑсем—вӗсем, пултӑран—путран, вӗлтӗрен—вӗтрен, илт—итле (илтле вырӑнне), илсе—исе, ултӑ—утмӑл (ултмӑл вырӑнне), лашапала—лашапа.

**К:** кӑҫта—ӑҫта, ҫӳрекен—ҫӳрен, вӗҫекен—вӗҫен, ҫухне—ҫуна, ҫухлӗ—ҫулӗ, тумлак—тумла, кунтӑк—кунтӑ, текерлӗк—текерлӗ.

**В:** автан—атан, авлан—алан, тавлăк—талăк, хăвăр—хăр, çавăр—çар, сывăр—çур, ывăл—ул, çавăнпа—çанпа, аçăвăр—аçăр.

**Й:** кайрĕ—карĕ, хăйне—хăне, сейрен—серен, çийет—çаť, тийет—таť, сайра—сар'а, кайран—кар'ан.

**Р:** тăрнă—тăнă, кĕрнĕ—кĕнĕ, кур—кăтарт (кăртарт вырăнне), карăнтăк—кантăк, патăра—пата, патăмăра—патма—пата.

Икĕ сăмах кĕскелсе пĕр сăмах пулаť: улма йăвăççи—улмуççи, пушăт йăвăçĕ—путђи, карда ăшĕ—карташ, аслă атте—аслатте—асатте, кукка аçи—кукаçей, пилĕк çыххи—пиççи, хĕвел çавăрăнăш—хвелçамăç.

Сасăсем тухса ÿкни, сăмахсем кĕскелни пĕр йенђен сасăсен паллăлăхĕнђен килет, тепĕр йенђен ђĕлхенĕн хăйĕн те çавнашкал туртăмĕ пур. Сасăсем тухса ÿкнĕ, йе кĕскелнĕ сăмаха епĕр ăнланатпăр-и, анланаймаспăри? Ăнланатпăр. Апла пулсан, сасăсем тухса ÿкни, сăмахсем кĕскелни кирлĕ йапалан, кирлĕ йапала мари? Кирлĕ йапала. Мĕншĕн?—Ђĕлхе енеркипе вăхăт економийĕ тăваť.

*Ђăваш ђĕлхийĕн сăмахсене кĕскетес туртăм пур.*

## § 26.

## Сасăсем хăйсен вырăнĕсене улăштарни.

Сăмах варринђе икĕ хупă сасă йунашар пулсан, вĕсем ђас ђасах пĕр пĕрин вырăнне куçса лараççĕ. Кăмрăк—кăрмăк, умла—улма, салма—самла, çамрăк—çармăк, йуналут—йуланут.

Сăмах пĕтмĕшĕнђе Ă, Ĕ умĕн икĕ хупă сасă пулсан, хăш калаçура çав икĕ хупă сасăран йулашкийĕ сăмах вĕçне куçса лараť: милкĕ—милĕк, тиркĕ—тирĕк, йумçă—йумăç, ђăршă—ђăрăш, ăйхă—ăйăх.

Пуçламăш Ă, Ĕ хыççăн икĕ хупă сасă пулсан, вĕсенђен малтанхи сăмах пуçламăшне куçса лараť: ĕстел—сĕтел, ĕçлет—çĕлет, ĕçлĕк—çĕлĕк, ĕшлеп—шĕлеп.

Хăçан сăмахра Ç сасăпа Н сасă вырăнсене улăштараççĕ те, хăнђа сăмах пулаť. Çеçке ђеђек сăмахсенђе те çав пулăмах курăнаť. Тумашкăн, илмешкĕн йышши сăмахсенђе Ш кайа куçса ларнă, К мала куçнă. Сăмахĕсен пулăвĕ тăрăх каласан, тумакшăн, илмекшĕн темелле, укçашăн, маншăн, уншăн тенĕ пек. Тумакшăн, илмекшĕн тесе калаçакансем те пур.

Сасӑсем вырӑнӗсене улӑштарни хупӑ сасӑсем йунашар тӑма йуратманран, йе сӑмахсене улӑшу илтнӗрен килет пулмалла.

## § 27. Сасӑсем пӗрешкеленни.

С сасӑ Ç сасӑпа йунашар пулсан, Ç сасӑ пек илтӗнет: йӑвӑçсем—йӑвӑççем, куçсем-куççем, пуçса-пуçça, каçса-каçça, хӗçсӗр-хӗççӗр, лаçсӑр-лаççӑр, пуçсӑр-пуççӑр, каламасçӗ-каламаççӗ, çӳремесçӗ—çӳремеççӗ.

С сасӑ Ш сасӑпа йунашар пулсан, Ш пек илтӗнет: ҫӑвашсем-ҫӑвашшем, ҫӑрӑшсем-ҫӑрӑшшем, пӗлӗшсем-пӗлӗшшем, тӑрӑшса-тӑрӑшша, палашса-палашша, кайасшӑн-кайашшӑн, илесшӗн-илешшӗн, хутасшӑн-хуташшӑн, тупӑшасшӑн тупӑшашшӑн.

Н сасӑ П сасӑ умӗнҫе тӑрап пулсан, М сасӑ пек илтӗнӗт Иванпа-Ивампа, вӑрманпа-вӑрмампа, çавӑнпа-çавӑмпа, ан пыр-ам пыр, ан пар-ам пар.

Анатри ҫӑваш калаçӑвӗнҫе сасӑсем питех пӗрешкеленмеççӗ. Унта ҫӑвашсем, йӑвӑçсем, хушса тесе те калаççӗ.

Н сасӑ Л сасӑ умӗнҫе хӑш сӑмахсенҫе Л сасса тухаҭ: мӗнле-мӗлле, кунлен-куллен, кинемей-килемей.

Хытӑ сӑмахсенҫе хупӑ сасӑсем хыттӑн, çемçе сӑмахсенҫе çемçенӗн илтӗнеççӗ: тылӑ-тилӗ, пар-пер. Кунта та епӗр сасӑсен асçимиҭатсине куратпӑр: хупӑ сасӑсем усӑ сасӑсем майлӑрах пулма тӑрӑшаççӗ.

Асçимиҭатси сасӑсен фисиолокинҫен килет. Ҫӗлхе оркӑнӗсем, калаçнӑ ҫухне вӑхӑт економийӗ тӑвас тесе, ытлашши протсес тумаççӗ, пӗр майлӑрах пулма тӑрӑшаççӗ, çакӑн пирки вара сассисем те пӗр майлӑрах тухаççӗ, хӑш сасӑсем тата пӗтӗмпех тепӗр сасса тухса кайаççӗ.

## § 28. Сасӑсем ылмашланни.

Тӑрна-тӗрне, шыт шит. Кунта А вырӑнне Е, Ӑ вырӑнне Ӗ, Ы вырӑнне И пулнине куратпӑр. Çавӑн пек пулӑма сасӑсем ылмашланни теççӗ. Епир-епӗр, йытӑ-йӑтӑ. Кунта та сасӑсем ылмашланнине куратпӑр: И сасӑпа Ӗ, Ы сасӑпа Ӑ сасӑ ылмашланаҭ. Сасӑсем ылмашланни пуринҫен ытла ҫӗлхе историйӗнҫен килет. Ҫӑваш ҫӗлхинҫи сасӑсем ылмашланнине лайӑх пӗлес тесессӗн, пирӗн ҫӑваш ҫӗлхи мӗнле ҫӗлхерен тухса кайнине, вӑл мӗнле ҫӗлхесемпе тӑванне пӗлес пулаҭ. Çакна пӗлсессӗн пире, ҫӑваш ҫӗлхинҫи сасӑсем ылмашланнине ӑнланма çӑмӑл пулаҭ.

## § 29. Ђăваш ђĕлхи тӳрĕкле ђĕлхе. Вăл ђăнахах çапла иккенне йепле пĕлмелле.

Авалхи кĕнекесем çинђе ђăваш ђĕлхи çинђен пур те пĕр пек каламаççĕ. Хăшĕ ђăваш ђĕлхине финле ђĕлхе теççĕ. Тата ђăваш ђĕлхине славенле ђĕлхе тийекенсем те пулнă. Ђăнах та, ђăваш ђĕлхи мĕнле ђĕлхеши вăл?

Мĕнле ђĕлхесемпе вăл хурăнташ, пĕр тăван? Çакна пĕлес тесессĕн, пирĕн ђăваш сăмахĕсене, ђăваш ђĕлхинђи хурăмсене, саккунсене ытти ђĕлхери сăмахсемпе, саккунсемпе танлаштарса пăхас пулаĭ. Мĕнле ђĕлхесем ђăваш ђĕлхипе пĕр майлă, пĕр хурăмлă, ђăваш ђĕлхи вара çавнашкал ђĕлхе пулаĭ.

1. Ђăваш, йаккут, тутар, туркка, кăркăс, алттай, çармăс, воĭак, венкер, нимĕђ ђĕлхинђи хисеп йађĕсене пăхса тухар (*34-35 стр. пăх*).

Çак тапăлтсăна хытăрах пăхса, ђăвашла хисеп йађĕсене ытти ђĕлхери хисеп йађĕсемпе танлаштарар. Мĕн куратпăр епĕр? Ђăвашлан хисеп йађĕсем мĕнле халăх хисеп йађĕсемпе пĕрешкелтерех?—Тутарла, йаккутла, кăркăсла, алттайла хисеп йађĕсемпе пĕрешкелтерех. Çапла пулсассăн, ђăваш ђĕлхи çак халĕ каланă ђĕлхесемпе хурăнташ марши?

Лайăхрах пĕлмешкĕн, хисепсенђен пусне урăх сăмахсене те танлаштарса пăхар.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| *Ђăв.* | ылттăм, ылттăн | пур | елек | йал |
| *Тут.* | алтын | бар | йăлăк | ил |
| *Тур.* | алтын | вар | — | — |
| *Кăр.* | алтын | бар | йăлăк | ел |
| *Алт.* | алтын | пар | перс: йăлăк | ајыл |
| *Ђăв.* | ђĕре | ђĕрне | пĕлтĕр | ил |
| *Йак.* | сӳрăх | — | балыр | ыл |
| *Тут.* | јăрак | тырмак | билтыр | ал |
| *Тур.* | јӳрек | тырнак | былтыр | — |
| *Кăр.* | — | тырнак | былтыр | ал |
| *Алт.* | јӳрек | тырмак | пылтыр | ал |

Çапла танлаштарса пăхсан, епĕр каллех ђăваш ђĕлхи тутарла-алттайла ђĕлхе майлине куратпăр. Ђăваш сăмахĕсене çак халăх сăмахĕсемпе танлаштарнăçемĕн, епĕр пĕр пек сăмахсене нумайтан нумай тупатпăр.

3) Халĕ çак ђĕлхери кӳлепесене танлаштарса пăхар. Ђăваш ђĕлхинђе туху, вырăн вĕçлевлĕхсем пур. Турккăлла-тутарла ђĕлхесенђе те туху, вырăн вĕçлевлĕхĕсем пур.

## Тĕрлĕ ђĕлхери

| | | Йаккутла | Тутарла | Турккăлла |
|---|---|---|---|---|
| 1 | перь | бір | бэр | бір |
| 2 | икке | іккі | іке | ікі |
| 3 | виссе | ӳс | öч | ӳч |
| 4 | тватт | тӳöрд | дӳрт | дöрт |
| 5 | пиллик | біäс | біш | беш |
| 6 | олта | алта | алты | алті |
| 7 | сьичче | сäттä | јіде | јадді |
| 8 | саккыр | агыс | сігез | секкіз |
| 9 | туххыр | тогус | тугыс | доккуз |
| 10 | вонна | уон | ун | он |
| 11 | вонберь | уон-бір | унбер | онбір |
| 20 | сьирим | сӳрбä | јігерме | ігірмі |
| 30 | вуттур | отут | утыз | оту: |
| 40 | хирих | туёрд-уон | кырык | кырых |
| 50 | àлла | біäс-уон | ілле | еллі |
| 60 | отмыл | алта-уон | àлтмыш | алтміш |
| 70 | сьитмил | сöттä-уон | јітмеш | іöтмиш |
| 80 | сагырвонна | агыс-уон | сіксäн | сексан |
| 90 | тугырвонна | тагус-уон | туксан | дуксан |
| 100 | сьӳр | сӳс | —јöз | јöз |
| 1000 | пинь | тысынча | мен | бін |

Тапăлитсă çумне хушша калани: 1) Çак тапăлитсăна Ник. Ив. Золотнитски тунă. Курăнсах тăрат: Н. И. Золотнитски хисеп йађĕсене вырăсла тĕрĕс тухман: «пĕр, пиллĕк» тес вырăнне, перь, пиллик», тенĕ. Ытти ђе «çирĕм, вăтăр, хĕрĕх» вырăнне «иквуннă, виçвуннă, тăватвуннă» Вăл вуннă тени пулат пулмалла. Йăна венкерсем ĕлĕк, Атăл çинђе пу

**хисеп йаѣӗсем.**

| Кӑркӑсла | Алттайла | Ҫармӑсла | Венкерле | Нимӗѣле |
|---|---|---|---|---|
| бір | пір | ик-тыт | эдь | айн |
| іке | екі | кан-тыт | кэат | цвай |
| ӳш | ӳч | кум-ыт | гарум | трай |
| дӧрт | тӧрт | нил-ит | нэадь | фиер |
| бес | пеш | виз-ит | ӧт | фюнф |
| алты | алты | куд-ыт | гат | зекс |
| ȷеті | ȷетти | шим-ит | гэат | зинень |
| сегі | сегіс | кӧндакше | ньоольц | ахт |
| тогуз | тогус | индакше | килӧнц | |
| он | он | лу | тиз | |
| онбір | онбір | лу-ат-ык-та | тизеньэдь | |
| ȷыйырма | ȷійірме екӧн | кок-лу | гуш | |
| отуз | оттус, одус ӳчӧн | кум-лу | гарминц | |
| кырык | кырык тӧртӧн | ниль-лэ | нэадьвӓн | |
| елӳ | елӳ пежӧн | вись-лэ | ӧтвӓн | |
| алпыс | алтон | куд-лу | гатван | |
| ȷетпіс | ȷеттӧн | шим-лу | гӓтвӓн | |
| сексен | сегізӧн | кӓндакш-лу | ньоольцван | |
| токсан | тогузон | индакш-лу | килӓнцвӓн | |
| ȷӳз | ȷӳс | шюде | саз | хундерт |
| мын̄ | мӳн̄ | тыжем | ӓзар | таузент |

лотнитски ҫырнӑ. «Корневой чувашско-русский словарь» ҫинѣен ҫырса саспаллисемпе ҫырма тӑрӑшнӑ. Ҫавӑнпа унӑн хисеп йаѣӗсем питех ѣӗлхесенѣе те вӑл ҫавнашкалах тӗрӗс ҫырайман пулаҟ. 2) Алттай ѣӗлхинтеҫҫӗ. 3) Венкер ѣӗлхинѣе 40—90 хисепсем «ван, вӓн» сӑмахпа пӗтеҫҫӗ. рӑннӑ ѣух, ѣӑвашшенѣен йышӑннӑ пулмалла.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| *Ђăв.* | санта, санра | сантан | питре | питрен |
| *Тут.* | сӧндӓ | сӓндӓн | биттэ | биттэн |
| *Кăрк.* | сӓндӓ | сендӓн | беттэ | беттэн |
| *Алт.* | сӓндӓ | ҫӓндӓн | петтэ | петтэн |

Ђăвашпен йатхыҫĕсем пур. Лешпен те йатхыҫĕсем пур: *ђав.* вăрман патне; *тут* урман алдына; *тур.* орман ӧкӱнэ.

4) Епĕр тата ђăваш ђĕлхинђе сасăсен килĕшĕвĕ пур тенĕђђĕ. Ҫав саккун туркка—тутар ђĕлхинђе пуршп, сукшп? Ку таранђђен кăтартнă самахсене, тата ҫак йумахсене санаса тухар-ха

| | | | |
|---|---|---|---|
| *Тут.* | эні | урманнан | килді. |
| *Тур.* | бабам | ормандан | кӓлді |
| *Алт.* | адам | јыштон | кӓлді. |
| *Ђăв.* | атте | вăрмантан | килђĕ. |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| *Тут.* | ул | міңа | акча | бірді |
| *Тур.* | о. | бана | акчэ | верді |
| *Алт.* | ол | маа | акча | пӓрді |
| *Кăр.* | ол | маңан | акша | берді |
| *Ђăв.* | вăл (ул) | мана | укҫа | пађĕ. |
| — | вăл (у) | мана | окҫа | парђĕ. |

Тутар—кăркăс ђĕлхинђе те килĕшу саккунĕ пур иккен: сăмахра уҫă сасăсем, йе пур те хыттисем пулаҫҫĕ, йе пур те ҫемҫисем пулаҫҫĕ.

Ҫапла вара ђăнахах та, пур йенђен пăхсан та, ђăваш ђĕлхитутар, туркка, кăркăс, йаккут, алттай ђĕлхисемпе пĕр май, хурăн таш. Ҫак ђĕлхесене тӳрĕк ђĕлхисем теҫҫĕ.

Ђăваш ђĕлхипе тӳрĕк ђĕлхисене танлаштарнă пек танлаштарсах, ҫармăс ђĕлхи, вăтак, венкер, латтыш ђĕлхи—фин ђĕлхисемпе хурăнташне, тӳрĕк ђĕлхисемпе хурăнташ марне пĕлме пулать. Вырăс ђĕлхи славен ђĕлхи иккенне, тӳрĕк ђĕлхи мар иккенне те ҫаплах пĕлеҫҫĕ.

## § 30. А сасăпа—У сасă ылмашланни.

Тӳрĕксен А вырăнне ђăвашпен У пулать. Тĕслĕхсем: картари 6-на—60 хисепсене пăхăр, тата ҫаксене:

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| *Ђăв.* | ут | утаман | уксак | пур | пуҫ |
| *Йак.* | ат | атаман | аксак | бар | бас |
| *Тут.* | аҭ | атаман | аксак | бар | баш |
| *Тур.* | ат | атаман | аксак | вар | баш |
| *Кар.* | ат | атаман | аксак | бар | бас |
| *Алт.* | ат | атаман | аксак | пар | паш |

Аксак сӑмахран Аксаков хушамат тухнӑ. Вырӑсла башка сӑмах тӳрӗксен баш сӑмахӗнђен пулнӑ. Тата сурпан сӑмаха илер. Вӑл перс сӑмахӗнђен тухнӑ. Персла сарапай (пай-пуй кӳйап) тесе ђаплӑ кунсенђе тӑхӑнакан хаклӑ тумтире каласҫӗ. Ҫав сӑмахранах вырӑсла сарафан тухнӑ.

Хӑш сӑмахсенђе ђӑвашшен те У сасӑ вырӑнне*) А сасӑ пулаҫ. Тӗслӗхсем: мӑнтуррӑн, хупхура, ҫунҫутӑ тес вырӑнне мӑнтарӑн (мӑнтарӑн пурӑнаҫҫӗ!), хупхура, ҫапҫутӑ, теҫҫӗ. Шӑпашкар—Шупашкар, нарӑс-нурӑс сӑмахсем те ҫавӑн пек.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| *Тур.* | капу | капа | *тут.* | таjак | таjан |
| *Ђӑв.* | хапха | хуп | *ђӑв.* | туйа | тайан |

У сасӑпа А сасӑ кунта мӗншӗн ылмашланаҫҫӗ? Хапхура, хапха, тата ытти сӑмахсенђен А сасӑ У сасса тухман; тӳрӗксен пекех тӑрса йулнӑ.=ҫавӑнпа.

## § 31. К=х.

Тӳрӗкле К сасӑпа ђӑвашла Х сасӑ ылмашланаҫҫӗ.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Ђӑв | хура | хӗрӗх | ухмах | хапха | хулӑм |
| Йак | кара | кырых | — | — | халык |
| Тут | кара | карык | акмак | капка | калык |
| Тур | кара | карык | ахмак | капу | калык |
| Кӑр | кара | карык | — | капка | калык |
| *Алт* | кара | карых | арап: акмак | — | калык |

Ђӑвашла хӑйамат, тутарла, арапла киамат, вавилонла тиамат**).

Пӑрах йаккутла брах, тутарла брак, вырӑсла бросьу. Бросьу сӑмах ытти славен ђӗлхинђе ҫук

*) Хӗпхӗрлӗ, ҫапҫара, таптаса, тата ытти ҫавӑн пек сӑмахсем мӗнле пулнӑ?—Хӗрлӗ, ҫара, таса сӑмахран малтанхи икӗ сассине илеҫҫӗ те, уп ҫумне П хушаҫҫӗ; унтан хӗп, ҫап, тап сӑмахсене лешшен ҫумне хушаҫҫӗ. Ҫапла вара хӗп-хӗрлӗ, ҫап-ҫара, тап-таса сӑмахсем пулаҫҫӗ.

**) Вавилонсем каланӑ тӑрӑх, тӗнђе ђи малтан тӗпсӗр, йӗркесӗр пулнӑ, вӑл пӗрмай пӑтранса тӑнӑ. Вавилонсем ҫав йӗркесӗр хавослӑ йапалана Тиамат тенӗ. Турӑсем тӗнђене йӗркене кӳртес тесессӗн, тиамат вӗсене итлесшӗн пулман. Вӑл вӗсемпӗ вӑрҫӑ кӑларнӑ. Тиамат дракон пек ђирӗ пуҫлӑскер пулса, турӑсемпе вӑрҫма темӗн тӗрлӗ хӑрушӑ, хайар, сӑпсӑр, хытӑ сӑхакан ҫӗленсене ҫуратнӑ. Вӗсемпе пӗрле тӑлхӑрса, мӗкӗрсе, ђӑшлатса турӑсемпе вӑрҫнӑ. Турӑсем пур те хӑраса ӳкнӗ. Пӗр Мартук анђах, ҫутӑпа ҫуркунне турри, унтан хӑраман. Вӑл турӑсене каланӑ: эсир мана хӑвӑр хушӑрта ђи асли тусан, эпӗ Тиамата пӗтерӗп, тенӗ. Турӑсем ӑна хӑйсем хушшинђе ђи асли туса хунӑ. Мартукпа Тиамат вара тем пек хытӑ вӑрҫӑ кӑларнӑ.

Сăкман—сăхман, тукатмăш—тухатмăш, шукăш—шухăш, никам—нихам, ҫукалнă—ҫухалнă. Ҫак сăмахсенђе К вырăнне Х пулат̆. Х сасă ку сăмахсенђе К сасăран ҫĕнĕрех.

## § 32. А=Ы.

Тӳрĕксен А вырăнне ђăвашшен тата Ы пулат̆:

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| *Ђăв.* | пыл | хытă | пыр | хыпар | ылттăн |
| *Йак.* | — | хатан | бар | — | кысыл кӧмӳс*) |
| *Тут.* | бал | каты | бар | хабăр | алтын |
| *Тур.* | бал | — | бар | — | — |
| *Кăрк.* | бал | каты | бар | кабар | алтын |
| *Алт.* | пал | катту | пар | кабар | алтын |

Хырăм—йак. харын, Тут. Тур. Алт. карын. Ҫав сăмахран карындаш-хурăнташ тухнă. Ҫапла вара карын сăмахпа карындаш сăмахри А вырăнне ђăвашшен Ы та У та пулат̆. Хырăм, хурăнташ сăмахсенђе ђăвашшен Ы сасăпа усасă улшăнаҫҫĕ.

Мартук Тиаматăн пĕр татăкĕ те ан ҫухалтăр тесе, пĕтĕм тĕнђине пысăк. ҫирĕп тапата карнă; кăнтăр йенелле те, ҫурҫĕр йенелле те, хĕвел тухăҫĕне хĕвел анăҫ йенелле те. Вăрҫă катĕрĕсемпе ҫапҫутă тумланса, вутлă лашасем кӳлсе, тиамата хирĕҫ вăрҫма тухса кайнă. Тиамат хăрушăн кăҫкăрса йарат̆, пĕтĕм тĕнђене ђĕтретет; Мартука ҫăтса йарас тесе ҫăварне карса пăрахат̆. Анђах Мартука ҫăтма ĕлкĕреймест. Ҫăварне хупса лартиђђен Мартук уп ăшне вăйлă ҫавраҫил кӳртсе йарат̆, ҫак вăхăтрах хăй уп ђĕрине сăпăпа церсе тивертет. Тиамат вилет. Мартук уп вилли ҫине тăрат̆ те, унăн йулташĕсене тытса, вĕсене хупса лартат̆. Унтан Тиамата пулла каснă пек тăрăх касат̆ те, пĕр йенђен пĕлĕт тăват̆, тепĕр йенђен ҫĕрпе ҫĕр тĕпне тăват̆. Хĕвел, уйăх, ҫăлтăрсем, ҫĕре шăварма ҫăмăр пĕлĕђĕсем пултарат̆. Йулашкиђђен тăмпа хăйĕн йунне хутăштарса малтанхи ҫынсене арлă арăмлă пултарат̆.

Ҫапла вара тиамат сăмах ђи малтан 4 пин ҫул ĕлĕк вавилонсен ђĕлхинђе пулнă. Унтан вăл урăх ђĕлхесене сарăлнă. Сарăлнă ҫемĕн ăна пăртак урăхлатса каланă—киамат, хăйамат тенĕ. Ăнланăвĕ те унăн пăртак урăхланнă. Халĕ киамат тесе тутарсем, арапсем вилĕ ҫынсем йулашки кун ђĕрĕлсе тăрассипе калаҫҫĕ; ҫармăссем леш тĕпђери тӳрене калаҫҫĕ. Ђăвашшем йатлаҫнă ђух хăйамат тени ăна ҫармăссем пек ăнланманни пулат̆. Ҫав хăйамат сăмахранах хăйматлăх пулат̆. Хăйматлăх тени тутар ђĕлхинђе ĕмĕрлĕх тус, йулашки кунђђенхи тус тени пулат̆. Кунта епир хăйматлăх сăмаха арапсем пек ăнланатпăр.

Хăйамат сăмах тиаматăн ҫĕр тĕп тунă пайĕнђен тухнă пулмалла, хăйматлăх пĕлĕт тунă пайĕнђен тухса кайнă пулмалла. Хăшĕ киамат сăмаха арапсен кăм—вăл тăнă сăмахран пулнă теҫҫĕ. Пирĕн шухăшпала кунта пирĕнпипе хирĕҫ калапи ҫук. Арапсем ђĕлхийĕнђен ҫемитсем. Вавилонра ҫемитсем те пулнă.

*) Кысыл кӧмӳс—хĕрлĕ кĕмĕл тени пулат̆. Йаккутсен те ылттăн сăмах пур. Вĕсем ҫапла хĕрлĕ пăхăра калаҫҫĕ.

Ы сасапа У саса ытти сăмахсенђе те ылмашланаççĕ. Тури ђăвашшем пыр, выçă, вырăс тес вырăнне пур, вуçă, вурăс теççĕ. Утлăри—ытлари сăмахсем те çавăн пек.

## § 33. З, с=р.

Тӳрĕксен З, С вырăнне ђăвашшен Р пулаť: хисеп картинђи 8, 9, 30, 100 сăмахсем, тата урăх тĕслĕхсем:

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| *Ђăв.* | хĕр | хĕрлĕ | хур | хуран | пăр*) |
| *Йак.* | кыс | кысыл | хас | — | бус |
| *Тут.* | кыз | кызыл | каз | казан | боз |
| *Тур.* | кыз | кызыл | — | казан | буз |
| *Кăр.* | кыз | — | каз | казан | мӳз |
| *Алт.* | кыс | — | кас | казан | мус |

Ђăвашла хуран-хусан, тата вар-васан сăмахсенђе Р сасăпа С саса ылмашланаççĕ. С-па Р урăх сăмахсенђе те улшăнаççĕ.

Ђикме уйесĕнђи ђавашшем кирлĕ мар вырăнне кирлемест теççĕ. Çапла вара вĕсем мар сăмахри Р вырăнне С калаççĕ.

Тӳрĕксен ђелхинђе мар имăз, алттайла емес пулаť. Калатăп, çӳретĕп сăмахсен варрине мас, мес хушсан, кала+мас+тăп, çӳре+мес+тĕп пулаť. Çав мас, мес мĕнши вăл? Мар, çемçенĕп каласан мер тени пулаť. Унта С сасă Р пулмасăрах йулнă.

## § 34. Й=ç.

Тӳрĕксен пуçламăшĕвђи Й вырăнне ђăвашшен Ç пулаť. 7, 20, 70, 100 хисепсене пахăр, тата урăх тĕслĕхсем.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| *Ђăв.* | çĕрĕ | çăмарта | çил | çĕр | çук |
| *Йак.* | — | сымыт | тыал | сір | суох |
| *Тут.* | йӧзӧк | йоморка | йіл | йір | йок |
| *Тур.* | йӳзӳк | — | вен:сел | йер | йук |
| *Кăр.* | — | — | йел | јір | йок |
| *Алт.* | — | јымырка | йел | йер | йок |

*) Çуркуннехи иккĕмĕш уйăх—пуш уйăх йатне пушă, ĕççĕр, ахаљ сăмахран илнĕ теççĕ. Вăл тĕрĕс мар пек: çапла шутласан хĕллехи уйăхсене пурне те пушă тесе йат пама пулаť, мĕншĕн тесен, ун ђухне те çынсем вăхăт пушă ирте-реççĕ (çĕр ĕçне тумаççĕ). Пуш уйăхри пуш вăл пăр, тут. бос, йак. бус сăмах-семпе пĕр марши? Кунта тӳрĕксен З, С сасă Р пулман, Ш кăна пулнă пултăр. Пуш уйăх тени çапла пăр уйăхĕ тени пулаť пек. Çапла шухăшлама йаккутсен çуркурннехи уйăхин йатђĕ те май параť. Вĕсем пуш уйăха: бус устар ый—пăр ишекен уйăх, теççĕ. Ђăвашшем ишекен сăмаха каламан пек те, пăр уйăхĕ кăна тенĕ пек.

Куп çинђен Золотницкий кĕнеки çинђе калавă, Корневой Чуваш-русск. словарь, стр. 193-194. Примеч. Редакции.

Ҫăвашла айук, айукка самахра Й саса Ç пулман, аплипех йулнă. Пытанмалла выҫăнă ҫух калакан уйук сăмахра та Й саса Ç пулман, аплипех йулнă. Тата ҫак тĕслĕхсене пăхса тухар:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Тут. | йул | ҫав | тĕпренех | йулдаш |
| Ҫăв. | ҫул | „ | „ | йулташ |
| Тут. | йалкы | „ | „ | йалкын |
| Ҫăв. | йалкăш | „ | „ | ҫулăм |
| Алт. | йара | „ | „ | йараш |
| Ҫăв. | йура | „ | „ | ҫурас |
| Тут. | йон | „ | „ | йапыпа, йăнăшă |
| Ҫăв. | йен | „ | „ | ҫумпе, йунашар |

Ҫапла вара ҫăваш ҫĕлхинҫе хăш самахсенҫе Й сасăпа Ç саса ылмашланаҫҫĕ.

## § 35. Й=Ҫ.

Тӳрĕксен (Й) j вырăнне ҫăвашшен хăш самахсенҫе Ҫ пулаҫ.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Ҫăв. | ҫĕре | ҫун | тĕнҫе | ҫăмăр |
| Тут. | йöрäк | jон | дöнйä | йумӳрка |
| Тур. | йӳрäк | цан | дӳнйä | йумру |
| Кăр. | — | йан | — | йумур |
| *Алт.* | йӳрек | — | ар. дӳнья | йумур |

Йанавар сăмахра Й тӳрĕксен пекех йулнă Йанавăр тени ҫунлă йапала йĕ лаша тени пулаҫ. Йанавар сăмах авалхи йурăра тĕл пулаҫ:

Ей тура, ҫырлах, ан пăрах,
Йанаварсене вăйхăват пар,
Ҫипер ака тумашкăн.

## § 36.

## Сасăсем ылмашланни мĕнтен килет.

Тӳрĕксен А вырăнне ҫăвашшен А та У та, Ы та пулаҫ: карын-хырăм, карындаш-хурăнташ. Ҫакăн пекех тӳрĕксен (Й) j вырăнне ҫăвашсен Й та, Ç та, Ҫ та пулаҫ: айук, ҫук, ҫун. Ҫакнашкал пулăм нумай сăмахсенҫе курăнкалаҫ. Мĕншĕн тӳрĕксен пĕр сассийĕх ҫăваш ҫĕлхинҫе икĕ йе виҫĕ сасăпа улшăнаҫ? Ҫак ыйтăва, тата 36-мĕш §-ра калана пулăмсене ҫапла ăнлапма пулаҫ.

Тӳрĕк ҫелхисем ĕлĕкех пур те пĕр пек пулман. Ҫавашшем ытти тӳрĕксенҫен хĕвеланăҫ йенҫе пуранаҫҫĕ. Вĕсен ҫĕлхи пăлхарсем ҫухнех ытти тӳрĕк ҫĕлхисенҫен пăртак урăхла пулнă. Пăлхарсем вăхăтĕнҫе пăлхар патшалăхĕнҫе пуранакан халăхсем нумайĕшĕ пăлхар, халхи пек каласан, ҫăваш ҫĕлхине йышăннă, хăшĕ тата пĕтĕмпех ҫăваша тухса кайнă. Пуривҫен ытла ҫăваша фин халăхĕсем тухнă. Ҫапла вара ҫăваш халăхĕ таса тӳрĕк халăхĕ мар, фин халăхне йышăнна халăх пулса тăнă.

Ҫăваша тухнă фин халăхĕсем ҫăваш сăмахĕсене ҫавашшем пекех таса калайман, хăш хăш сăмахсене урăхла каланă. Тепĕр йенҫен финсемпе хуташша пуранса, таса ҫăвашшен те ҫĕлхи улшăна пуҫланă, тӳрĕк ҫĕлхи саккунĕсене хытă тытман, урăх ҫулпа кайа пуҫланă. Урăх ҫулпа кайа пуҫлана пулин те, вăл ҫавах тӳрĕк ҫĕлхинҫен уйăралман. Ҫăвашшен тӳрĕксемпе хутшăнмалла пулнă. Хутшăннă пирки вĕсен ҫĕлхине ҫĕнĕ ăнланусем кĕнĕ. Ҫĕнĕ ăнланусене вĕсем хăшĕсене ҫăвашла каланă, хăшĕсене тӳрĕкле каланă. Тӳрĕк сăмахĕсене хăш ҫухне тĕрĕс каланă, хăш ҫухне тĕрĕс калайман, кашт урăхларах каланă.

Ҫăваш ҫĕлхинҫе сасăсем пĕр пĕрипе ылмашланнине, тата ҫаваш ҫĕлхийĕн саккунĕсем тӳрĕк ҫĕлхисен саккунĕнҫен пăраннине ҫак каланă кипчоттĕсене ăнланма пулаҭ. Вăл ҫăваш ҫĕлхи историйĕнҫен килет.

## § 37. Й=р

Тӳрĕксен J (Й) выранне ҫăвашшен хăш сăмахсенҫе Р пулаҭ.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Ҫăв. | ҫуран | хурăн | ура | урăл |
| Йак. | — | хатын | атах | — |
| Тут. | jäjäў | кajын | ajак | ăjыл |
| Тур. | jaja | кajын | ajак | ajыл |
| Кăр. | — | кajын | ajак | — |
| Алт. | — | кajын | ajак | — |

Ҫăвашшен халĕ те Р сасăпа Й сасă ылмашланаҫҫĕ. Аҫасем ҫĕлхе ҫавăрăнайманнипе Р выранне Й калаҫҫĕ: пăр, тăр, сăра выранне пăй, тăй, сăйа теҫҫĕ. Ҫапла каласа вĕсем ĕлĕкхи тĕп аслашшĕсен ҫĕлхи историне ирттермеҫҫĕ-ши?

## § 38. Ш, с=л

Тӳрĕксен сăмах пĕтмĕшĕнҫи Ш, С сасăсем ҫăвашла Л сасă выранне пулаҫҫĕ. 5,60,70 хисепсене пăхăр, тата урăх тĕслĕхсем:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Ҫав. | кĕмĕл | тул | ҫул | хĕл |
| Йак. | кӧмӱс | тас | тас | кыс |
| Тут. | кӱмӱш | тыш | таш | кыш |
| Тур. | гӧмӱш | тыш | даш | кыш |
| Кăр. | | — | тас | кыс |
| Алт. | кӱмӱш | тыш | таш | кыш |

Ҫавашшем кăшарни, кăшални теҫҫĕ. Кăшарни хĕл рни тени пулаť: кăш—хĕл, арни—ерни.

## § 39. П=м

Тӱрĕксен ҫĕлхинҫе те. ҫавашшен ҫĕлхинҫе те П сасăпа М сасă ылмашланаҫҫĕ:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Ҫав. | пин | пилĕш | майăх | пурта |
| Йак. | тысынга | — | — | малтя |
| Тут. | мең | милеш | мыјык | балта |
| Тур. | бін | — | быјык | — |
| Кăр. | мык | | мурт | — |
| Алт. | мӱ | пеле | мыјык | балта |

Ҫаваш ҫĕлхинҫе М сасăпа П саса пумай тĕлсенҫе ылмашланаҫҫĕ: йат вĕҫлĕхĕнҫе сăмах тĕпĕ епĕ, еп; ытти вĕҫлĕхсенҫе ман. Ман вăл хыттăн калана мен=епĕ. Ытти вĕҫлĕхсенҫе епĕнĕн, епĕне тес вырăнне мапăн, мана тептĕр.

Каларăм, илтĕм пек кӱлепесенҫи *ăм, ĕм*—вăл кĕскелнĕ *ман=епĕ*. Калаттăм-ҫҫĕ, илеттĕм-ҫҫĕ тес вырăнне Ҫикме ҫавашшем калатăп-ҫĕ, илетĕп-ҫĕ теҫҫĕ. Йепйешĕл тес вырăнне йемйешĕл теҫҫĕ. Кунта та епĕр П сасăпа М сасă ылмашнине куратпăр. Баш-баг сăмахран масмак тунă: баш—пуҫ, баг—ҫыхă; Б сасă М пулнă. Мамăк туркăлла памуг; ҫав сăмахранах вырăсла бумага.

Тата вавилонсен саббату самахне илер. Вăл вавилонла турă кунĕ тени пулаť, йеврейле канăҫлăх тени пулаť. Ҫак сăмах ҫаваш ҫĕлхинҫе пăртак улшăннă: епĕр саббату вырăнне шăмат тетпĕр (ш-с, б-м), йеврейсем шăмат кун нимĕн те ĕҫлемен. Ҫавашшем шăмат куна йăвăр кун теҫҫĕ, вăл кун ҫĕнĕ ĕҫ пуҫламаҫҫĕ. Вăл ĕлĕк йеврейсем шăмат кун нимĕн те ĕҫлеменнин йулашкийĕ пулмалла. 9-мĕш ĕмĕрте ҫавашшем йеврей тĕнне тытакан хусареемпе хутăшкалана. Йеврей тĕнне тытакансем шăматкун ĕҫлеменни ҫавашшем патĕнҫе кăшт урăх майлă пулса тăнă. *)

*) Кун ҫинҫен Золотницкий словарь ҫинҫе калана (стр. 108-109, б). Примеч. Редакции.

## § 40. Н=м.

Тӳрӗксен Н вырӑнне ҫӑвашшен ҫас ҫасах М пулат̆:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Ҫӑв. | ылтӑм | хырӑм | пӗтӗм | ама, анне |
| Йак. | — | харын | — | вен. аҥа |
| Тут. | алтын | карын | тӧтӧн | ана |
| Тур. | алтын | карын | тӳтӳн | ана |
| Кӑр. | алтын | карын | — | ана |
| Алт. | алтын | карын | тӳдӳн | эне |

Тырӑ акакан ҫӗре ҫӑвашшем ана теҫҫӗ. Ҫав сӑмахӑн тухавӗ тӳрексен ана сӑмахпа пӗрех пулмалла: ҫӑвашшеп ана сӑмахра Н сасӑ М пулман:анне, тата венкерсен ҫӑвашшенҫен йышӑннӑ аҥа сӑмахӗнҫи пек Н сасӑ ӗлӗкхи пекех йулнӑ теме пулат̆. Ҫав тӗрӗс пулсан, ана тени вара ама, анне-земля-матушка тени пулат̆. Ҫкифсем те ҫӗре онай-анне тенӗ.

Йанӑш—йӑмӑш, ылттан—ылтӑм, шӑнӑ—шӑмӑ, ниме—миме, сулхӑн—сухӑм; ҫак сӑмахсенҫе Н сасӑпа М сасӑ улшӑнаҫҫӗ. М сасӑлисем ҫӗнӗ сӑмахсем: вӗсенҫе Н сасӑ ҫӗнелсе М пулнӑ.

Нумайлӑ хисепӗн сыпӑкӗ *сем* авалхи ҫӑваш ҫӗлхинҫе сен пулнӑ. Карссун уйесӗнҫи ҫӑвашшем хӑшӗ халӗ те аплах калаҫҫӗ: лашасен тес вырӑнне лашасен теҫҫӗ.

Камӑн, нару тата ытти вӗҫлевлӗхсенҫе *сен* сыпӑк халӗ те аплипех йулнӑ.

Пӗрле вӗҫлевлӗхӗнҫе Н вырӑнне М пулнӑ. Вӑл М *сасӑ* Н сасӑ уменҫе М сасса тухнӑран килет пулмалла. Хӑшӗ, хӑш каласусенҫе кӑна ҫамӑн вӗҫлӗхӗнҫе те М калаҫҫӗ: лашасамӑн, пӑрусамӑн теҫҫӗ; лашасамра, пӑрусамра та теҫҫӗ.

*Ҫен, сим* халӗ нумайлӑ хисеп сыпӑкӗ. Тутар ҫӗлхинҫе *сен* йе *сан* тени вуҫе, хисеп тени пулат̆. Тен ӗлӗк ҫӑваш ҫӗлхинҫе те *сен* ҫав ӑнлавах пӗлтернӗ пулӗ.

## § 41. Ч, Ш=Ҫ.

Тӳрексен Ч, Ш сасӑсен вырӑнне ҫӑвашшен Ҫ пулат̆.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Ҫӑв. | виҫҫӗ | каҫ | укҫа | пуҫ | ҫухӑр |
| Йак. | ӳс | кнӑсӑ | — | бас | — |
| Тут. | ӧч | кич | акча | баш | чакыр |
| Тур. | ӳч | геч | — | баш | — |
| Кӑр. | ӳш | кеш | акша | бас | шакыр |
| Алт. | уч | кеч | акча | паш | — |

Ҫухăр (сĕхĕр) сăмахран ҫухрăм (тут. алт. чакырым) тухнă *). Ҫеҫке тутарла чăчăк, алт. чечек. Ҫапла вара ҫеҫке сăмахпа ҫеҫек сăмах пĕр самăхах иккен: пĕринҫе Ҫ вырăнне Ҫ пулнă, тата вĕсĕнҫи К сасăпа Е сасă вырăнĕсене улаштарнă (26-мĕш §.а пăх.)

*Ҫă, ҫĕ* пĕр пĕр ĕҫ туса пурăнnине пĕлтерекен самах сыпăкĕ: кĕтӳҫĕ, тарҫă, йумҫă **). Йевĕҫĕ самахра Ҫ, Ҫ пулман—йевĕҫĕ тут. јаучи, кăр, јаушы, Йевĕҫĕ йев, хытăн каласан йав сăмахран пулманши?.

Ҫ сасăпа Ҫ сасă ылмашланакан сăмах нумай: хăнҫа—хаҫан, минҫе—миҫе, шалҫа—шалҫа, кăвакарҫăн—кăвакарҫăн, ҫохрăм—ҫухрăм. Ҫикме ҫăвашĕсен кайаҫҫĕ, таваҫҫĕ, вырăнне кайаҫҫĕ туаҫҫĕ, теҫҫĕ.

Ҫ сасă Ш саса тухаť: кĕрĕҫ—кĕрĕш, ҫотарт—шотарт, ăҫта ăшта, кăҫкăр—кăшкăр.

Кăҫкăр сăмаха илер. Вăл тут, кар. кыјкулла, алт. кыјгыр, йак. кыјар. Кунта „J" тата Ш пулна. Кăшкăр самах ҫĕнĕ сăмах. Кивĕрех каласан кăҫкăр пулаť. Тата кивĕрех каласан кăҫкăр пулаť. (Пĕр аллă ҫул ĕлĕк ăна кычкыр тесе ҫырна). Ҫапла ĕнтĕ ҫак Ј кырыр сăмахра йепле улшăнса пыни пит интереслĕ. Ј саса малтан Ҫ тенĕ, унтан Ҫ тенĕ, йулашкинҫен М тийе пуҫлапă.

## § 42. К.

Тӳрĕксен пĕтмĕш К ҫăвашшен хăш хаш сăмахсенҫе ҫухална.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Ҫăв. | ҫĕре | ура | ĕне | тута | ҫемҫе |
| Йак. | сӳрăх | атах | — | — | — |
| Тут. | јăрăк | ајак | — | — | јомшак |
| Тур. | јӳрăк | ајак | инек | дудак | јумшак |
| Кăр. | — | ајак | — | дудак | цумсак |
| Алт. | јӳрек | ајак | вен. ӳнö | ар.дудак | јымышак |

Кĕҫӳне хăш сăмах вĕсĕнҫе К калаҫҫĕ те, каламаҫҫĕ те: пĕрҫĕк—пĕрҫĕ, кунтăк—кунтă, тумлак—тумла, текерлĕк—текерлĕ, пĕрмек—пĕрме, пуканек—пукане. Вĕсĕнҫе К пулсан, ҫав сăмахсем авалхи кӳлепеллĕ пулаҫҫĕ.

---

*) Золотницкий, словарь, стр. 73 **Примечание Редакции.**

**) Йумҫă урăхла йумăҫ (26-мĕш §-а пăх). Йумҫă сăмах йуп сăмахран тухаť (к-м). Йумҫă тени йупна пурăнакан, йупла парне кӳрекен тени пулаť. Халĕ йумăҫҫем парне мĕн кӳмеҫҫĕ. Ĕлĕк апла пулман. Вĕсем шаман тĕнĕне пурăнакансен пупĕ, паťăшки пулнă. Пупсем вырсарни кун ҫиркӳре йупсăр парне кӳпĕ пек, йумăҫҫем йуп кун йупла парне кӳпĕ пулмалла.

Кун ҫинҫен Золотницкий словарьнҫе калавă (стр. 162-172). **Примечание Редакции.**

К сасӑ ҫӑмах пӗтмӗшӗнҫе кӑна мар, хӑш ҫӑмах варринҫе те, пуҫламӑшӗнҫе те ҫухалать.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Тут. | гӳмер | јалкын | ӧрӧнге | бутка | јакты |
| Ҫӑв. | ӗмӗр | ҫулӑм | вӗрене | пата | ҫӳгӑ |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Тут. | тоткан | тотмаган | килгӓн | килмеген |
| Ҫӑв. | тытнӑ | тытман | килнӗ | килмен |

Хӑш калаҫура ӑҫта, ампар, ӳпле, ӑтӑр, ҫулӗ, ҫуне тес вырӑнне кӑҫта, хамнар, хӳплӗ, хӑтӑр, ҫӳхлӗ, ҫухне теҫҫӗ. Ҫапла калани ҫӑмаха кивӗ майлӑ калани пулать пулмалла. (Кӑҫта—хӑҫта=хӑш-+-та).

## § 43. Пуҫламӗш В.

Тӳрӗксен пуҫламӑш В ҫук: 3, 10, 30 хисепсене пӑхӑр, тата:

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Ҫӑв. | вӑл, ул, у | вӑкӑр | вут | вырӑн | вӑрман |
| Йак. | ол | огуз | уот | орон | — |
| Тут. | ул | огез | ут | урун | урман |
| Тур. | о,ӧ | ӧкӳз | — | — | орман |
| Кӑр. | ол,о | ӧгӳз | от | орун | — |
| Алт. | ол | вен. віка | от | орын | орман |

Авалхи ҫӑваш ҫӗлхинҫе те В пӗртте пулман. Пула пуҫласан та вӑл тӳрех сиксе тухман, ун вырӑнӗнҫе малтан у пулнӑ. Вуннӑ, вӑтӑр ҫӑмахсене илер. Вуннӑ йак. уон, кӑр. тут. ал, он; вутӑ йак. уот. тут. ут; вӑрӑ йак. уор, кӑр уру. Тӳрӗксен ҫак малтанхи У сассинҫен ҫӑвашла В тухса кайнӑ.

Хӑш калаҫура пуҫламӑш В сасӑ вырӑнне М пулать: вал-мал; тут. кӑр. алт. ал; вӑкӑр-мӑкӑр, весерле-месерле. Мал, мӑкӑр, месерле ҫӑмахсенҫе пуҫламӑш сасӑ В пулман, урӑх ҫулпа кайса М пулнӑ.

Хӑш калаҫура В вырӑнне П сасӑ та пулать: вакша-пакша, ҫавах-ҫапах, вус-пус, ҫавла-ҫапла. В вырӑнне П пулни ытти ҫӗлхесенҫе те пур. Волга-болгары Аравия-арабы, варвары-барбары.

Хӑш ҫӗрте ҫӑвашсем утӑ, ӗҫерӗн, вӗсенӗн тес вырӑвне вутӑ, вӗҫерӗп, ӑссенӗн, теҫҫӗ. Ҫакӑ мӗне пӗлтерет? Утӑ, ӗҫерӗн, ӑссенӗн ҫӑмахсем пӗтӗмпех ҫӑвашланса ҫитмен, тӳрӗксен майлӑрах.

## § 44. У=в.

Халӗ анҫах каланӑ пек, пуҫламӑш В анҫах мар, пӗтмӗш В та тӳрӗксен У сасси вырӑнне пулать.

| Ӟăв. | шыв, шу | тăв, ту | сыв, су | çăв, çу (çăмăр) | çăв, çу (кĕпе) |
|---|---|---|---|---|---|
| Йак. | у | — | — | — | суі |
| Тут. | сыу | тау | сау | јау | јыу |
| Тур. | су | тау | — | — | — |
| Кăр. | суу | тау | сау | јау | — |
| Алт. | су | ту | су | јаа | јун. |

Йусав тут. јасау, усрав асрау, мухтав тут. кăр. алт. мактау. Кунта ӟăвашла В сасăпа тӳрĕкле У ылмашланаççĕ. Йусав, усрав мухтав сăмахсем ĕçхĕл йаӟĕ тĕпĕ-ӟен У сасă хушнăран пулнă. У кайран В сасса тухнă. Ĕçхĕл тĕпĕ хупă сасăпа пĕтет пулсан, У сасă В сасă пулмасăрах йулат: йурат-йурату, ӟар-ӟару. Çапла вара ӟăваш сăмахсенӟе те В сасăпа У сасă ылмашланаççĕ.

## § 45. У=ăв, Ӳ=ĕв.

У, Ӳ сасă камăн, пару вĕçлевлĕхĕнӟе *ăв*, *ĕв* пулат: ту, çу пашалу, лашу, ӟиркӳ сăмахсем камăн вĕçлевлĕхсенӟе туăн, çуăн, пашалуăн, ӟиркӳĕн выранне тăвăн, пашалăвăн, ӟиркĕвĕн пулаççĕ. Ĕçхĕл йаӟĕн тĕпĕ У сасăпа пĕтет пулсан, çав У та ăв пулат: ту-тăвас, çу-çăватăн, ту-тĕветĕп.

*Ăв* выранне У калакансем халĕ те пур. Ӟикме ӟăвашĕсем ӟăваш, йĕвен, тĕвер, тăвар тес выранне ӟăваш, йĕен, тӳер, туар теççĕ.

Çапла ĕнтĕ ту, çу сăмахсенӟи У ĕлĕкрех *ăв* пек илтĕннĕ, тӳрĕксен ӟĕлхинӟи *ау*, *у* пек.

## § 46. У=ыв, ывă.

У выранне хăш калаçусенӟе *ыв*, *ывă* пулат: шу-шыв, су-сывă, ул-ывăл, уçă-ывăç, сулăш-сывлăш. Тӳрĕк ӟĕлхисемпе танлаштарса пăхсассăн, акă мĕн куратпăр.

| Ӟăв. | шыв | сывă | ывăл | ывăç | ывăт. |
|---|---|---|---|---|---|
| Йак. | у | — | уол | — | — |
| Тут. | сыу, су | сау | угыл, ул | ауыч, уч | — *) |
| Тур. | су, са | — | огул | — | — |
| Кăр. | суу | сау | ул | ууш | ат. |
| Алт. | су | су | уул | оош | ат. |

Тӳрĕкле ӟĕлхесенӟе те кун пек сăмахсене йе кĕскенĕн, йе вăрăмăн калаççĕ иккен.

*) Тутарла: ат (Остроумов, Первый опыт словаря народно-татарского языка. Казань. 1876 г., стр. 51). Примеч. ред.

## § 47. Варринҫи В.

Варринҫи В тӳрӗксен У вырӑнне пулать: аван тт. ӑуен, тӑвӑл тт. дауыл, хывӑх тт. кибӑк.

Ҫӑваш ҫӗлхинҫе хӑш каласура В вырӑнне Л пулать; хӑш каласура В сасӑ тухса ӳкме йуратать: автан—алтан, атан; пӑтавкка-пӑталкка-пӑтакка, йуравлӑ-йуралла, авлая-алан, тавлӑк-талӑк, тивме-тиме, ҫавӑнпа-ҫампа, аванкартп-анкарти, хӑвӑр-хӗр, аҫӑвӑр-аҫӑр, калатӑвӑр—калатӑр, илетӗвӗр-илетӗр.

## § 48. ын, иҥ=у, ӑн,—ӳ, ӗн.

Ҫӑваш ҫӗлхинҫи иккӗмӗш сӑпат сыпӑкӗ У тӳрӗксен *ыҥ* вырӑнне пулать: уту; тт. атыҥ. хӗрӳ кызыҥ. У, Ыҥ вырӑнне ӗҫхӗл йаҫӗсенҫе иккӗмӗш питре *ӑн* пулать: торасыҥ-пурӑнатӑн, аладыҥ-илтӗн, тордоҥ-пурӑнтӑн.

Йаккут ҫӗлхинҫе ӑн тени есӗ тени пулать. *Есӗ* тт *син*, кӑр. алт. *сен*; ҫӑваш ҫӗлхинҫе камӑн, тата ытти вӗҫлевлӗхсенҫе *сан* (сан+ӑн, ан+а); пулӑсӑн, кайӑсӑн пек кӳлепесенҫе *сӑн* (кунта С ҫухалман). Ҫапла вара ҫӑваш ҫӗлхинҫе иккӗмӗш тт сыпӑкӗсем: У ӑн, сӑн, сан, есӗ сӑмахсем пӗр пӗринпе хурӑнташлӑ пулаҫҫӗ.

## § 49. Т=Р.

Тӳрӗксен Т вырӑнне хӑш сӑмахра ҫӑвашшен Р пулать: ерне тт. атна, арӑм, йак. хатын, тт. кӑр. катын; ура йак. атах. Т-па Р ҫӑваш ҫӗлхинҫе те ылмашланаҫҫӗ, пуринҫен ытла иртнӗ ӗҫ вӑхӑтӗнҫе. Иртнӗ ӗҫ сыпӑкӗ Р, Л, Н сасӑпа пӗтет пулсан, Р вырӑнне Т пулать: пул+т+ӑм, ан+т+ӑм, кур-тӑм. Ҫак сӑмахсенҫенех тунакан хурӑм тусан Т вырӑнне Р пулать: пултӑм—пул-ма-р-ӑм, ан+т+ӑм—ан-ма+р+ӑм,кур+т+ӑм—кур+ма+р+ӑм.

Сӑмах Р, Л, Н сасӑпа пӗтет пулсан, вырӑнпа туху вӗҫлӗхӗнҫе Р вырӑнне Т пулать: кахалтан, наҫартан, вӑрмантан.

Сӑмах тӗпӗ вӗҫӗнҫи р хӑш сӑмахра ҫухалать: йар — йарнӑ — йанӑ, кӗр — кӗрнӗ — кӗнӗ, пер — пернӗ — пенӗ, тӑр — тӑрнӑ — тӑнӑ. Куртарт, карӑнтӑк вырӑнне кӑтарт, кантӑк теҫҫӗ. Кунта та р сасӑ ҫухалать.

Ҫӑваш ҫӗлхинҫе сӑмах пуҫламӗшӗнҫе р сасӑ нихӑҫан та пулмасть.

Р сасӑпа пуҫланакан йут сӑмахсем ҫӑваш ҫӗлхине куҫнӑ пулсан, вӗсем хӑйсен умӗн ӑ, ӗ хушаҫҫӗ: ӑрак, ӗрет, ӑрахмат, Ӑраман. Ҫикме ҫӑвашӗсем р сасӑпа та пуҫлаҫҫӗ: рак, рет теҫҫӗ.

## § 50. Н, Л.

Ђăваш ђĕлхинђе Н сасăпа Л улшăнаççĕ: кинемей — киломей, кинен — килен, мунђа — мулђа, мĕнле — мĕлле, кунлен — куллен.

Хăш сăмахсенђе Н сасă тухса ўкет: ланк — лек, каçпалан — каçпала, минђе — миçе, шăхлинђă — шăхлиђă.

Л сасă та тухса ўкме йуратаť: вĕлтĕрен — вĕтрен, пăлтăран — путран, пăлђăра — пăђăра, илсе — исе, килсе — кисе, вăлсем — вăсем. Утмăл, илтле тес вырăнне утмăл, итле теççĕ.

## § 51. Т, С, Ђ, К.

Тĕк — сĕк, ђатăрах — ђасрах сăмахсенђе Т сасăпа С сасă ылмашаççĕ. Тăс — ђăс, хут — хуђĕ, апат — апађĕ, вăрмантан — вăрмапсенђен, йалтан — йалсенђен, пултăн — пулђĕ, култăн — кулђĕ. Кунта Т сасă Ђ сасса тухаť. Т = К итле — икле, тăла — кăла, тĕрле — кĕрле, тилхепе — килкепе; тĕвенте — кĕвенте, хăнтăла — хăнкăла сăмахсенђе Т сасăпа К сасă ылмашланаççĕ.

## §. 52. ЙĔ = И.

Й сасăпа И сасă ылмашланаççĕ: йĕнке — инке, йысна — исна, йĕтĕн — итĕн, йĕке — ике, Йăван — Иван, йĕтес — итес, йĕкĕреш — икĕреш.

Çакăнти сăмахсем Й сасăпа пуçлансан, тўрĕк ђĕлхи патне çывăхрах; И сасăпа пуçлансан, вĕсем çĕнĕ хурăмлă пулаççĕ: йĕтес тут. jăдăс, йинке тут. jиньгă, алт. jенгă.

Й сасă Л сасăпа ылмашланаť: йес — леç, йашка — лешке, йерес — лере.

Й сасă сăмах варринђе хăш ђухне çухалаť: хăйне — хăне, сейрен — серен, кайрăм — карăм, сайра — сар'а, кайран — каран.

## §. 53. Ы, У = Ъ.

Ă саса Ы сасă вырăнне пулаť: йывăç — йăвăç, йывăр — йăвăр, ыйхă — ыйăх — ăйăх, йытă — йăтă, ывăн — ăвăн, тырă — çуртăри, шыв — шăвар, хытлан — хăтлан, йылтăр — йăлтăр, хыпала — хăпала.

У вырăнђи Ă: сурăху — сурăхă, халапу — халапă, нумай — нăмай, сумах — сăмах, урам — ăрам, урапа — ăрапа, ху — хăй, ку çул — кăçал, хул — хăлаç, куртарт вырăнне кăтарт, ул — вăл, тура — пуçтăри, кусем — кăсем, пуç — пăçлан, мункун — мăнкун, кун — кăнтăр, усă — ăсă, вутă — вăтă.

Çемçе сăмахсенче А, Ы, У вырăнне Ĕ, И, Ӳ пулать: ку çĕр—кĕçĕр, ку чухне—кĕчӳне, вăсем—вĕсем, кусем—кăсем—кĕсем; пиç—пĕçер, епир—епĕр, есир—есĕр, вил—вĕлер, хĕрӳ—хĕрĕ, кĕрĕкӳ—кĕрĕкĕ, ӳмпӳ—ĕмпӳ.

Çакăнта кăтартнă Ы, У вырăнне пулакан Ă çĕнĕ сасă пулмалла. Çавăнпа, сăмахран каласан, йăтă сăмах йытă сăмахран çĕнĕрех хурăмлă пулмалла.

Ы, У сасăсем Ă сасă пулнине çапла ăнланма пулать. Ы, У тулли сасăсем, Ă кĕске сасă. Чĕлхе оркăнĕсене кĕске саса калама тулли саса каланинчен çăмăлтарах. Çавăнпа вĕсем хăш сăмахсенче Ы, У вырăнне Ă каласçĕ.

## 54 §. Йанăрав.

Чăваш чĕлхинче сăмахсенче йанăрав тăвас тĕлĕшпе хăйне правĕлăсем пур. Вĕсем ак çаксем:

1. Сăмах вăрăм татăклă пулсан, йанăрав йулашки татăк çинче пулать: Çурé, итлекелé, калá, каласáн, каламасáн, каламасанáх.

2. Сăмахра хăш татăкĕ вăрăм, хăш татăкĕ кĕске пулсан, йанăрав йулашки вăрăм татăкра пулать: сáрă, хáтă, хурлăхáн, лáрăр, лáрăпăр, кушáкăн, ĕçлéрĕмĕр, çӳреттéмĕр, хатĕрлеттéмĕр, хáтĕрлĕттĕмĕр.

3. Сăмахра пур татăкĕсем те кĕскисем пулсан тури чăвашшем йанăрав малтанхи татăксем çине тăваççĕ: кéмĕл, тáтăмăр, йáмăкшăн.

Анатри чăвашшем йанăрав йалан йулашки татăк çине тăваççĕ: сурáх, ĕçлерĕмéр, кĕтĕмéр. Кайăйнă, плéйнĕ пек кӳлепесенче кăна йанăрав Ай, Ей сыпăк çинче пулать, сăмах вĕçĕнче пулмасть. Ку ун пек сăмахсене емотсипе каланăран килет.

Пусăмсен пĕрлехи правĕлĕ çапла пулать вара:

Анатри чăвашшен пусăм йаланах йулашки татăкра пулать. Тури чăвашшен сăмахăн йулашки вăрăм татăкĕнче пулать; кĕске татăклă сăмахра малтанхи татăкĕнче пулать.

Халĕ вырăсла йанăравпа чăвашла йанăрава танлаштарса пăхар.

Вырăс сăмахĕсенче, йанăравлă сасса каланă чух, интгонатси çĕкленет, сасса туллийĕн тата пусăмсăр сасăсенчен пĕрре те çурă хут вăрăм илтĕнет. Йанăравсăр сасăсем кĕскепĕн, тата уçăмсăр илтĕнеççĕ. Тĕслĕхе А сасăллă сăмахсем илер те, сăнаса пăхар: парта, карандаш, подумáл. Çак сăмахсенче пусăмлă А кăна таса

илтёнег. Ка, мАл татăкри′ А ҭăвашла Ă пекех илтёнет. Та татăкри А сасă Ă пекех, анҭах пусăмлă А сасăран кёскерех илтёнет.

Халё ҭăваш сăмахёсенҭи А сасăсене сăнаса пăхар. Таракан сăмаха илер. Кунта виçё А. Виççёшё те пёр пек илтёнеççё и, пёр пек мари? Вёсене каланă ҭух, сасă оркăнёсем пёр пек ёçлеççёп, пёр пек мари? Пёр пек мар пулсан, пёр пек мар сассин уйрăмлăхне кăтартса парăр. Тата йумах илер: каласа пар мана. Кунти А сасăсене сăнаса пăхар. Нумайёшин шухăшёпе, çак тёслёхсенҭи А сасăсем пур те пёр пек илтёнеççё. Çапла вара вёсен шухăшёпе çакăнта йанăравлă А çук, пусăм та çук. Анҭах çапла калани тёрёс мар. Ҭăваш ҭёлхинҭе йанăрав пур, анҭах вăл вырăсла йанăрав пек вăйлă мар. Сăмахран, А сасса илер. Вăл пусăмсăр А сасăсенҭен кăшт вăйлăрах та, вăрăмрах та илтёнет, анҭах хăй илтёнўлёхне вырăс сассисем пек мар, питех улшăнтармасť. Тёслёхсем: таптаса, хупхура. Тата йанăрав пурри, хутăш татăклă, кёске татăклă сăмахсене тёрлё калаçура тёрлё каланинҭен те, ҭăвашла сăвăсенҭе хăш татăксене уйрăмрах каланинҭен те пăлла.

# Иккӗмӗш пайӗ.

## Ҫăваш морфолокийӗ.

### 55 §. Ҫăваш ҫӗлхинҫи сăмахсенӗн пулăвӗ.

Ҫăваш ҫӗлхинҫе, ытти ҫӗлхесенҫи пекех, тӗрлӗ сăмах пур. Кăшт, хирӗҫ, анҫах, тата, ӗҫке, айуй сăмахсене илер. Епӗр вӗсен кӗлеткиллӗ урăх сăмах тупаймастпăр. Ҫавăн пек сăмахсене кӗлеткесӗр сăмахсем теҫҫӗ. „Пулăҫă, автан, лайăххи, лайăхран, виҫҫӗмӗш, кайасшăн, кайиҫҫен, унта“ сăмахсене кӗлеткеллӗ сăмахсем теҫҫӗ: вӗсен кӗлеткиллӗ сăмахсем епӗр урăх та нумай тупма пултаратпăр: кӗтӳҫӗ, пуйан, ырри, ырăрах, ҫиҫҫӗмӗш, тупасшăн, тупиҫҫен, кунта, тата ыттисем те.

Кӗлеткеллӗ сăмахсем хăшӗ улшăнаҫҫӗ, хăшӗ улшăнмаҫҫӗ. Тӗслӗхсем: ҫавăнтан, малашне, ун ҫух, тума, килсе, кӗрсе, тупиҫҫен, кайсассăн, кайиҫҫен сăмахсем улшăнман сăмахсем; арман, пуҫ, усал, кай, ҫыр, кил сăмахсем улшăнакан сăмахсем. Улшăнакан сăмах тесе, епӗр кунта вӗҫленекен, йе сăпатланакан сăмаха калатпăр.

Кӗлеткеллӗ сăмах хăшӗ хăй таса тӗп сăмах, вăл урăх сăмахран пулман. Пулă, куҫ, пăр, ут, ҫыр, ил сăмахсем ҫавăн пек, вӗсем урăх сăмахран пулман. Ҫавăн пек сăмахсене *тӗп сăмахсем* теҫҫӗ.

Пулăҫă, куҫлă, пăрлă, утăм, ҫырăн, килкеле сăмахсем тӗп сăмахсенҫен, тӗрлӗ сыпăксем хушăннăран пулнă. Кун пек сăмахсене *сыпăклă сăмахсем* теҫҫӗ.

Сыпăксем тӗп ҫумне йӗркипе, кашни хăй вырăнне тăрса сыпăнса пыраҫҫӗ. Ăна кӗретӗнех курма ҫак сăмахсене илер:

1. Пуҫ.
   Пуҫ—ăм.
   Пуҫ—ăм—ри.
   Пуҫ—ăм—ри—сем.
   Пуҫ—ăм—ри—сем—пе.
2. Пул.
   Пул—ӗ.
   Пул—ӗ—ҫ.
   Пул—ӗ—ҫ—ин.
   Пул—ӗ—ҫ—ин—ҫҫӗ,
3. Йат.
   Йат—сем.
   Йат—сен—ҫе.
4. Ҫыр.
   Ҫыр—ас.
   Ҫыр—ас—шăн.

***Пуҫ, йат*** вырăнне урăх хытă сăмахсене—аран, ут, алăк сăмахсене: ***пул, ҫыр*** сăмах вырăнне тух, кул, кай сăмахсене лартар. Ҫапла тусан епӗр хушăнса пыракан сыпăксем ним улшăнма-

сăр тăнине куратпăр. Пуç, йат, пул, çыр, вырăнне çемçе сăмахсем лартсан, сыпăксенђе А, Ă, сасă вырăнне вĕсен мăшăрĕсене—Е, Ĕ, сасăсене лартмалла кăна.

Çăварни, аслатте, арçын, пуççап, асту сăмахсем икĕ тĕпрен пулнă. Вĕсене *йĕкĕр* сăмахсем теççĕ.

Йат вĕçлевлĕхĕнђи йе хушуллă тайăмăн пĕреллĕ хисепри иккĕмĕш сăнри сăмаха *сăмах тĕпĕ* теççĕ. Куç, куçлăх, куçлăхри сăмахсем; тата çыр, çырăн, çыртар, çыртаркала сăмахсем сăмах тĕпĕсем пулаççĕ. Ун пек сăмахсем вĕçленме, йе сăпатланма пултараççĕ. Ку, çыр сăмахсем *пуçламăш тĕпсем* пулаççĕ; куçлăх, куçлăхри, çырăн, çыртар, çыртаркала сăмахсем *сыпăклă тĕпсем* пулаççĕ.

Пуçламăш тĕп хыçĕнђи сыпăксене пурне те *аффикс* йе *сыпăк* теççĕ. *Çыруçăпа* сăмаха илер. Кунта сăмах тĕпĕ—*Çыруçă*, пуçламăш тĕп—*çыр*. у—ĕçхĕлтен пулнă йапала йатне пĕлтерекен сыпăк; *çă*—ĕçе пĕлтерекен сыпăк, *па*—пĕр пулу вĕçлевлĕх сыпăкĕ.

Сăмахсен кĕлеткисене, вĕсем улшăннине, йе улшăнманнине пăхса, пĕтĕм ђăваш ђĕлхинђи сăмахсене ак çапла уйăрма пулаť:

| Пĕтĕм ђăваш ђĕлхинђи сăмахсем. | | |
|---|---|---|
| Кĕлеткеллĕ сăмахсем. | | Кĕлеткесĕр сăмах. |
| Улшăнакан сăмахсем. | | Улшăнман сăмахсем. |
| Сăпатланакан сăмахсем. | Вĕçленекен сăмахсем. | |

Хушша калани. Ђăваш ђĕлхинђи сăмах кăласĕсем çинђен тĕплĕрех хыçалта 161 §-ра каланă.

## Улшăнакан сăмахсем.

### 1. Вĕçленекен сăмахсемпе сăпатланакан сăмахсен пĕрлехи кĕлеткисем.

56 §. Вĕçленекен сăмахсенпе сăпатланакан сăмахсен пĕр пек кĕлеткисем пур. Кунта епĕр çав кĕлеткесенђен иккĕшне кăна пăхса тухатпăр. Вĕсем—вĕçленекен сăмахсен те, сăпатланакан сăмахсен те сăпат сыпăкĕсем пурри, тата вĕсен иккĕшлн те пĕреллĕпе нумайллă хисеп сыпăкĕсем пурри.

## Сăпат сыпăкĕсем.

### 57. §. Сăпат сыпăк кĕлеткисем.

Сăпат сыпăкĕсем виçĕ кĕлеткеллĕ, мĕншĕн тесен, ӡăваш ӡĕлхинӡе виçĕ сăн: пĕрмĕш, иккĕмĕш, тата виççĕмĕш сăн. Вĕçленекен сăмахсенӡе сăпат сыпăкĕсем пуринӡен ытла йапала камăннине пĕлтереççĕ: манăнне, санăнне, унăнне, пирĕнне, сирĕнне, вĕсенне. Сăнлапакан сăмахсенӡе ĕçе кам тунине пĕлтереççĕ: епĕ, есĕ, вăл, епĕр, есĕр, вĕсем тунине. Çапах, пĕлтерĕшĕ пĕр пекех мар пулсан та, кĕлеткисем вĕсен иккĕшин те пĕр.

**Пĕрмĕш сăпат кĕлетки.** Сурăх-ăм, атте-м, кай-ăп, кайат-ăп, кайр-ăм, кайатт-ăм, кайăтт-ăм сăмахсене илер. Кунта ăм, м, ăп, сыпăк йапала манăннине, йе ĕçе епĕ тунине кăтартаӗ.

Йапаласем нумай пулсан, йе ĕçе тăваканни пĕӡӡен мар, нумайăн пулсан, ăмăр, мăр, ăпăр, пăр пулаӗ: сурăх-ăмăр, атте-мĕр, кай-ăпăр, кайат-пăр (кайат-ăпăр), кайр-ăмăр, кайатт-ăмăр, кайăтт-ăмăр.

Ах, аннеçĕм, аннеçĕм,
Манăн ырă тусăмçăм!
Пурăнтăмăр иксĕмĕр
Пĕр йăвари кайăк пек.

**Иккĕмĕш сăпат кĕлетки.** Сурăх-у, аç-у, кай-ăн, кайат-ăн, кайр-ăн, кайатт-ăн, кайăтт-ăн, кайă-сăн. Кунта у, ăн, сăн сыпăк. Вĕсем йапала санăннине, йе ĕçе есĕ тунине пĕлтереççĕ. Санăн вырăнне сирĕн, есĕ вырăнне есĕр пулсан, у, ăн, сăн вырăнне ăр, сăр пулаӗ: сурăх-ăр, аç-ăр, кай-ăр, кайăт-ăр, кайр-ăр, кайатт-ăр, кайăтт-ăр, кайă-сăр.

Аçу килне ӡим халĕ
Хăвах ӡупса пырăн-ха;
Аçу мĕнле ыррине
Çавăн ӡухне курăн-ха.

Ӡăпар куккук авăтаӗ:
Ир тăрсан та ăна итлĕр:
Каç пулсан та ăна итлĕр:
Хĕрĕр сасси аван-и?
Кукук сасси аван-и?

**Ăр** вырăнне хăш сăмахсенӡе **ăвăр** пулаӗ: хăр —хăвăр, аçăр— аçăвăр.

**Виççĕмĕш сăпат кĕлетки**: сурăх-ĕ, лаш-и, кай-ĕ, кайаҫ-ĕ (кайаҫ—кĕскелнĕ кĕлетке), кайаҫ-ҫĕ, кайĕ-ҫҫĕ. Ĕ, И сыпăк йапала унăннине йе ĕçе вăл тунине кăтартаҫ. Унăн вырăнне вĕсен, вăл вырăнне вĕсем пулсан та, Ĕ, И сыпăк кунта аплипех йулаҫ: вĕсен сурăх-ĕ, вĕсен лаш-и, вĕсем кайаçç-ĕ.

Çĕкле çĕкле çапрĕ те
Ҫунĕ ўтне хăварҫĕ.
Пĕтрĕ пĕр ҫун тĕнҫере,
Ĕçĕсемшĕн хупланҫĕ.
Пĕтрĕ ҫăваш ĕмĕрĕ,
Унăн ҫĕри лăпланҫĕ.

Хăш сăмахра Ĕ вырăнне *ăшĕ, ĕшĕ* пулаҫ: тет-ĕшĕ, апп-ăшĕ, муҫ-ăшĕ, кукк-ăшĕ. Ашшĕ сăмах *аçа-ăшĕ* сăмахран улшанса пулнă.

*Хушша калани*. Виççĕмĕш сăпат сыпăкĕ унăннине кăна мар, пĕр пĕр йапалана ыттисенҫен уйăрарах тăнине те пĕлтерет:

1. Пĕр старикпе пĕр карҫăк пурăннă; старикки çитмĕл çулта, карҫăкĕ утмăл çулта пулнă.

2. Амăшĕпе хĕрĕ пурăннă; малтан амăшĕ ĕçленипе пурăннă, кайран хĕрĕ ĕçленипе пурăннă.

3. Суккăрпа хăлхасăр хире парçа вăрлама кайнă. Хăлхасăрри суккăррине калаҫ: есĕ итле те, мĕн илтнине мана кала, епĕ астуса тăрăп та, мĕн курнине сана калăп, тет. Суккăрри: йурĕ, тет.

## 58 §. Сăпат сыпăкĕсем мĕнле сăмахсенҫен пулнă.

**Пĕрĕмĕш сăпат сыпăкĕ**. М, *ăм*—кĕскелнĕ *ман*. Ман тени авалхи ҫăваш ҫĕлхинҫе епĕ тени пулнă. Хăш вĕçлевлĕхсенҫе вăл халĕ те аплипех йулнă; тĕслĕхрен харкампа пару вĕçлевлĕхĕсенҫе „епĕ—нĕн, епĕ—не" тес вырăнне епĕр: ман—ăн, ман—а тетпĕр. Тата ҫăваш ҫĕлхине тўрĕк ҫĕлхисемпе танлаштарса пăхсан, акă мĕн куратпăр: *епĕ* тутарла *бин*, *мин* пулаҫ; каркăсла, алттайла *мен* пулаҫ. *) Ҫăваш ҫĕлхинҫе *мен* хытнă та (16 §), *ман* пулнă.

Ĕçхĕлсенҫи *ап*—*еп*—епĕ тенинҫен пулнă: *пăр*, *пĕр* сыпăксем епĕр тенинҫен пулнă.

Епĕр тутарла, тĕрĕкле, каркăсла *біз*, алттайла—*пис*. Ҫăваш ҫĕлхинҫе З, С сасă вырăнне Р сасă пулнă (33 §: біз пир). Хăш вĕçлевлĕхсенҫе *пир* халĕ те аплипех йулнă: пир—ĕн, пир—е. Ҫикме ҫăвашĕсем халĕ те епĕр сăмаха *пир* майлăрах калаççĕ: *пер* теççĕ.

---

*) Золотницкий, Корневой словарь, ст. 8. **Примеч. Ред.**

*Ăмăр, ĕмĕр, мăр, мĕр* сыпăксене икĕ тĕрлĕ ăнланма пулат̆. Йе вĕсем *пир* сăмахпа пĕр тĕпрен (II выранне М пулма пултарат̆: 38 §; Ĕ выранне И пулма пултарат̆: 53 §), йе *ăм, ĕм,* М ҫумне *ăр, ĕр* хушăннăран пулнă. Кирек мĕнле пулсан та, ку сыпăксем ĕлĕкех „епĕр, пирĕн“ тенине пĕлтернĕ.

Иккĕмĕш сăпат сыпăкĕ. *У, ун*—кĕскелнĕ *сан; сан* авалхи *есĕ.* Кайăсăн, тăвăсăн пек сăмахсенҫ̆е вăл халĕ те аван палăрат̆. *Есĕ* йаккутла *ан,* тутарла *син;* тĕрĕкле, кăркăсла *сен.* Авалхи ҫ̆ăваш ҫ̆ĕлхинҫ̆е *сан:* сан—ра, сан—па (есĕре, есĕпе выранне) *).

*Ут* тутарла *ат, хĕр—кыз, ил—ал.*

| | | |
|---|---|---|
| *Ҫ̆ăв.* ут—у. | хĕр—ӳ | ил—ет—ĕн |
| *Тут.* ат—ын. | кыз—ын | ал—а—сын. |

Ҫапла вара У кĕскелнĕ *ăн, ăн*—кĕскелнĕ *сан* (сăн).

*Ăр*—кĕскелнĕ *ăвăр,* тӳрĕкле ынгыз, (з-р; г-в) **). Ат-ын-гыз-ут-ăр (ут-ăвăр выранне), кыз-ынгыз-хĕр-ĕр (хĕр-ĕвĕр выранне), алдыгыз—илт-ĕр (илт-ĕвĕр выранне), хăвăр сăмахра *ăвăр* кĕскелмесĕрех йулнă.

*Ăр* тата—кĕскелнĕ *сыз.* Ала-сыз—илетĕр. *Сыз* ҫ̆ăвашла есĕр тени пулат̆. Есĕр авалхи ҫ̆ĕлхере *сир*—сыз (З-Р) пулнă: сир-е, сиртен ***). Ҫ̆икме ҫ̆ăвашĕсем есĕр тессине халĕ те *сир* майлăрах калаҫҫĕ: *сер* теҫҫĕ. Кайăсăр, пулăсăр пек сăмахсенҫ̆е *сир* кăшт кăна улшăннă.

Ҫапла вара иккĕмĕш сăнри у, *ăн, сăн* сыпăксем сан (есĕ) сăмахран кĕскелсе пулнă; *ăр* сыпăк *ăвăр*—*сир* сăмахран пулнă.

Виҫҫĕмĕш сăпат сыпăкĕ. Ĕ сыпăк «вăл, ул, у» сăмахсемпе пĕр тымартан теме пулат̆. „Вăл“ сăмах тутарла ул, тĕрĕкле О. Ö кăркăсла ол, о ****). Ҫ̆ăваш ҫ̆ĕлхинҫ̆е У, Ă, Ӳ, Ĕ сасăсем пĕр пĕринпе ылмашаҫҫĕ: унăн—ăна, тăрпа—тĕрне, лашу—кĕрӳ, кĕр—кӳрт. Виҫҫĕмĕш сăн сыпăкĕпе вăл сăмах хушшине вара ҫапла кăтартма пулат̆; вăл—ул, у—ӳ, ö—ĕ.

Сăмах А, Е, Ă, Ĕ сасăпа пĕтет пулсан, виҫҫĕмĕш сан сыпăкĕ И пулат̆: лаши, ĕни, пулли, тилли.

Хушса калани. Ĕлĕк «сурăхăм, сурăху» кăна тенĕ. Кайран М, У сасăсем пĕлтерĕшне мана пуҫланă та, «ман сурăхăм, сан сурăху» тийе пуҫланă. Кун пек кала пуҫласан, хыҫалти М, У кирлĕ мар пула пуҫланă, мĕншĕн тесен, камăннине «манăн, са-

---

*) Ҫавăнтах.
**) В—Г: башыгыз—пуҫăвăр, огул—ывăл, сугар—шăвар.
***) Ҫавăнтах, стр. 60. Примеч. Ред.
****) Ҫавăнтах, стр. 28. Примеч. Ред.

нăн» сăмахсем пĕлтернĕ. Çавăн пирки турă ђăвашшем халĕ сăмах вĕçĕнђи М. У сасăсене сайра—авалхи йурăсенђе, авалхи халап-сенђе, тата хурăнташ-тăвана ђĕннĕ ђух кăна калаççĕ. Ахађ ђух вĕсем ман лаша, сан лаша теççĕ. Сайра хутра тата вĕсем виççĕмĕш сăпат сыпăкне те каламаççĕ: ун лаша теççĕ. Анатри ђăвашшем камăнне пĕлтерекен сыпăксене хытă тиркеççĕ, çапах та йаланах мар: «ман кĕнеке» тесе калакансем те пур. Тата виççĕмĕш сăн сыпăкĕ Ĕ хăш сăмахсенђе пур ђăвашшен те пĕрех тухса ўкнĕ: сăмахран йун кунĕ, урайĕ, кайатĕ тес вырăнне йункун, урай, кайаЍ теççĕ.

Хăш сăмахсенђе сăпат çухалма мар, иккĕленет: ађа-м-ăм, ађа-м-ç-ăм*), ĕн и-йĕ, çуртăр-и-йĕ.

Çўлĕ сăран кўмийĕ
Тантăш патне çўретет;
Хĕр çуммисен йурриййĕ
Таçта çитех илтĕнет.

59 §. Сăпат сыпăкĕсем сăмах тĕпĕсемпе пĕрлешни.

Сăмах тĕпĕ мĕнле сасăпа пĕтнине кура, камăннипе пĕлтерекен сăмахсем ултă тĕслĕ пулаççĕ. *57-мĕш ст. таплитсăна пăх.*

**Пĕрлехи йĕрке:** камăннипе пĕлтерекен сыпăксем тўрех сăмах тĕпĕ çумне хушăнмалла.

Сăмахсем хупă сасăпа пĕтеççĕ пулсан, вăл ђăнахах çапла пулаЍ. Ытти сăмахсенђе сăмах тĕпĕпе сыпăксем хушши кăшт урăхларах пулаЍ.

Пĕрлехи йĕрке тăрăх, иккĕмĕш тĕсре çыруăм, çыруу, çыруĕ пулмалла. Анђах икĕ уçă саса йунашар тăма йуратмасЍ. Вара сăмах тĕпĕнђи У сасă авалхи кĕлеткелле пулса кайаЍ: У ăв пулаЍ, çыру сăмах çырăв пулаЍ. Халĕ сăмах хупă сасăпа пĕтнĕрен, ун çумне сăн сыпăкĕсем тўрех çыпçăнаççĕ.

Виççĕмĕш тĕсре икĕ хупă сасă йунашар тăма йуратманран, вĕсен хушшине Й сасă кĕрсе лараЍ.

Тăваттăмĕш тĕсре пĕрмĕш сăпат сыпăкĕнђи А сасă çухалаЍ: икĕ уçă сасă йунашар тăма йуратманран—А сасă вăйсăртарахскер, тухса ўкет те, М сасă кăна тăрса йулаЍ. Иккĕмĕш сăпатра, çавăн пиркийех, А сасă тухса ўкет: ахађ сăмахсенђе А сасăпа У сасă пĕр пек вăйлă сасăсем; кунта У вăйлăрах, мĕншĕн тесен,

---

*) Ç кунта савăшлав сыпăкĕ: аттеçĕм, аннеçĕм.

# Таппитсӑ

| Сӑмах тӗпӗ мӗнле сасӑпа пӗтет. | Пӗрмӗш сӑпат. | | | Иккӗмӗш сӑпат. | | | Виҫҫӗмӗш сӑп. | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | Сӑмах тӗпӗ | Пӗрлӗ хисеп. | Нумайлӑ хисеп. | Сӑмах тӗпӗ. | Пӗрлӗ хисеп. | Нумайлӑ хисеп. | Сӑмах тӗпӗ. | Пкӗ хисепре те |
| 1. Хупӑ сасӑ: сурӑх. | Сурӑх | ӑм | ӑмӑр | Сурӑх | у | ӑр | Сурӑх | ӗ. |
| 2. У, Ӳ: Ҫыру | Ҫырӑв | ӑм | ӑмӑр. | Ҫырӑв | у | ӑр. | Ҫырӑв | ӗ. |
| 3. И: шӑши | Шӑши-й | ӗм | ӗмӗр. | Шӑши-й | ӳ | ӗр. | Шӑши-й | ӗ. |
| 4. А, е: лаша | Лаша | м | мӑр. | Лаш | у | ӑр. | Лаш | и. |
| 5. Ӑ, Ӗ: умӗнђе пӗр хупӑ сасӑ: пулӑ. | Пулл | ӑм | ӑмӑр. | Пулл | у | ӑр. | Пулл | и. |
| 6. Ӑ Ӗ: умӗнђе икӗ хупӑ сасӑ: Хурҫӑ. | Хурҫ | ӑм | ӑмӑр. | Хурҫ | у | ӑр. | Хурҫ | и. |
| Ӗҫхӗл кӗлеткисем | Кай<br>кайат<br>кайр<br>кайатт<br>кайӑтт<br>кайсатт | ӑп<br>ӑп<br>ӑм<br>ӑм<br>ӑм<br>ӑм | ӑпӑр<br>пӑр<br>ӑмӑр<br>ӑмӑр<br>ӑмӑр<br>ӑмӑр. | Кай<br>кайат<br>кайр<br>кайатт<br>кайӑтт<br>кайсатт<br>кайӑ | ӑп<br>ӑп<br>ӑн<br>ӑн<br>ӑн<br>ӑн<br>сӑн | ӑр<br>ӑр<br>ӑр<br>ӑр<br>ӑр<br>ӑр<br>сӑр. | Кай<br>кайӑт<br>кайр<br>кайатђ<br>кайӗ-ђђ<br>кайса-ђђ | ӗ<br>ӗ<br>ӗ<br>ӗ<br>ӗ<br>ӗ |
| Ытти сӑмахсем | Ха<br>кайасс<br>пур с<br>ик-с | м<br>ӑм-<br>—<br>— | мӑр<br>ӑмӑр<br>ӑмӑр<br>ӗмӗр | Х<br>кайасс<br>пур-с<br>ик-с | у<br>у<br>—<br>— | ӑвӑр<br>ӑр<br>ӑр<br>ӗр | хӑ-й<br>кайасс<br>пур<br>Икк | (ӗ)<br>и<br>ӗ<br>ӗшӗ |

вăл кунта иккĕмĕш сăпат сыпăкне тума кирлĕ, тата ун çине пусăм та ўкет. Виççĕмĕш сăпатра А сасăпа Ĕ сасă йунашар пулма: «лашаĕ» пулма пултараççĕ. А вăйлă сасă, Ĕ аплах мар, апĉах вăл сăпат кăтартма кирлĕ. Çавăнпа А сасăпа Ĕ сасă пĕрлешше И сасă—хытă И сасă пулаççĕ *).

Пилĕкмĕш тĕсре икĕ кĕске уçă сасă йунашар тăмалла пулаĭ: пулăм. Кунта йулашки Ă вăйлăрах, мĕншĕн тесен, вăл сыпăка кăтартма кирлĕ. Çавăнпа кунта тухса ўкеенни малтанхи Ă. Тухса ўкнĕ Ă вырăнне ун умĕнĉи хупă сасă вăрăмланаĭ.

Ултăмăш тĕсре сăмах тĕпĕнĉи Ă çухалаĭ, сыпăкри Ă йулаĭ, мĕншĕн тесен, вăл сыпăка кăтартма кирлĕ пирки, лешинĉен вăйлăрах.

**Пăрăнăççем.** Хăш сăмахсем сăпат сыпăкĕсемпе тĕрĕс çыпçăнмаççĕ. Тĕслĕхе „çын, пуртă“ сăмахсене илер. Тĕрĕссипе çыпçăнтарсан, вĕсем, çынăм, çыну, çынĕ, пуртăм, пурту, пурти пулмалла. Ун вырăнне епĕр «çыннăм, çынну, çынни, пурттăм, пуртту, пуртти» тетпĕр: Н сасса, Т сасса вăрăмлататпăр.

Хăш сăмахсенĉе тата виççĕмĕш сăпатра Ĕ сасă та, И сасă та пулаĭ: сăмахĕ—сăмаххи, патакĕ—патакки, тата ыттисем те.

## 60 §. Хисепсем.

Вĕçленекен сăмахсен те, сăнланакан сăмахсен те икĕ хисеп: пĕрреллĕ хисеп, тата нумайлă хисеп. Калаçура мĕнре кирлĕ ĉуне вĕçленекен сăмахсемпе сăнланакан сăмахсем пĕр пĕрипне хисеп йенĉен йалапна пĕрех **) килĕштерсе пыраççĕ теме пулаĭ: кĕнеке вырташ—кĕнекесем выртаççĕ; епĕ çыратăп—епĕр çыратпăр, тата ыттисем те.

Çапла вара вĕçленекен сăмахсен те, сăнланакан сăмахсен те икшер хисеп пур, тата çак икĕ тĕрлĕ улшăнакан сăмахсен хисепĕсем пĕр пĕрипне килĕштереççĕ. Çапах та вĕсен кĕлетки пĕр пек мар.

---

*) Кунта И пулнине урăхла та ăнланма пулаĭ: И сасă Ĕ сасăран авалрах сасă пулмалла. Апла ĉулсан кунта епĕр авалхи сасă йулнине куратпăр.

**) Авалхи халапсенĉе килĕштерменнипе те куратпăр:

Çурăм пуççем килет шуралса.
Шур автансем авăтаĭ йарăнса.
Хĕрлĕ хĕвел тухаĭ хĕрелсе,
Хĕрлĕ ĉаршав карсан та ĉарăнас çук:
Пирĕн тăван кайаĭ уйрăлса,
Ылттăн кĕмĕл парсан та ĉарăнас çук.

Вĕçленекен сăмахсем нумайлă хисеприне кăтартма епĕр сăмах çумне сем хушатпăр: сĕтел—сĕтелсем, упа—упасем, хăй—хăйсем.

Сăпатланакан сăмахсем нумайлă хисеприне кăтартма епĕр сăмах вĕçне *сăн* сыпăкĕсем хушса пыратпăр: кайăп, кайăн, кайĕ, кайăпăр, кайăр. Нумайлă хисепĕн виççĕмĕш сăнĕнҫе кăна нумайлă хисепе кăтартма епĕр хушатпăр кайĕ—кайĕ—ç (кайĕ-çĕ), кайрĕ-ç (кайрĕ-çĕ), кайаť-ҫĕ—кайаť-ҫĕ-ç (кайаť-ҫĕ-çĕ).

Çак Ç (çĕ) кĕскелнĕ *сем* пулмалла. Вăл ака мĕнтен курăнаť: а) Вĕсен иккĕшин пĕлтерĕшĕ те пĕр пек. е) Авалхи ҫăваш ҫĕлхинҫе *сем*-сеп пулнă (40 §) *); Н—тухса ӳкме йуратакан саçă (25 §), тата ҫăваш ҫĕлхинҫе С вырăнне Ç пулма та пултараť **) у) Авал «кайăп (кай епĕ), кайăн (кайес) тенĕ. Кайран *ăп. ăн, пăр, ăр* сăмахсем пĕлтерĕшне маннă та «епĕ кайăп... есĕр кайăр» тийе пуçланă. Тутарсене илсен, вĕсем халĕ те сăнланакан сăмахсем умĕн епĕ, есĕ, вăл, епĕр, есĕр тесе каламаççĕ, каласан та еайра калаççĕ. Çапла пулсассăн ака мĕн тухаť:

| | |
|---|---|
| Кайăп — кай епĕ | кай ăпăр — кай епĕр |
| Кайăн — кай есĕ | кай ăр — кай есир |
| Кайĕ — кай вăл | кай ĕç — кай вĕсем. |

## Ç=сем.

Ӳ) Нумайлă хисепри виççĕмĕш сăпат вăл пур тӳрĕк ҫĕлхинҫе те çавăн пекех: пĕреллĕ хисепри 3-мĕш сăн çумне вĕçленекен сăмах нумай хисеприне пĕлтерекен сыпăк хушăннинҫен пулаť:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ҫăвашла ут | утсем | ил-ĕ | ил- ĕ - ç |
| Тӳрĕкле ат | атлар | ал-ыр | ал-ыр-лар. |

**Хушша калани.** 1. Ытти сăмахсенҫе *сем, çĕ*, Ç сыпăксемпе пĕр пулăвли «кайнă çемĕн, пулнă çемĕн пек кĕлеткесенҫи *çемĕн* пулмалла.

2. *Сем* сыпăк ĕлĕкрех *сен* пулнă (40 §) Хăш вĕçлевлĕхсенҫе вăл халĕ те аплипех йулнă: сурăх-сен-ĕн, сурăх-сен-ҫен, тата ыттисем те. Тутар ҫĕлхинҫе халĕ те *сен* пур. Вăл виçе, хисеп тенине пĕлтерет. Ҫăвашсем *сен* сыпăкĕ те ĕлĕк çавна пĕлтернĕ те-

---

*) Н. И. Ашмарин, Материалы для исследования Чуваш. яз., стр. 150—151. **Примеч. Редак.**

**) Хĕрес—хĕреç, çармăс—çармăç, йăста—йăçта, пасăр—паçăр.

ме пулаҫ. Ҫакӑ тӗрӗс пулсан, утсем тени хаҧхи ҧӗлхепе ут-хисен (пӗрре мар, хисеп тулмалла ҧухлӗ ут) тени пулаҫ.

Сӑмахсем хытакан протсесе (16 §) II вырӑнне М пулнине (40 §) астуса илсен, тата *ҫӗ*, Ҫ ҫинҧен каланине астуса илсен, *сен* сӑмах улшӑнса пынине ҫапла ӳкерме пулаҫ:

сен — сем — сам; сен — сен — ҫӗ-ҫ; сен — сан — сам

## 61 §. Сем сыпӑка хӑҫан калаҫҫӗ.

Нумайӑн йе нумай йапала ҫинҧен калаҫатпӑр пулсан, нумайӑшне пӗлтерме «епӗр, есӗр, мӑр, пӑр, ӑр, сем, сен, ҫ» сӑмахсем. сыпӑксем хушатпӑр. Ҫак сӑмахсене, сыпӑксене епӗр ҧӑвашла калаҫнӑ ҧухне пурне те тӗрӗс калатпӑр, «сем» сыпӑка кӑна питех тӗрӗс каламастпӑр. Ҫавӑнпа епӗр кунта сем сыпӑка хӑҫан каламалли, каламалла марри ҫинҧен кӑна калатпӑр.

1. Нумайӑш ахалех курӑнаҫ пулсан, епӗр йапала йаҧӗ ҫумне *сем* сыпӑк хушмастпӑр. Тӗслӗхсем: ҫарӑ иртсен паттӑр нумай. Санӑн хӑлху витӗр мар. Пасарта паранкӑ сутаҫҫӗ. Епӗр пур те ҧӑваш. Кашкӑрӑн ҫӑварӗ вуниккӗ. Хӗрӗх пӑт паранкӑ вунӑ пӑт тырӑ ҧухлӗ тӑраҫ. Унӑн пуҫани вырӑсра вунпилӗк ҫул пуранна.

2) Нумайӑш ахалех курӑнмасҫ пулсан, нумайӑшне кӑтартма *сем* сыпӑк хушаҫҫӗ: лашасене апат патӑм. Хурсем шыв ҫине анҧӗҫ.

3. Нумайӑш ахалех курӑнаҫ пулсан та, анҧах ҫав вӑхӑтрах йапаласем кашни уйрӑмӑн хытӑ асӑрханаҫҫӗ пулсан, *сем* сыпӑк хушаҫҫӗ; тырӑ аван пулнӑ кӑҫал, тенине илер. Кунта сем ҫук, мӗншӗн тесен, тырӑсене уйӑрмасӑр каланӑ. Халӗ «тырӑсем аван пулнӑ кӑҫал» тенине илер. Кунта *сем* пур. Вӑл вара ырашӗ те, сӗлли те, пӑрҫи те, пур те аван пулнине кӑтартаҫ. Пирӗн патри вӑрмана виҫӗм ҫул вимӗҫҫем касрӗҫ. Сирӗн пата килнисем камсем пулҧӗҫ?—Вӗсем пулӑҫӑсемҧӗ.

4. Пӗр пӗр сӑмах пӗр йапалана анҧах мар, унпа пӗрлисене те, йе тата ун йышшисене ыттисене кӑтартаҫ пулсан, *сем* хушаҫҫӗ: килӗнҧе Йаккӑва ҫухатнӑ, ӑна ашшӗсем купӗпе шыранӑ. Епӗ Ивансем патне кайрӑм. Сӑкманӗсене мӗнӗсене хывса йупа ҫине хӑварҧӗ тет те, хӑй тата хытӑрах килелле тара паҧӗ тет. Пасарта паранккӑсем, купӑстасем, сухансем сутаҫҫӗ.

## II. Сăпатланан сăмахсем.

### Ěçхěлсем.

#### 62 §. Ěçхěлсен тěпě.

Ěçхěлсен тěпě—хушуллă тайăмăн пěреллě хисепри иккěмěш сăпаҫ: çи, çыр, лар, вула. Кусем пуçламăш тěпсем. Çак тěпсенҫенех сыпăклă тěпсем çапла пулма пултараççě: çитер, çырăн, ларт, вулатаркала.

Хушуллă тайăмăн пěреллě хисепри иккěмěш сăпаҫ ěçхěл тěпěрен, ҫăвашла сăмах кěнекисенҫе, крамматтиксенҫе çав иккěмěш сăпата çыраççě. Вырăс ҫěлхине илсен, унта кăтартусăр тайăма çыраççě: есть, писать, сидет, читать.

#### 63 §. Ěçхěлсен пулăвě.

Пулăвě тăрăх, ěçхěлсем тěрлě пулаççě: тěп ěçхěлсем, сыпăклă ěçхěлсем, йěкěр ěçхěлсем. Тěп ěçхěлсен пěрпěр пěрлехи кěлетке çук: лар, кил, кай, çи, тăр, ут, ҫуп, пиç тата ыттисем те.

#### 64 §. Сыпăклă ěçхěлсем.

Сыпăклă ěçхěлсем тěп ěçхěл çумне, йе пěр пěр тěп сăмах çумне çакăн пек сыпăксем хутăшнăран пулаççě.

а) *Ла—ле, ала—еле:* ҫав—ҫавала, ху—хăвала, илт—итле (илтле вырăнне) сул—сулла.

Ла—ле, ала—еле ěçе хытăрах, тěрлě майпа тумаллине пěлтереççě. Кун пек сыпăклă сăмах йышлă мар.

у) *Ла—ле:* пуç—пуçла, пăта—пăтала, тикěт—тикěтле, сăмах—сăмахла, тěвě—тěвěле—тÿле. Аслă—аслăла, ырă—ырăла, пăру—пăрула, пăран—пăранла, тархас—тархасла*) пÿп—пупле (пÿпле).

Анҫах: йурă—йурла, ташă—ташла, вăйă—выҫа, çěвě—çěле.

*Ла—ле* ҫěвěсем çумне те хушăнать: пăй—пăйла, вăш—вăшла, кака—какала, у—ула, (ÿле).

ы) *Кăр—хăр:* кăшкăр, йыхăр, ҫашкăр, çухăр, тăлхăр, çěхěр. Ку ěçхěлсем ҫěвěсенҫен пулнă.

ă) *Артат—ěртет, ăлтат—ěлтет:* шалтăр—шалтăртат, кăлтăр—кăлтăртат, йăлтăр—йăлтăртат, вěлтěр—вěлтěртет, йăш—

---

*) Тархасла сăмах тархасласшăн сăмахпа пěр тěпрен: тархашшăн: турă хакěшěн: а=у (30 §), к=х (31 §) х=ш: тăрăх—тăрăшшě, тăрăхшě вырăнне.

йăшăлтат, йăп—йăпăлтат, хăр—хăрăлтат, ҫик—ҫикĕлтет, пăш—пăшăлтат.

Кун пек ĕҫхĕлсем сасă йе ҫутă хускалнине пĕлтерекен ҫĕвĕсенҫен пулаҫҫĕ.

## 65 §. Таварăнаҫлă ĕҫхĕлсем.

Таварăнаҫлă ĕҫхĕлсем хăш хăш ахаҫ ĕҫхĕлсем, йе йатсем Н, Л, Р сыпăк хушнăран пулаҫҫĕ; сăмах хупă сасăпа пĕтет пулсан Н, Л умĕн Ă, Ĕ сасă пулаҫ; хăш тĕлсенҫе А, Е сасă та пулаҫ.

а) *Н*, *ăн*, *ĕн*: йуса—йусан, мухта—мухтан, туп—тупăн, кур—курăн, тыт—тытăн, пар—парăн, пур—пурăн, сав—савăн, ҫу—ҫăвăн, пӳ—пĕвĕн, паллă йатсенҫен ăшă—ăшăн, сивĕ—сивĕн, йĕпе—йĕпен.

е) *Лан*, *Лен*. Ку сыпăк *ла—ле* сыпăк ҫумне Н сыпăк хушнăран пулнă: пуҫла—пуҫлан, тикĕтле—тикĕтлен, купала—купалан, ҫапкала—ҫапкалан, сăмахла—сăмахлан. Анҫах *лан*, *лен* сыпăкпа пĕтекен хăш сăмахсем халĕ Н сыпăксăр калаҫмаҫҫĕ: ҫиперлен, наҫарлан, шиклен, куклен [куклен кăк, кукка сăмахсемпе пĕр тĕпрен] авлан [Ев тĕрĕк ҫĕлхинҫе ҫурт тени пулаҫ]*) сăмахсем пур; ҫиперле, наҫарла, шикле, кукле, авла сăмахсем ҫук.

*Хушша калани.* Хăш хăш таврăнаҫлă ĕҫхĕлсен тĕпĕ хаҫхи ҫăваш ҫĕлхинҫе ҫук: салан (салтăн сăмахпа пĕр тĕпрен), пăгран, пăлхан, тапран, тăран, аман (амак—ҫир йаҫĕ сăмахĕпе пĕр тĕпрен), тĕпрен (ҫемҫенĕн каланă „тăпра" сăмахран), ван (вак сăмахпа пĕр тĕпрен), вăран (авалхи вăра сăмахран пулмалла), пушан (тут.буша тени „хăтăл, ирĕклĕ пул" тени пулаҫ).

у) *Л*, *ĂЛ*, *ĔЛ*: сар-сарăл, ҫур-ҫурăл, сир-сирĕл, тăс-тăсăл, хуҫ-хуҫăл, тат татăл, ҫĕт-ҫĕтĕл, уҫ-уҫал. Паллă йаҫĕсенҫен: ҫĕрĕ-ҫĕрĕл, ӳсĕр-ӳсĕрĕл, ватă-ватăл.

ы) *Л*, *АЛ*, *ЕЛ*: шурă-шурал, таса-тасал, ҫук-ҫухал, ҫĕнĕ-ҫĕнел, сарă-сарал, хĕрлĕ-хĕрел.

и) *Р*, *АР*, *ЕР*: хуйхă-хуйхăр, кăвак-кăвакар, йешĕл-йешер, ҫывăхар, палăр.

## 66 §. Хире хирĕҫ ĕҫхĕлсем.

а) Хирехирĕҫ ĕҫхĕлсем ытти ĕҫхĕлсенҫен Ш, Ҫ хугăшнăран пулаҫҫĕ; Ш, Ҫ умĕн хупă сасăсем хыҫăн Ă, Ĕ, А, Е сасăсем пулаҫҫĕ: туп-тупăш, кĕле-кĕлеш, пул-пулăш, кала-калаҫ, йатла-йат-

*) Золотницкий, стр. 126. Примеч. Ред.

лаç, çап-çапăç, кĕр-кĕреш, палла-паллаш, сав-савăш, кил-килеш, йура-çураç (35 §), кăшкăр-кăшкăраш, кӳк-кӳлеш—ревновать.

е) Йапала йађĕсенђен хирехирĕç ĕçхĕлсем *лаш, леш* сыпăксем хушăннăран пулаççĕ: тав-тавлаш, сут-сутлаш, пĕр-пĕрлеш, тус-туслаш, хура-хуралаш.

### 67 §. Пулайу ĕçхĕлĕсем.

Пĕрпĕр ĕçе тума пултарнине пĕлтерме, йе вăл ĕç çăмăллине, йе хăйех пулнине пĕлтерме, йе тата хамăрăн вăл ĕçе тăвас килнине кăтартма тĕп, йе сыпăклă ĕçхĕл çумне *ай, ей* сыпăк хушаççĕ: Пултараймастăн, илеймерĕм. Хура вăрман хыçĕнђе хура тилĕ йуртайаҭ. Манăн пĕр вырăтăват тĕнкĕ укçа тупайасђĕ.

*Хушша калани:* Тури ђăвашшем тĕлĕн тĕлĕн пулайу ĕçхĕлсене сахал калаççĕ: *та, ай, ей* вырăнне И теççĕ: калимарăм, илимăп, топимаçҭ.

### 68 §. Аппалану ĕçхĕлĕсем.

Ĕç темиçе хут пулнине, ђас ђас пулнине, тĕрлĕ майлă, йе аран аран пулнине кăтартма ĕçхĕлсем çумне *кала, келе* хушăнаҭ: çап-çап кала, ĕçле-ĕçлекеле, çи-çикеле, вула-вулакала, тавлашкала, çырăнкала.

### 69 §. Хистев ĕçхĕлĕсем.

Ђăваш ђĕлхинђе хистев ĕçхĕлĕсем пур. Вĕсем пĕр пĕр ĕçе тума хушнине, тума ирĕксĕрленине, тума май, ирĕк паннне пĕлтереççĕ. Ун пек ĕçхĕлсем тума епĕр тĕрлĕ ĕçхĕлсем çумне *ар-ер, Т, тар, тер, ттар, ттер* сыпăксем хушатпăр.

а) *Ар, ер.* Хистев ĕçхĕлĕ тума хăшхăш пĕр татăклă ĕçхĕл çумне *ар, ер* хушаççĕ: хыт-хытар, шăт-шăтар, çит-çитер, ӳк-ӳкер, куç-куçар, вил-вилер, пиç-пиçер (53 §).

е) *Т, А, Е* сасăпа пĕтекен хăшхăш тĕп ĕçхĕлсем, йе Р сасăпа пĕтекен хăшхăш ĕçхĕлсем хистеве пĕлтерме Т хушаççĕ: васка-васкат, çӳре-çӳрет, çĕле-çĕлет, хăпар-хăпарт, тар-тарт, кĕр-кӳрт, хăр-хăрт, лар-ларт, хĕр-хĕрт, кăшкăр-кăшкăрт, хуйхă-хуйхăрт, кăвакар-кăвакарт, палăр-палăрт, çывăхар- çывăхарт.

Сыпăклă ĕçхĕлсем Л, йе Н сасăпа пĕтеççĕ пулсан, хистев ĕçхĕлĕнђе Н, Л сасă пĕтет, ун вырăнне Т тухса ларăҭ: ђĕрĕл-ђĕрт, хĕрел-хĕрт, ӳсĕрĕл-ӳсĕрт, йакал-йакат, шурал-шурат, çĕнел-çĕнет, тасал-тасат, салан-салат, вăран-вăрат, аман-амант, ван-ват.

*Хушша калани.* Ватăл, çутăл сăмахсенҫен хистев ĕçхĕлĕсем тĕрĕс пулмаççĕ: ватăт, çутăт вырăнне ватăлтар, çутăлтар теççĕ.

у) *Тар, тер.* Ĕçхĕлсем хупă сасăпа, йе *И*, *У*, *Ӳ* сасăпа, йе *лан*, *лен* сыпăкпа пĕтеççĕ пулсан, *тар*, *тер* хушăнаҫ: çап-çаптар, ҫĕн-ҫĕнтер, çыр-çыртар, ирт-иртер, вырт-выртар, çи-çитер, тӳ-тӳтер, çу-çутар.

*Хушша калани.* Анҫах: мăнтăрлан-мăнтăрлат, тӳрлен-тӳрлет, сăмахлан-сăмахлантар, çилен-çилентер, пăрлан-пăрлантар.

ӳ) *Ттар, ттер* Ку сыпăксем А, Е сасăпа пĕтекен ĕçхĕлсем çумне хушаваççĕ: калаттар, çӳреттер, кĕрлеттер, пуçлаттар, çап-калаттар.

*Ттар, ттер* Сыпăк тата Р сасăпа пĕтекен хистеври ĕçхĕлĕсем хыççăн та пулаҫ: вĕлер-вĕлерттер, туртарттар, ҫĕнтерттер.

ы) *Икĕ хистев сыпăклă ĕçхĕлсем:* вĕлерттер, пулатарттар, ҫĕнтерттер сăмахсем икĕ хистев сыпăклă ĕçхĕлсем пулаççĕ. Ун пек пур ĕçхĕл те пулмасҫ, çапах пур: ларттар, салаттар, иртертер, турттарттар.

и) Хăш ĕçхĕлсенҫен хистев сăмахĕсем кунта каланинҫен пăртак урăхла пулаççĕ. Тĕслĕхсем: вĕрен вĕрент, йĕрке тăрăх вĕрет пулмалла; тăр-тăрат, çывăр-çывăрат, ку икĕ сăмахра ытлашши А кĕрсе ларать. Тип-типĕт—кунта Ĕ сасă кĕрсе ларнă, Ĕм—ĕмĕрт; хăтăл-хăтар, тив-тивтер, тиверт-тиверттер, пиç-пĕçер-пĕçерт-пĕçерттер, тăхăн-тăхăнтарт.

## 70 §. Йĕкĕр ĕçхĕлсем.

Йĕкĕр ĕçхĕлсем икĕ тĕп пĕрлешнĕрен пулаççĕ. Йĕкĕр ĕçхĕлсене хăшне пĕрле çыраççĕ, хăшне уйрăм; пуççап, асту, астив, сăхсăх, кĕлту, хапăл ил, тĕл пул, хирĕç пул, тав ту, ҫӳк ту, кун кур, хĕн кур.

Йĕкĕр ĕçхĕлсенҫен пĕр йышшисем пĕр пĕр ĕçхĕл çумне пулăшу ĕçхĕлĕсем хушшинҫен пулаççĕ: кайса кил, çисе йар, çутса йар. Кун йышши ĕçхĕлсем çинҫен малалла каланă (71 §).

## 71 §. Пулăшу ĕçхĕлĕсем.

Вырăссен „ходить“ тийекен ĕçхĕлне илер. Ку сăмахра „ход“ тымар, И-суффикс, ТЬ-флексия. Çак ĕçхĕл умне тĕрлĕ сăмахушĕсем хушшан, çĕнĕ, урăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пулаççĕ: заходить, входить, уходить, приходить, выходить, сходить, находить тата ыттисем те. Çак сăмахсем пĕлтерекен ăнланусене ҫăвашла тĕрлĕ

тӗплӗ сӑмахсемпе калаҫҫӗ: заходить, входить—кӗр, уходить—кай, приходить—кил, восходить—ҫӗклен, улӑх, находить—туп, сходить—ан, анса кил, кайса кил. Анҫах хӑш ҫухне сӑмах умӗллӗ сӑмахсене ҫӑвашла пӗр сӑмахпа калама ниепле те май килмест, темиҫе сӑмах каласа куҫармалла пулать. Ун пек ҫух пуринҫен ытла тӗп ӗҫхӗле ӗҫ йе хал керунтийӗ туса ун ҫумне пулӑшу ӗҫхӗлӗ хушаҫҫӗ: списать—ҫырса ил, записать—ҫырса хур, наесться—ҫисе тӑран.

Йарса тыт, пӑрахса кай пек ик сӑмахлӑ ӗҫхӗлсем схватить, покинуть пек сӑмахсене анҫах мар, тата вӗсен умӗнҫи йе хыҫӗнҫи ӗҫҫене пӗлтереҫҫӗ. Апла пулсан, пулӑшу ӗҫхӗлӗсем ҫи кирлӗ ӗҫе кӑна пӗлтермеҫҫӗ, тата ун умӗнҫи, йе хыҫӗнҫи ӗҫе те пӗлтереҫҫӗ.

Ҫӑваш ҫӗлхинҫе пуринҫен ытла тӗл пулакан пулӑшу ӗҫ хӗлӗсем ак ҫаксем:

1. *Ан*: Тумтирне кӑмака ҫине ывӑтса йарсанах, кӑмаки ишӗлсе анса ҫӗре путса анҫӗ, тет. Йашка пиҫҫе анҫӗ—похлебка поспела.

2. *Ил*: Манӑн арӑм пайан урай ҫуса илҫӗ. Есӗр ларӑрха, епӗ пӑртак ҫывӑрса илем. Туртса ил, ҫавӑрса ил, астуса ил.

3. *Ӳк*: Вырӑнтан кӑлараҫҫӗ тесен, пӗтӗмпе хӑраса ӳкрӗм. Иҫаслав хӑй те Кейӗве аран тарса ӳкнӗ. Савӑнса ӳк, кайса ӳк.

4. *Йар*: Мӗншӗн мана анне тӗнҫене ҫуратса йанӑшив? Ҫав аҫан амӑшӗ ларнӑ ҫухне: ах! тесе йаҫӗ, тет. Епӗ пайан пилӗк кӗренкке ҫӑкӑр ҫисе йатӑм. Пӗтӗм ҫӗре ҫӗтретсе йараҫҫӗ. Ҫутса йар, авланса йар.

5. *Йул*: Вӑшт! анҫах турӗ, курса та йулаймарӑм. Ӗҫҫе йул, кун пек тутлӑ йапала есӗ урӑх курас ҫук. Вилиҫҫен ҫисе йулас.

6. *Вырт*: Йал ҫумӗнҫе Мускав йатлӑ шыв кукӑркалана кукӑркалана йухса выртнӑ. Епӗ вӑл килессе виҫӗ кун кӗтсе выртрӑм. Шыв икке уйӑрӑлса выртнӑ.

7. *Кай:* Кушак ҫӑва ҫисе кайнӑ. Епӗ мӗскер каланине пӗтӗмпе манса кайрӑм. Шанса кай, вилсе кай, хӑраса кай, типсе кай, савӑнса кай.

8. *Кил*: Сирӗн пурӑнӑҫ пӗтсе килет. Пирӗн асатте ватӑлса килет. Ҫупса кил, кайса кил, ҫулса кил.

9. *Кӑлар*: пӗр кишӗре аран аран туртса кӑлартӑм. Кӑмакана хутса кӑларсан, выртса ҫывӑрҫӗ. Ҫуса кӑлар, вуласа кӑлар (тух).

10. *Лар*: Есӗ пирӗн пата пырса ларкала. Ҫӗлхем пыр тӗпне ҫыпӑҫҫа ларҫӗ. Ҫӗр лайӑх шӑнса ларҫӗ. Питӗрӗнсе лар, питӗрсе ларт, тирсе ларт.

11. *Пар:* Епĕ вĕсене Хусантан килнĕ ҫыруне вуласа патăм. Кĕсре хăмласа паҫĕ. Тупса пар, леҫҫе пар, ҫырса пар.

12. *Пыр:* Вăхăҫĕ те ытла ҫас иртсе пынăĕҫке. Ҫуллен ҫул мĕн пулнине йĕркипе ҫырса пынă. Тарса пыр, ҫисе пыр.

13. *Пăрах:* Ҫынна ним айăп ҫук ҫĕртенех силленсе пăрахма юрамасть. Есĕр темĕн те туса пăрахăр. Хăратса пăрах, ҫăварна карса пăрах.

14. *Пăх:* Тете Мускавран килнĕ ҫырăва вуласа пăхрĕ те, каласа паҫĕ. Вăл: епĕ пăртак шухăшласа пăхамха, терĕ. Епĕ Хусанта пурăнса та пăхрăм. Ҫулса пăх, кайса пăх, туса пăх.

15. *Пĕт:* Хăнисем пăртак ларсассăн саланса пĕтнĕ. Темĕн те пĕр каласа пĕтерҫе. Ҫупса пĕт, кайса пĕт, ҫырса пĕтер, хăратса пĕтер.

16. *Ҫит:* Лешĕ пĕтĕмпех силенсе ҫитрĕ, тет ун ҫине. Вăл мана мăшкăласа пĕтĕмпех силентерсе ҫитерҫĕ те, епĕ йĕрессех ҫитрĕм. Хăваласа ҫит, вĕренсе ҫит, илсе ситер.

17. *Ҫӳрс:* Мĕн хыпса ҫӳретĕтĕн кунта? Тухсан та, кĕрсен те, алăка хупса ҫӳре. Ăҫта кирлĕ унта выртса ҫӳрет. Вĕҫҫе ҫӳре, пуҫтарса ҫӳре.

18. *Тăр:* Вăл ана ҫуллен хĕрĕх пин тенке парса тăма пулнă. Тавара епĕр урăх ҫĕртен илсе тăрăпăр. Сиксе тăр, ҫĕрĕлсе тăр, йăлтăртатса тар.

19. *Тăран:* Ҫисе тăрапсан, упи сывăрса кайрĕ тет. Пайан сывăрса тăрантăна? Мăшкăласа тăран.

20. *Хур:* Ҫил тухиҫҫен апса хурас пулать. Ҫырса хур, йанталаса хур.

Ĕҫ темиҫе хут пулнине кăтартма хал керунтине иккĕлетеҫҫĕ: Вĕҫен кайăксем ҫырман пĕр хĕрринҫен тепĕр хĕррине вĕҫе вĕҫе ӳкнĕ.

Сисмен хутра пулакан ĕҫе кăтартна ҫух, хал керунтине иккелетмеҫҫĕ: йара пар! Ан кайа пар!—и не думай ехать! Вăл ҫаран ҫине кĕре ан хур: пĕтрĕн вара—не вздумай пойти на эти луга: погибнешь.

Пулăшу ĕҫхĕлĕ хăш ҫух тĕп ĕҫхĕл кӳлепийĕ пекех пулать: Савăннипе пĕртте туймаҫ, хĕвел каҫалана кайнă тăнă. Шăнкăрҫа илет те, перет ҫикет кăсйине.

Лапҫăк мунҫа тăррине
Тапрĕ тухрĕ вĕлтĕрен;
Пирĕн йысва пулассине
Тапрĕ тухрĕ мăн сухал.

## Кăтартулă тайăм.

### 72 §. Хаҫхи вăхăт.

*Пĕрреллĕ хисеп.*

1. Лар-а-т-ăп — вул-а-т-ăп
2. Лар-а-т-ăн — вул-а-т-ăн
3. Лар-а-ҫ — вул-а-ҫ.

*Нумайлă хисеп.*

1. Лар-а-т-пăр — вул-а-т-пăр
2. Лар-а-т-ăр — вул-а-т-ăр
3. Лар-а-ç-ç-ĕ — вул-а-ç-ç-ĕ.

*Хушша калани:* Уҫа сасăсен килĕшĕвĕ тăрăх, ҫемҫе сăмахсенҫе А сыпăк вырăнне Е; *ăп, ăн, пăр, ăр* вырăнне *ĕп, ĕн, пĕр, ĕр* пулаҫ. Ҫавăнпа епĕр хăш ҫух тĕслĕхсем хыттипе ҫемҫеннине кăтартмастпăр, вĕсенҫен хăшне те пулин пĕрне илетпĕр. Тепĕрне ахалех астуса тăратпăр.

1. Хаҫхи вăхăт тума малтан сăмах тĕпĕ ҫумне А хушăнаҫ, хал керунтийĕ пулаҫ. Сăмах тĕпĕ А, йе Е сасăпа пĕтет пулсан, ҫав А йе Е саса тухса ӳкет. (24 §).

2. Т—хаҫхи вăхăта пĕлтерекен сыпăк. Вăл *тăр* сăмахран кĕскелсе йулнăскер *). Нумайлă хисепре 3-ш сăнра Т сасă Ç сасă пулаҫ.

3. *Ăп-епĕ, ăн-есĕ, ĕ-вăл* тени кун ҫинҫен 58 §-ра каланă. Пĕреллĕ несепре 3-ш сăпатра „ларатĕ, вулатĕ" кирлĕ мĕн, анҫах хăш калаҫура Ĕ саса тухса ӳкет, ҫапах пĕтĕмпех ҫухалмасҫ, хăй умĕнҫи Т сасса ҫĕмҫетсе хăвараҫ (16 §). Хăш калаҫура тата *калат* вырăнне *калат* теҫҫĕ.

4. Нумайлă хисепре 2-ш сăпатри *ăр* вырăнне тутарсен *сăзесĕр*. *Ăр, ăвăл* сăмахран та кĕскелсе пулма пултараҫ. Апла пулсан, ĕлĕк ларатăр, вулатăр вырăнне ларатăвăр, вулатăвăр пулнă тесе шухăшлама пулаҫ. Ҫапла вара хаҫхи ҫĕлхепе каласан, лара-

*) Тăр сăмах авалхи ҫăваш ҫĕлхинҫе „пур" (существует) тенине пĕлтернĕ. Вăл палатăрап, куратăран сăмахсенҫен лайăх курăнаҫ, хăш сăвăсенҫе те палăраҫ.

Ти-ти, купăсăм,
Купăсăм пуҫне пĕкнĕ тĕр,
Пире хĕрсем кĕтнĕ тĕр,
Кĕтнĕ ҫĕре ҫитмен тĕр,
Питне хупса йĕнĕ тĕр.

тăп тени «лара тăр епĕ» тени пулаť, лараççĕ тени „лара+тăр+вăл хисеп“ хисеп тени пулаť, тата ыттисем те.

5. Нумайлă хисепри 3-мĕш сăнри иккĕмĕш Ç нумайлă хисепе пĕлтерекен сыпăк. Вăл кĕскелнĕ *сем* (60§).

6. Кунта кўнĕ тĕслĕхсем тулли кулепеллисем. Вĕсене нумайĕшĕ хăш ђух кĕскетсе „ларап, ларан, лараç“ теççĕ.

7. Тури калаçура нумай тĕлте „кайатпăр, вулатпăр“ выранне кайаппăр, вулаппăр, теççĕ; кайатăр, вулатăр выранне „кайаттăр, волаттăр“ теççĕ: Т сасса иккĕлетеççĕ.

### 73 §. Хаљхи вăхăтăн çуклăх кĕлетки.

1. Вула-мас-т-ăп вула-мас-т-пăр
2. Вула-мас-т-ăн вула-мас-т-ăр
3. Вула-мас-ť вула-мас-ç-ĕ

1. Çуклăх кĕлетки пулма сăмах тĕпĕпе хаљхи вăхăт сыпăкĕ хушшине *мас* кўртсе лартаççĕ. *Мас=мар* (33§).

2. Нумайлă хисепре 3-ш сăпатрэ, сăмах пулăвĕ тăрăх, „вула-мас-т-ç-ĕ“ кирлĕ мĕн. Анђах хупă сасăсем йунашар нумайăн тăма йуратманран, Т сасă тухса ўкет, С сасă, Ç сасăпа йунашар тăнăрап, Ç сасса тухаť.

3. Пĕреллĕ хисепри 3-ш сăпат вĕçне тĕрлĕ калаçура тата урăхла та калаççĕ: вуламасť, вуламаст, вуламас теççĕ.

### 74 §. Пулас вăхăт.

*Пĕреллĕ хисеп.*

1. Лар-ăп вул-ăп
2. Лар-ан вул-ăн
3. Лар-ĕç вул-ĕ.

*Нумайлă хисеп.*

1. Лар-ăпăр вул-ăпăр
2. Лар-ăр вул-ăр
3. Лар-ĕç вул-ĕç

1. Пулас вăхăт тума сăмах тĕпĕ çумне сăпата пĕлтерекен сыпăксене, тата нумайлă хисепре 3 сăпатра Ç хушмалла. Сăмах тĕпĕ А, Е сасăпа пĕтет пулсан, çав А, Е сасă тухса ўкет: вула+ăп, çўре+ĕп выранне вулăп, çўрĕп теççĕ.

2. Çуклăх кĕлетки тума сăмах тĕпĕпе сăн сыпăкĕсем хушшине М кўртсе лартаççĕ:

1. Лар-м-ăп лар-м-ăпăр
2. Лар-м-ăн лар-м-ăр
3. Лар-м-ĕ лар-м-ĕ-ç.

Кунтаʼсăмах тĕпĕ вĕçĕнҫе А Е саса тухса ӳкмест: вула-м-ăп, çӳре-м-ĕп.

## 75 §. Халҫхи вăхăтпа пулас вăхăта хăçан калаççĕ.

Ҫăваш ҫĕлхинҫе, хăçан калани йенҫен пăхсан, халҫхи вăхăтпа пулас вăхăт хушши пысăк мар. Халҫхи вăхăта пуринҫен ытла акă хăçан калаççĕ:

а) Калакан ĕç халĕ, калана ҫух, пулаť пулсан: айха килет, ыран сар. Вал каллех укçа ыйтма килет. Мĕя таватăн унпа, тилĕ туç?

е) Калакан ĕç халĕ пулмасť пулсан та, анҫах вал калаканнине халҫ пулакан пек куранаť пулсан: çеçен хирте туман урапа кусаť. Каҫака таки тухаť тет те, сурăх таки тĕл пулаť, тет. Кайаççĕ тет кĕсем иккĕшĕ пĕрле.

у) Йалан, пĕр май пулакан ĕç çинҫен калана ҫух: çумăр çула сăваť. Ĕçлекен выçă вилмест. Йалан ăспа çӳресен, йалти ватă йатламасť.

ӳ) Пулас ĕç пуласси çинҫен иккĕленӳ çук пулсан, пулатех пек туйăнаť пулсан: епĕ ыран хулана кайатăп. Епĕ кунта пурăнмастăп, таратăп. Апла пулсан, тепĕр уйăхран пурте вилетпĕр, пуранайас çук. Микулай, ĕçетпĕри мĕн?—Ĕçетпĕр ĕнтĕ. Сăмавар ҫас вĕрети?

Çапла вара ҫаваш ҫĕлхинҫе халҫхи вăхăт кĕлеткине халĕ пулакан ĕççем çинҫен калана ҫух анҫах мар, пулас ĕççем çинҫен калана ҫух та калаççĕ. Сайрарах тата, йумахсенҫе мĕнсенҫе, иртнĕ ĕççем çинҫен те калаççĕ.

Пулас вăхăт кӳлепине пулас ĕç пуласçине пĕтĕмпех ĕненмен ҫух, иккĕленӳллĕ ҫух, пулĕши тесе шухăшлана ҫух калаççĕ: кирлĕ пулсан, хамах сырса парăп. Телей пулсан, сывах çавăрăнса килĕпха. Кайасси кайăн та, укçу çитейместĕçкеха. Ухмах тем те калĕ. Кĕнеке вулăр, вуласан та тем те пĕлĕр. Кăшт та парайманши вара?

## 76 §. Иртнĕ ĕç вăхăҫĕ.

*Пĕрелле хисеп.*

1. Вула—р—ăм пиç—р—ĕм лар—т—ăм
2. Вула—р—ăн пиç—р—ĕн лар—т—ăн
3. Вула—р—ĕ пиç—р—ĕ лар—ҫ—ĕ.

*Нумайлă хисеп.*

| | | |
|---|---|---|
| 1. Вула—р—ăмăр | пиç—р—ӗмӗр | лар—т—ăмар |
| 2. Вула—р—ăр | пиç—р—ӗр | лар—т—ăр |
| 3. Вула—р—ӗç | пиç—р—ӗ—ç | лар—ҫ—ӗ—ç. |

1. Иртнӗ ӗç вăхăтне пĕлтерекен сыпăк Р. Вăл сăмах тĕпĕпе сăпат сыпăкĕсем хушшине кĕрсе ларать. Н, Л, Р саса хыççăн Р вырăнне Т пулать. Виççĕмĕш сăпатра вăл ҫ сасса тухать.

2. Çуклăх кулепинҫе сăмах тĕпĕ хыççан *ма*, *ме* кĕрсе ларать.

| | |
|---|---|
| 1. Вула—ма—р—ăм | вула—ма—р—ăмăр |
| 2. Вула—ма—р—ăн | вула—ма—р—ăр |
| 3. Вула—ма—р—ӗ | вула—ма—р—ӗ—ç. |

3. Лар—т—ăм, кан—ҫ—ӗ, кил—т—ӗмӗр. Кунта Р вырăнне Т. Халĕ çуклăх кĕлеткине *ма*, *ме* сыпăксем кӳртсе лартăр. Вара: кур—ма—рăм, кан—ма—рĕ, кил—ме—р—ӗмӗр пулать: Т вырăнне Р хăй тухса ларать. Мĕншĕн вăл? Мĕншĕн тесен халĕ иртнĕ ӗç вăхăт сыпăкĕ Н, Л, Р хыççăн мар, Е, Ё хыççăн. Тата тепӗр тĕслĕх илер. Лар—т—ăм сăмахра иртнĕ ӗç вăхăҫин сыпăкĕ Т; лар—кала—р—ăм тесенех, Т вырăнне Р тухса ларать, мĕншĕн тесен кунта та иртнĕ ӗç вăхăт сыпăкĕ Р саса хыççăн мар, А саса хыççăн.

4. Тури калаçура «вуларăм, вуларăн..., пиçрĕм, пиçрĕн...» тес вырăнне хăш ҫухне пур сăпатра та, пур хисепре те «вуласа, пиççе» тессĕ.

### 77 §. Иртнĕ хал вăхăҫĕ.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Епĕ | лар—нă | вула—нă | ил—нĕ. |
| Есĕ | „ | „ | „ |
| Вăл | „ | „ | „ |
| Епĕр | „ | „ | „ |
| Есĕр | „ | „ | „ |
| Вĕсем. | „ | „ | „ |

Çуклăх кĕлетки тума *ма*, *ме* хушăнать:

лар—ма—н
вула—ма—н
ил—ме—н.

Кунта Ă, Ĕ саса çухалать (120 §. н). Çапла вара иртнĕ хал вăхăҫин сыпăк Н (Ă) пулать.

### 78 §. Иртнĕ ĕçпе иртнĕ хал вăхăтне хăçан калаççĕ.

Калаканни пĕр пĕр ĕçе хăй курнă пулсан, тата ăна вăл ĕç халĕ те куç умĕнҫи пекех туйăнаҭ пулсан, йе тепĕр çын курнă ĕç те ăна хăй умĕнҫи пек кĕретĕнех курăнаҭ пулсан, иртнĕ ĕç вăхăҫĕ калаççĕ. Ĕнер çумăр çурĕ—ĕнер çумăр çунă. Епĕ пĕр сăмавар ҫей ĕççе йатăм—епĕ пĕр сăмавар ҫей ĕççе йанă. Ваççили Шуйскийе патшаран 1610-мĕш çулта кăларнă. Иккĕмĕш Микулайа 1917-ш çулта кăларҫĕç. Вилнĕ вĕт аҫамăр. Аҫам, аҫам, усал çынсемех вĕлерҫĕç вĕт сана... Сашука тăлăха хăвартăн.

Иртнĕ хал вахăтне пуринҫен ытла историре—авал пулнă йапаласем, ĕççем çинҫен пупленĕ ҫух калаççĕ: темиçе пин çул ĕлĕк пурăнас хаҫхи пек пулман. Кĕрексен Сократ йатлă филоссăф пулнă, вăл ҫăнлăх, ăслăлăх çинҫен калаçма йуратнă. Хусана 1552-ш çулта илнĕ.

---

*Ашакпа лаша.*

Пĕр çыннăн ашакпа лаша пулнă. Пĕрре вĕсем çулпа пынă. Ашакĕ лашине каланă: мана пит йăвăр, епĕ пурне те туртса çитерес çук, кăшт та пулин ман çийĕмрен илха, тенĕ. Лаши итлемен. Хай ашак йăвăра тӳсеймесĕр ӳкет те, вилет. Вара хуçи ашак çинҫи йапаласене пурне те лаша çине купаланă; ашак тирне те ун çинех хунă. Лаши вара ӳкĕнсе каларĕ тет: ех, хуйхă мана мĕскĕне! Епĕ пăртак та пулăшасшăн пулмарăм, акă халĕ пурне те хам туртса пыратăп, çитменнине тирне те хам çийех хуҫĕç терĕ, тет.

### 79 §. Тахçан иртнĕ вăхăт.

*Пĕреллĕ хисеп.*

1. Лар—а—т—т—ăм вула—т—т—ăм
2. Лар—а—т—т—ăн вул—а—т—т—ăн
3. Лар—а—ҭ—ҫĕ вул—а—ҭ—ҫĕ.

*Нумайлă хисеп.*

1. Лар—а—т—т—ăмăр вула—т—т—ăмăр
2. Лар—а—т—т—ăр вул—а—т—т—ăр
3. Лар—а—ҭ—ҫ—ĕç вул—а—ҭ—ҫ—ĕç.

1. Ку вăхăт хаҫхи вăхăт çумне тĕпсĕр ĕçхĕл *тъĕ* хушнăран пулаҭ. Ҫăнахах вăл çапла иккенĕ виççĕмĕш сăнран аван курăнаҭ:

лараҭ—лараҭ—ҫĕ—лараҭ—ҫĕç

вулаҭ—вулаҭ—ҫĕ—вулаҭ—ҫĕç.

Ытти сăнсенҫе Ҫ вырăнне Т (иккĕмĕш Т; пĕрмĕш Т—хаҫхи вăхата пĕлтерекен сыпăк). Тата кунта пĕрмĕш сăнсенҫе *ăн, ăнăр* вырăнне *ăм, ăмăр* куратпăр (39 §).

2. Тури каласура хăш вырăнсенҫе ку вăхăта ак ҫапла калассĕ.

1. Епĕ калатăп—ҫĕ
2. Есĕ калатăн—ҫҫĕ
3. Вăл калать—ҫĕ
1. Епĕр калатпăр—ҫҫĕ
2. Есĕр калаттăр—ҫҫĕ
3. Вăлсам калать—ҫĕҫ.

Кув ăхăт хаҫхи вăхăтран пулни кунта тата лайăхрах палăрать.

3. Хаҫхи вăхăтри пекех, ҫуклăх кӳлепе тума *мас, мес* хушăнать. Вара ҫуклăх кӳлепе ак ҫапла

| пулма тивет: | пулать: |
|---|---|
| 1. Лар—мас—т—т—ăм | лар—мас—т—ăм |
| 2. Лар—мас—т—т—ăн | лар—мас—т—ăн |
| 3. Лар—мас—т—ҫ—ĕ | лар—мас—т—ҫĕ |
| 1. Лар—мас—т—т—ăмăр | лар—мас—т—ăмăр |
| 2. Лар—мас—т—т—ăр | лар—мас—т—ăр |
| 3. Лар—мас—т—ҫ—ĕ—ҫ | лар—мас—ҫ—ĕ—ҫ |

Каласакан ҫĕлхере 1-мĕшпе 2-мĕш сăпатра икĕ Т сасăран пĕри тухса ӳкет.

---

Ку иртнĕ вăхăт ĕҫ темиҫе хут пулнине, йе нумайҫҫен пулса пынине кăтартать; йе пĕр пĕр тума пуҫланă ĕҫĕн тепер ĕҫ пулнине ҫаранмалла пулнине кăтартать. Килĕшӳллĕ калавсенҫе ку вăхăт халхи вăхăт вырăнне те пулать.

Пирĕн тимĕркăвак лаша пурҫҫĕ: вăл ҫынна та, выҫăха та пертте сыртмасҫҫĕ, хăй урхамах пек илемлĕ ҫӳреҫҫĕ, угасса уҫа утаҫҫĕ, сухара тӳрĕ пыраҫҫĕ; ҫавăнпа епĕр ăна сухара йалан малтан йараттăмăр. Пĕрре епĕр кĕркунне авăн аштараттăмăр. Епĕр Атăл айĕнҫе ĕҫлеттĕмĕр те, кăларса йаҫĕҫ. Лайăх пурăнатăри?— Пурăнаттăмăрха.

## 80 §. Малтан иртнĕ ĕҫ вăхăҫĕ.

*Пĕрелле хисеп.*

| | |
|---|---|
| 1. Лар—са—тт—ăм | вула—са—тт—ăм |
| 2. Лар—са—тт—ăн | вула—са—тт—ăн |
| 3. Лар—са—ҫҫ—ĕ | вула—са—ҫҫ—ĕ. |

*Нумайлă хисеп.*

1. Лар—са—тт—ămăр  вула—са—тт—ăмар
2. Лар—са—тт—ăр  вула—са—тт—ăр
3. Лар—са—ђђ—ĕ—ç  вула—са—ђђ—ĕ—ç.

1. Ку вăхăт тури ђăвашшем калакан иртнĕ ĕç вăхађĕ çумне *тђĕ* хушнăран пулнă (76 §, 4) Йанăра сасăсем хыççăн тĕпсĕр ĕç-хĕлти Ђ сасă вăрăмланаť (22 §). Çавăнпа кунти ђ (т) сасă та вăрăмланаť.

2. Çуклăх кĕлетки тума, иртнĕ ĕç вăхатĕнђи пек, ĕçхĕл тĕпĕ хыççăн *ма, ме* хушмалла:

1. Лар—ма—са—тт—ăм
2. Лар—ма—са—тт—ăн
3. Лар—ма—са—ђђ—ĕ

тата ыттисем те.

*Хушша калани.* Малтан иртнĕ ĕç вăхăђин çуклах кĕлеткине калакан пит сахал. Çавăнпа ăна çухалакан кĕлетке тесе шухăшлама пулаť.

### 81 §. Малтан иртнĕ хал вăхăђĕ.

| | | |
|---|---|---|
| 1. Епĕ<br>2. Есĕ<br>3. Вăл | ларнă—ђђĕ | лар—ма—н—ђђĕ. |
| 1. Епĕр<br>2. Есĕр<br>3. Вĕсем | вула—нă—ђђĕ | вула—ма—н—ђђĕ. |

Ку вăхăт иртнĕ хал вăхăтĕнђен *тђĕ* хушшан пулаť.

---

## Тытăнђăклă тайăм.

### 82 §. Пĕрмĕш тытăнђăклă тайăм.

*Пĕреллĕ хисеп.*

1. Лар—ă—тт—ăм  вул—ă—тт—ăм
2. Лар—ă—тт—ăн  вул—ă—тт—ăн
3. Лар—ĕ—ђђ—ĕ  вул—ĕ—ђђ—ĕ

*Нумайлă хисеп.*

1. Лар—ă—тт—ăмăр  вул—ă—тт—ăмăр
2. Лар—ă—тт—ăр  вул—ă—тт—ăр
3. Лар—ĕ—ђђ—ĕç  вул—ĕ—ђђ—ĕ—ç

1. Ку вăхăт пулас вăхăт ҫумне *тъĕ* хушнăран пулнă.

2. Пĕрмĕшпе иккĕмĕш сăнра *ă* саса пур. Вăл пĕр пĕр авалхи кĕлеткерен йулнă пулмалла.

3. Ҫуклăх кĕлетки тума сăмах тĕпĕ хыҫҫăн *м* кўртсе лартмалла: лар—м—ă—тт—ăм, лар—м—ĕ—ђђ—ĕ.

**83 §.** Ҫапла вара *тъĕ* сыпăк хушăннăран тăвата теп вăхăтран тата 3 вăхăт та пĕр тытăнђăклă тайăм пулаť.*

Ҫак сакăр кĕлаткене астуса илме ҫăмăлтарах пултер тесе, ак ҫапла карта тума пулаť.

| | |
|---|---|
| *Хађхи вăхăт*<br>Лараť | *Тахҫан иртнĕ вăхăт.*<br>Ларађ—ђĕ |
| *Иртнĕ ĕҫ вăхăтъĕ*<br>Ларса (ларђĕ) | *Малтан иртнĕ ĕҫ вăхатъĕ*<br>Ларса—ђђĕ |
| *Иртнĕ хал вăхăтъĕ*<br>Ларнă | *Малтан иртнĕ хал вăхăтъĕ*<br>Ларнă—ђђĕ |
| *Пулас вăхăт*<br>Пулĕ | *Пĕрм. тыт. тайăм*<br>Пулĕ—ђђĕ |

Кунта кўнĕ кĕлеткесем виҫҫĕмĕш сăпат сыпăкĕсем. Ытти сăпатсене астуса илме виҫҫĕмĕш сăпатран тытăнсан ҫăмăлтарах.

**84 § Иккĕмĕш тытăнђăклă тайăм.**

| | | |
|---|---|---|
| 1. Епĕ | | пулăттăм |
| 2. Есĕ | ларнă | пулăттăн |
| 3. Вăл | вуланă | пулĕ—ђђе |
| 1. Епĕр | илнĕ | пулăтăмăр |
| 2. Есĕр | | пулăттăр |
| 3. Вĕсем | | пулĕ—ђђĕҫ |

1. „Пул“ ĕҫхĕле—пулăшар ĕҫхĕл тĕҫҫĕ. Вăл ахаљ ĕҫхĕлсем пекех тĕрĕс сăнланаť; хăй ирĕклĕ ĕҫхĕл те пулма пултараť: каҫ пулђĕ, пулнă пулăттăм.

2. Ку тайăм сăмахăн иртнĕ хал кĕлеткинђен, тата пулăшан тытăнђăклă тайăмĕнђен пулаť.

* Тен ку тайăма пĕр пĕр вăхăт тесе йат панă пулсан, кĕлеткелĕх йенђен тĕрĕсрех пулнă пулĕђђĕ. Анђах унăн пĕлтерĕшĕ ытти ђĕлхесенђи тытăнђăклă тайăм пĕлтерĕтĕпе пĕр. Ҫавăнпа ăна ђăваш ђĕлхинђе тăнђăклă тайăм тенĕ.

### 85 §. Килӗшӳ тайӑмӗ.

*Пӗреллӗ хисеп.*

1. Вулӑп—ин (—ҫҫӗ) ларӑп—ин (—ҫҫӗ)
2. Вулӑ—сӑн (—ҫҫӗ) ларӑ —сӑн (—ҫҫӗ)
3. Вул — ин (—ҫҫӗ) лар —ин (—ҫҫӗ).

*Нумайлӑ хисеп.*

1. Вулӑпӑр-ин(-ҫҫӗ) ларӑпӑр-ин(-ҫҫӗ).
2. { Вулӑсӑр(-ҫҫӗ) ларӑ-сӑр (-ҫҫӗ).
   Вулӑсӑр-ин(-ҫҫӗ) ларӑ-сӑр-ин(-ҫҫӗ)
3. Вулӗҫ-ин(-ҫҫӗ ларӗҫ-ин-(ҫҫӗ).

1. Килӗшӳ тайӑмӗ пулас вӑхат ҫумне *ин* хушӑнпӑран пулаҫ; иккӗмӗш сӑпатра пӗреллӗ тутарла *син*, кӑркӑсла *сен*, ҫӑвашла *есӗ* (сан) сӑмахпа пӗр. (58 §) Нумайлӑ хисепри иккӗмӗш сӑпатра *сӑр* (сӑррин); *сӑр ҫӗр* тутарла *сӗз сӗз* ҫӑвашла *есӗр*, *сӗр* сӑмахпа пӗр (58 §).

2. Мӗн те пулин йе тутарас килнине кӑтартма килӗшӳ тайӑмӗ ҫумне ҫ хушаҫҫӗ. Вара *ӗмӗт тайӑмӗ* пулаҫ.

Авалхи ҫӑваш ҫелхинҫе килӗшӳ тайӑмӗнҫе ытти вӑхӑтсем пулни те курӑнаҫ. Тӗслӗхсем: вулатсӑр, пыратсӑн.

Кӳлетсӗн кӳл утна.
Аслӑ ҫул тусанне кӑларма.

* *
*

Каҫ тиврин каҫ тухтӑр,
Ир тиврин ир тухтӑр.

4. Килӗшӳ тайӑмӗ йӗкӗр пулма пултараҫ: вулатӑр пулин, кайна вулӑсӑн, тупрӗ пулин.

5. Нумай каласура „пулин, пулӑсӑн“ вырӑнне „пулсан, пулас-ҫӗ“ теҫҫӗ.

6. Ҫуклӑх кӳлепи тума, пулас вӑхӑтри пекех, М хушӑнаҫ, тӗп вӗҫӗнҫи А, Е ҫухалмаҫ:

1. Вула-м-ӑп-ин вула-м-ӑпӑр-ин.
2. Вула-м-ӑ-сӑн вула-м-ӑ-сӑр.
3. Вула-м-ин вула-м-ӗ-ҫ-ин.

Ваҫук та унтах лараҫ, тет. Ларин, кайӑпин, санӑн мӗн ӗҫ пур. Анук каҫҫа кайнӑ, теҫҫӗ.

— Кайни тата, кайтӑр, хӗрсӗрех йулмӑпӑр. Шӑтӑк шӑтӑк шӑналӑк, шӑна кӗмин лайӑхҫӗ.

Хура вăрмантан тухнă ҫухне,
Ҫуна тупанĕ ахах пулинҫҫĕ;
Ҫак тăвансем умĕнҫе йурламашкал
Ҫĕлхе вĕҫĕ хурҫă пулинҫҫĕ.

### 86 §. Хушулă тайăм.

*Пĕреллĕ хисеп.*

| | |
|---|---|
| 1. Лар-а-м, ан ларам, ларам мар | вула-м, ан вулам, вулам мар. |
| 2. Лар, ан лар | вула, ан вула. |
| 3. Лар-тăр, ан лартăр | вула-тăр, ан вулатăр. |

### Нумайлă хисеп.

| | |
|---|---|
| 1. Лар-ар, ан ларар, ларар мар | вул-ар, ан вулар, вулар мар. |
| 2. Лар-ăр | вул-ăр. |
| 3. Лар-ҫăр | вула-ҫăр. |

Пĕрмĕш сăпат тума тĕп ҫумне *ам*, *ар* хушăнаҫ; иккĕмĕш сăн тума *ăр*; виҫҫĕмеш сăпат тума *тăр*, *ҫăр* хушăнаҫ. Уҫă сасăсем тата йанăра хупă сасăсем хыҫҫăн *ҫăр* сыпăкри Ҫ вăрăмланаҫ.

*Ам* сыпăк икĕ сыпăкран—А, тата М (ман) сыпăкран пулнă пулĕ тесе шухăшлама пулаҫ. *Ар* ҫинҫен вăл А, тата Р (кĕскелнĕ *мăр ăмăр*) сыпăкран пулнă пулĕ тесе шухăшлама пулаҫ. *Ăр* кĕскелнĕ *ăвăр* пулмалла. Пĕреллĕ хисепри виҫҫĕмĕш сăпатри *ҫăр* хаҫхи вăхăтри Т (тăр) сыпăкпа (73 §, 2) пĕр марши? Нумайлă хисепри *ҫăр* ҫемҫелвĕ *тăр* сыпăках, анҫах Т мĕншĕн ҫемҫелсе вăрăмланнине ăнлама йăвăр. Нумайлă хисепре виҫҫĕмĕш сăпатра пур сăпатланакан тайăмра та нумайлă вăхăт сыпăкĕ Ҫ хушăнаҫ. Вăл кунта та кирлĕ пек. Апла пулсан „кайҫҫăр, илҫҫĕр, пĕлҫҫĕр“ пек сăмахсем „кайҫтăр, илҫтĕр, пĕлҫтĕр“ пек сăмахсенҫен пулманни? тесе шухăшлама пулаҫ.

---

Ан тив пулҫҫăр, кайран хăйсен йăнăшне хăйсемех сисеҫ. Тăрсам, ҫитĕ ĕнтĕ тарăхтарса выртту! Аккам, ĕне пăрулама выртнă, кĕвелĕк парса йарҫҫĕ мана! Мана ҫĕр каҫма хăваттире йарсамăрҫĕ. Епĕ тухта тар, вăл ман хыҫҫăн. Ан ҫар, вулаҫҫăри!.

## 87 §. Тыту тайăмĕ.

*Хаҫхи вăхăт.*

1. Вулатăп
2. Вулатăн } пулсан
3. Вулать

*Иртнĕ ĕç вăхăтĕ.*

1. Вуларăм
2. Вуларăн } пулсан
3. Вуларĕ

*Иртнĕ хал вăхăтĕ.*

Епĕ
Есĕ } вуланă пулсан
Вăл

Тыту тайăмĕ тума кăтартуллă тайăмри ĕçхĕлсем çумне пулăшу ĕçхĕлин—пул сăмахăн тыту керунтине хушмалла.

Хăшĕ *пулсан* вырăнне *пулин* калаççĕ.

| Кӳлепе йаҫĕсем | | Çуклăх сыпăкĕсем | Вăхăт йе тайăм сыпăкĕсем | Сăпат сыпăкĕсем |
|---|---|---|---|---|
| Хаҫхи вăхăт | Ĕçхĕл тĕпĕ | мас | (а)-т | *Пĕреллĕ хисеп* |
| Пулас вăхăт | | м | „—“ | 1. ăп, ăм, а—м |
| Иртнĕ ĕç вăх. | | ма | р/т | |
| Иртнĕ хал вăх. | | ма | н (ă) | 2. ăн, сăн, „—“ |
| Килешӳ тайăмĕ | | м | ин | 3. ĕ, тăр |
| Хушу тайăмĕ | | ан, мăр | „—“ | *Нумайлă хисеп* |
| Тахçан иртнĕ вăхăт | | мас | (а)-т-т | |
| Тытăнҫаклă т. | | м | ă-т-т | 1. (ă) пăр,(ă)мăр, а-р |
| Малтан ирт. ĕç. вăх. | | ма | са-тт | 2. ăр, сăр |
| Малтан ир. хал в. | | ма | н (ă)-ҫҫĕ | 3. ĕ—ç; ҫăр |

### 88 §. Çителĕксĕр ĕçхĕлсем.

1. Çителĕксĕр ĕçхĕлсенĕен пĕрин çинĕен епĕр каланăĕĕ, вăл—ĕĕ. Епĕр ăна тĕпсĕр ĕçхĕл терĕмĕр, мĕншĕн тесен, вăл сăмахăн тĕпĕ çук, вĕçĕ анĕах.

*Ĕĕ* ĕçхĕлсемпе кăна мар, ытти кăласри сăмахсемпе те пулма пултарать: Пирĕн вăкăр пур—ĕĕ, вăл пит вăйлă—ĕĕ, тата пит усал—ĕĕ.

Сар та вăрăм варли—ĕĕ,
Ăта пăхха терĕм те,
Порçăп тоттăр çок терĕ.

2. Кайас—ĕĕ, пулăпин—ĕĕ, йурла—ĕĕ çакан пек сăмахри *ĕĕĕ* тĕпсĕр ĕçхĕл мар, тăвас килнине кăтартакан сыпăк.

3. Ăта, аăр; ме, мейĕр, ĕим, ĕимĕр, ĕăп (молчи), ĕăпăр—çак ĕçхĕлсем хушуллă тайăмра 2 сăпатсенĕе кăна пулаççĕ. „Ĕăп" сăмахăн кăна хăшхăш ытти кĕлеткисем пур. Тĕслĕхрен: ĕăпнă, ĕăпса ларнă, теççĕ.

### 89 §. Ĕçхĕлсем çинĕен пĕрлештерсе калани.

1. Кĕлетке йенĕен пăхсан, ĕçхĕл кĕлеткисем пилĕк тайăма, çиĕĕ вăхăта, виçĕ сăпата, икĕ хисепе пĕлтереççĕ. Ĕçхĕл кĕлеткисен ĕи пысăк паллăлăхĕ вăл сăпатланни: сăпатланнине пăхса, епĕр ĕçхĕлсен тайăмне, вăхăтне, хисеппе куратпăр.

2. Пĕлтерĕш йенĕен пăхсан, ĕçхĕлсем йапаласен ĕçне, хăлне кăтартаççĕ.

3. Пуплевре ĕçхĕлсем йалан калав пулаççĕ, анĕах ытти ушкăнри сăмах вырăнĕнĕе пулсан, пуплевĕн урăх ĕĕленĕсем вырăнне пулма та пултараççĕ. Тĕслĕхсем: *кай*—сăмах тĕпĕ. Илетĕп сăмах ултă сасăран пулнă. Ĕикме ĕăвашĕсем „кайаççĕ" вырăнне „кайаĕĕă" теççĕ.

**Хушша калани.** 1. Хаĕхи, иртнĕ, тата пулас пайташсем çинĕен 120, 138 §-ра каланă.

2. Суппинсем, керунтисем, тата „пулмалла-тупмалла, пулмалăх-тупмалăх пули-пулми, тăви-туми" пек кĕлеткесем ĕçхĕл тĕпĕнĕен пулнă сăмахсем кăна, ĕçхĕлсем мар, мĕншĕн тесен, вĕсем сăнланмаççĕ те, вахăта та, хисепе те, сăнсене те пĕлтермеççĕ. Вĕсем çинĕен 93, 121, 149, 151, 152 §-ра каланă.

# III. Вĕçленекен сăмахсем.

**90 §.** Вĕçленекен сăмахсене кӳлепи йенђен те, пуплеври вырăнĕсем йенђен те икке уйăрма пулаť: пĕр пайĕ—йапапи йађĕсем, тепĕр пайĕ—палла йађĕсем.

Вĕçлевĕ вĕсен иккĕшин те пĕр.

## Йапала йађĕсем.

### 91 §. Йапала йађĕсен пулăвĕ.

Пулăвне пăхса, йапала йађĕсене виççе уйăраççĕ: тĕп йатсем, сыпăклă йатсем, йĕкĕр йатсем.

### 92 §. Тĕп йатсем.

а). Нумай теп сăмах таса тĕпех: куç, пăр, ут, вăрман, çын. Тĕп çăмахсенђен хăшĕ кĕскелнĕ: хыçĕнђи К сасса çухатнă (42 §):

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| *Тут.* | калак | айак | инек | тарак | топрак | итек |
| *Ђăв.* | халха | ура | ĕне | тура | тăпра | атă |

Хăш сăмахсем хађ К сасăпа та, К сасăсăр та пулаççĕ: сыпăк-сыпă, пĕрђĕк-пĕрђĕ, кунтăк-кунтă, текерлĕк-текерлĕ. К сасăпа пĕтекеннисем авалхи кӳлепеллĕ пулаççĕ.

у) Хăш тĕп сăмах таса тĕпех мар: куршанкă, кăпшанкă, кăрђанкă, уçланкă, паранкă, уланкă. Кунта *анкă* хушăннă. Хăш сăмахсенђе тата *ăх* хушăнаť:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| *Тут.* | ай, | тол, | кыл, | биш. |
| *Ђăв.* | уйăх, | тăлăх, | хĕлĕх. | пиллĕк. |

ы) Халĕ тĕп сăмах тийекенсенђен нумайĕшĕ йе сыпăклă сăмахсенђен, йе йĕкĕр сăмахсенђен пулнă. Сăмахран: *кин* килекен сăмахран, *пуйан* пуйакан йе пуйнă сăмахран, *урай* ура айĕ сăмахсенђен пулнă. Хађхи ђĕлхе йенђен пăхсан: кин, пуйан, урай сăмахсем тĕп сăмахсем; ђĕлхенĕн историйĕ йенђен пăхсан, çав сăмахсемех йĕкĕр, йе сыпăклă сăмахсем.

ă) Хăш тĕп йат çĕршывра илтĕнекен сасăсенђен пулнă: йапаласене йат сассине пăхса тăпă: куккук, ђавка (ђана), курак, нарă, ђан, шăнкăра (шăнкăрав).

ĕ) „Мемме, ťуťťу, тетте" пек ађа сăмахĕсем йепле пулни çинђен 160-ш § ра каланă.

и) Лектăр, респупĕлик, томонстратси пек йут сăмахсем, сыпăклă, йе йĕкĕр сăмахсем пулсан та, ђăваш ђĕлхинђе тĕп сăмахсен хисепĕнђе шутланаççĕ.

## 93 §. Сыпӑклисем.

Сыпӑклисем тӗп йатсем, ӗҫхӗлсем ҫумне тӗрлӗ сыпӑксем хушӑннӑран пулаҫҫӗ.

*1. Йатсем ҫумне сыпӑклӑ сӑмах тума ак ҫак сыпӑксем хушӑнаҫҫӗ:*

а) *Ҫӑ, ҫӗ*—пӗр пӗр ӗҫе туса пурӑннине кӑтартакан сыпӑк: тарҫӑ, хуралҫӑ, тимӗрҫӗ, кӗлӗмҫӗ, вӗрӳҫӗ, ђӗлӗмҫӗ, тарапҫӑ, йумҫӑ (йумӑҫ), йевӗђӗ, кӳршӗ (Ђ-ҫ-ш—41 §).

у) *Таш, тӑш* (теш, тӗш)—пӗрлине пӗлтерекен сыпӑк: йулташ (йул—ҫул: 34 §), хурӑнташ (хырӑмташ вырӑнне: 32 §), тантӑш, килӗнтеш, аташ (хаљхи ђӗлхепе каласан, йатташ пулмалла мӗн). Акташ—Шупашкар уйесӗнђи пӗр йал йађӗ.*)

ы) *Сем*—ҫын ӑҫтисемне кӑтартакан сыпӑк: пирӗн йалсем—пирӗн йал ҫынни, елӗксем—Елӗк ҫынни, арапуҫҫем—Арапуҫ ҫынни.

ӑ) *Лӑх, лӗх* (лӑк, лӗк: 31 §): 1) *апстраклӑ* ӑнланусене пӗлтерекен сыпӑк: ҫынлӑх, патшалӑх, ватӑлӑх, ђӗрӗлӗх, ҫырулӑх.

2) Ӳтпӗвӗн пӗр пӗр пайӗ ҫине тӑхӑнакан йапала: куҫлӑх, ҫӑварлӑх, сӑмсалӑх, ҫӗлӗк (ҫилӗк вырӑнне 53 §), пашлык (башпуҫ) шӑналӑк, пуҫлӑх (?).

3) Пӗр пӗр тӗлте кайӑк, йӑвӑҫ, йе урӑх йапала йышлине пӗлтерет: хурӑнлӑх, ҫӗмӗртлӗх, ҫӗленлӗх, хӑйӑрлӑх.

4) Пӗр пӗр йапала валли хатӗре пӗлтерет: кӗрӗклӗх, пӳртлӗх.

5) Хака, вӑхӑта, мӗнлӗхе пӗлтерет: пӗр тенкӗлӗх, ҫиђӗ кунлӑх, ӗмӗрлӗх, ҫаранлӑх, сутлӑх.

6) Ӗҫхӗлсенђен ҫителӗк сӑмахӗсем тӑваҭ: каймалӑх, ҫимелӗх, асӑнмалӑх, ватӑлмалӑх. Кӗрхи ҫӗр вӑрӑм: калаҫмалӑх та, ҫырмалӑх та пур.

ы) *Ӑш, ӗш, ш, шӗ*—тӑсӑма, пысӑккӑша, тата ытти ҫавӑн пек ӑнланусем пӗлтерекен сыпӑк: сарлакӑш, тарӑнӑш, ҫӳллӗш, ҫивӗђӗш, тӑрӑшшӗ (тӑрӑхӑш вырӑнне), талккиш, аслӑш, хулӑнӑш, ађаш.

**Хушша калани**. *Ӑш, ӗш, ш*—виҫҫӗмӗш сӑн сыпӑкӗ: *ӑшӗ, ӗшӗ, ш* сыпӑксенђен пулнӑ. Анђах кайран вӗсен пӗлтерӗшне маннӑ.

---

*) Хирехирӗҫ ӗҫхӗлсенђе III пур: тавлаш, тупӑш (66 §) *таш-теш* сыпӑкра та III пур. Хирехирӗҫ ӗҫхӗлсенђе те, таш-теш сыпӑклӑ сӑмахсенђе те пӗрлелӗх итейӗ пур. Ҫапла вара ҫак икӗ III пӗр тӗпрен тухса каймашши, тесе шухӑшлама пулаҭ. Шухӑшласан, ҫав II ђӑвашла йыш, тӳрӗк ђӗлхисенђи йещ еш (йулташ, тантӑш сӑмахри III сасӑ пек туйӑнаҭ: Й сасӑ тухса ӳкме йуратакан сасӑ (25 §); йыш сӑмах ытти сӑмахсемпе пӗрлешсен, Й сасӑ тухса ӳкпӗ те, III (*аш*) сасӑ кӑна йулнӑ пулӗ тесе шухӑшлама пулаҭ.

Халĕ сарлакăш, тарăнăш тени ахаҫ сарлакăша, тарăнăша пĕлтерет; унăн вĕсен сарлакăшĕ, тарăнăшĕ тесен. Е хушăнать; тин вара сăмахсем виҫҫĕмĕш сăнра пулаҫҫĕ.

и) *Çă, çĕ, шка, шке, ка, ке*—пĕҫĕкĕлетсе, йе аҫашласа калакан сăмахсем: аттеҫĕм, аннеҫĕм, утҫăм (ку виҫ сăмахра М—пĕрмĕш сăн сыпăкĕ), валашка, йӳплешке, карҫлашка, пăрушки, тынашки, ҫăмăркка, Петĕркке, Тимĕркке.

ă) Ук, ӳк—кĕҫĕнлетсе каланă пайăр сăмахсем: Марук, Ваçук, Ваҫук, Петук, Хĕветук.

е) *Ал, ел*—йапаланăн йен пайĕсем; ҫийел, айал, хыҫал, тепел.

й) *Аш ашĕ*: малаш, тавраш, тувлаш; виҫҫĕмĕш сăнра малашĕ, тавврашĕ, тулашĕ.

*2) Ĕҫхĕлсем ҫумне сыпăклă сăмахсем туma ак мĕнле сыпăксем хушăнаҫҫĕ:*

а) *Măш, мĕш*—мĕн те пулин тăвакан йапаласен йаҫĕ: тухатмăш, пĕлтермĕш, йăлăнтармăш, йӳтетмĕш.

е) *Кăн, кĕн*—ыраламан йапаласен йаҫĕ: таркăн, ҫупкăн, каскăн, вĕҫкĕн, йеркĕн.

у) *Ан, ен*—ĕлĕкхи пайташшенҫен пулнă йапала йаҫесем: автан, ҫемĕрен, селен, (тăша каттайла: йыл—упален—34 §), сыран (тăшак, йырҫав, тут, йар), кин (килекен сăмахран кĕскелнĕскер).

ӳ) *Мак, мек* (ма, ме)—ĕлĕк катартусăр тайăм пулнă сăмахсем: сукмак (тут. сук—сап), пӳлмек йе пӳлме, пермек йе перме, пусма, ĕҫме—симе.

ы) *Ăм, ĕм, м*—ĕҫне хăйне йе унăн ресуҫтатне кăтартакан сăмах: вилĕм, парăм, ҫухрăм (ҫухăр, ҫехĕр сăмахран), утăм, пӳлăм, кӳлĕм, турам, ҫула—ҫулам (ҫу), ҫелĕм.

и) *У, ӳ*; уҫă сасăсем хыҫҫăн *В*—пер пĕр ĕҫ, йе унăн ресуҫттаҫĕ: сыру, ыйту, таву, улăшу, сутуилӳ, кĕрӳ*), мухтав, усрав, айăплав, йура-йурав (йуравсăр), кĕрев (кĕревсĕр).

ă) *Ăк, ĕк (ă, ĕ)*—ĕҫ хăй йе унăн ресуҫттаҫĕ: ҫурăк, сыпăк, татăк, ҫурă, сыпă, вилĕ, сутă, кулă, ҫĕлĕ, келĕ, пул-пулă (тырăпулă)

ĕ) *Кăҫă, кĕҫĕ*, кăҫ, кеҫ, кăҫ, кĕҫ—тĕрле хатĕре пелтерекен сыпăк: пăркăҫ (ă), вĕркĕҫ, хĕскĕҫ, майкăҫă, хырҫăк, хыпкăҫă, ăскăҫ.

---

*) Кĕрӳ аҫерпетшанла кĕрекен.

в) *Ђӑк, ђӗк*—пер пер, ӗҫӗн ресуљттаЂӗ; сулӑнЂӑк, тӗпренЂӗк, шанЂӑк, сирпӗнЂӗк, аланЂӑк.

й) *Кӑ, кӗ*—ҫупкӑ, тапкӑ, ђышкӑ, ӗҫкеҫике.

л) *Аҫ, ӗҫ*: пурӑнаҫ, савӑнӑҫ, тивеҫ, шанӑҫ, тухаҫ, парӑнаҫ.

### 94 §. Йӗкӗррисем.

а) Икӗ самах пӗтӗмпех пӗрлешше ситнӗ; икӗ самахне уйӑрма та йӑвӑр: урай, кӑнтӑр, тунти (ту самахран), ытлари (ыта ерне—ернен тепӗр кунӗ: йе утла ерне кунӗ—день верховой езды), муЂей (мӑн пиЂЂей), ҫанталӑк. *)

е) Икӗ сӑмах пӗрлешше ситнӗ, анЂах вӗсене уйӑрма пулаť: тытамак, ҫӑварни, анкартн, сӑраҫҫи, асатте, ҫуртӑри, хушамат.

у) Хутла самахра йулашки сӑмахӗ малтанхи сӑмаха йевӗрленнӗрен пулнӑ: аЂа—паЂа, ватти—вӗттн, вӗтӗ—шакӑ, кӑршӗ—аршӑ, кайӑк—кешӗк, инкек—синкек, сават—сапа, им—ҫам, йепе—сапа, йур—вар, аш—паш.

ӳ) Икӗ самахран пери хайӗн хаљхи пӗлтерӗшне катартаť, пеЂЂен тел пулмасť: сурам—пуҫ (ҫурӑм: ылтӑм хӑма ҫуралӗ, хурт—кайшанка тапранӗ), тыра—тулӑ (пулӑ—пул сӑмахран).

ы) Каласура икӗ самахӗ те пур, икӗ айланава пӗлтереҫҫӗ: пӗрлешшен висӗмеш айланава пелтереҫҫе: сӑкӑр-тавар, ҫӗс-кантӑр, хур-кавакал, хурт-кайшанка, выЂӑх-Ђерлӗх (вайалӑх-Ђӗрӗлӗх паракан).

**Хушша калани.** Шутпа пустарӑну сумӗсем—йапала йаЂӗсем: пӗрре, вунна, пин, пин те аллӑ, сурӑ, Ђӗрӗк, иксемӗр, виҫҫӗшӗ (132, 136 §).

### 95 §. Йапала йаЂӗсем вырӑнне пулакан йатвырӑнЂисем.

Йатвырӑнђисене те, хайсен пулӑве тӑрӑх, ҫапла уйӑрма пулаť: тӗп йатвырӑнЂисем, сыпӑклисем, йӗкӗрлисем.

### 96 §. Тӗп йатвырӑнЂисем.

а) *Сӑпла йатвырӑнђисем:* епӗ, есӗ, вӑл, епир, есир, вӗсем

е) *Кӑтартуллисем:* ку, вӑл.

у) *Ыйтуллисем:* кам, мӗн.

---

* Ҫанталӑк тени халӗ погода тени пулаť, ҫуҫанталӑк тени тӗнЂе тени пулаť Ҫанталӑк ӗлӗк пӗлӗт маЂђине пӗлтерпӗ пулмалла. Ҫанталӑк сӑмахра икӗ сӑмахра икӗ сӑмах: ҫан—перӗмле йен (31 §) пӗтӗм; ҫавракa (тавраха) тени пулнӑ пулмалла.

*Хушна калани.* Кам? тесе ҫын сипҗен калана җух кăна ыйтаҫҫĕ. Ытти җереҗунсем ҫинҗен ыйтна җух мĕн? теҫҫе: мĕн кĕҫенет? Витере мĕн усраҫҫĕ?

### 97 §. Сыпăклисем.

а) *Сăпла йатвырăнҗисем:* весем=вăл—сем.

в) *Тавăрăнаҫлисем:* Ха—м. х—у. хă—й (хăйĕ кирлĕ мĕн. анҗах Е тухса ӳкне). ха—мăр. х—ăвăр. хă—й—сем (59 §).

у) *Ыйтулисем:* мĕскер (мен+скер сăмахран—127 §). х—ăшĕ, мнсе (минҗе).

ӳ) *Кăтартулисем:* с—акă. ҫ—авă. ле—шĕ. (ле—ре: ле—ҫ сăмахпа пĕр тымартан).

ы) *Тĕллевсĕррисем:* ытти=ыта+ĕ. урăх (уйăр сăмахпа пĕр тĕпрен). пур те (пур—ĕ те выранне). пурсăмăр та, пурсăр та.

и) *Туцулисем:* никам та, нимĕн те, нимĕскĕр те, нихăшĕ те. *Ни* кунта тунинне кăтартаҭ; *та—те* вăйлăлатнине, пурин ҫине йанине пелтерет.

### 98 §. Йĕкĕррисем.

ă) *Пĕлӳсĕррисем:* такам, темĕн, темĕскер, тахăшĕ. *Та, те* кунта пĕлменнине кăтартаҭ.

ä) *Плевсĕррисем:* кам та пулин. мĕн те пулин, мĕскер те пулин, хăшĕ те пулин (пулин выранне хăшĕ пулсан теҫҫĕ); кирек кам та, кирек мĕн те, кирек мĕскер те, кирек хăшĕ те. Харпăр (*, харпăрхăй.

е) *Хирехирĕҫлисем:* Ку пĕр сăмаха икĕ иле ăна вĕҫлесе пырсан пулаҭ: пĕрпĕрĕмĕр—ĕн, пĕрпĕрĕмĕр—е, т. ыт. Йат вĕҫлевлĕхĕ ҫук.

## Йапала йаҗĕсем вĕҫленни.

### Вĕҫлевлĕхсем.

**99 §**. Җăваш җĕлхинҗе ҫиҗĕ вĕҫлевлĕх: йат, харкам, пару, айапл.ав, вырăн, туху, пĕрпулу вĕҫлевлĕхсем**).

### 100 §. Йат вĕҫлевлĕхĕ.

Йат вĕҫлевлĕхĕ тесе җăваш җĕлхинҗе епĕр сăмах тĕпне—кам? мĕн? мĕскер? хăшĕ? тесе ыйтăнакан сăмаха калатпăр. Нумайа пĕл.

---

*) Перс җĕлхинҗе хар тени—кашни тени пулаҭ. Харпăр харкам сăмахпа пĕр тымартан.

**) Ытти вĕҫлевлĕхсем сипҗен 115-ш §-ра калана.

терет пулсан. хăш ђухне (61 §) пĕреллĕ хисепри тĕп çумне *сем* хушăнаŤ. Йат вĕçлевлĕх ытти вĕçлевлĕхсем пек мар, унăн хăйĕн вĕçĕ çук.

Хăш ђух ытти вĕçлевелĕхри сăмахсем йат вĕçлĕхри пек пулма пултарассĕ. Лаша апатне ене сисе йанă. Епер ёнер сурăх илтĕмĕр. Пилĕк пăт ыраширан икĕ пăтне сутнă. Çакă ытти вĕçлевлĕхри кĕлеткесем кĕскелнĕреп килет (100.103 §), тата ђăваш ђĕлхинђе пăхăнтаракан сăмах кăна вĕçленниншен те килет (115 §).

## 101 §. Харкам вĕçлевлĕхĕ.

Харкам вĕçлевлĕхĕ камăннине пĕлтерет. Унăн ыйтăвĕсем: камăн? мĕнĕн? Вĕçлевлĕхин вĕçĕ—*ăн, ĕн, н*; хăш сăмахсенђе *нăн, нĕн, йĕн* пулаŤ.

Мĕне пĕлтернине пăхса, харкам вĕçлевлĕхĕнђи сăмахсем çапла пулма пултарассĕ.

1. Харкам вĕçлевлĕхĕнђи сăмах уйрăм тăраŤ, камăннине, камăн мĕн пуррине, çуккине, мĕн тавас килнине пĕлтерет; вĕçлевлĕх вĕçне сухатмасŤ: Ку сăхман аттенĕн. Ухмахăн ăс сахал. Санăн кĕпў те çук куранаŤ. Салтакăн пит ĕçесси килет, тет. Ађийĕн пит çыварасси килнĕ. Пирĕн ђавашăн ĕлĕк ĕçе тухас умĕн ђўк тунă.

2. Харкам вĕçлевлĕхĕ пĕр пĕр йапала камăннине пĕлтерет. Вĕçлевлĕхĕнђи сăмахĕ уйрăм нусăмла пулсан, хыта асăрхавлă пулсан, вăл пĕтĕм кĕлеткелле пулаŤ; апла пулмасан йат вĕçлевлĕхĕ пек пулаŤ. а) Сĕлĕ—лаша апађĕ, улăм—сурăх апађĕ. Лашанăн апађĕ—сĕлĕ, сурахăн апађĕ—улам. е) Иванăн ашшĕ пўрђĕ çунса кайнă. Иван ашшĕйĕн пўрђĕ çунса кайнă. Иванăн ашшийĕн пўрђĕ çунса кайнă. Иван ашшĕ пўрђĕ çунса кайнă. у) Епĕ пиђђе пуртине катрăм. Епĕ пиђђен пуртине катрăм.

3. Харкам вĕçлевлĕхĕ йапала камăннине, йе мĕнĕннине пĕлтерет, анђах йаланах йат вĕçлевлĕхĕ пек пулаŤ. Ĕмĕр сакки сарлака. Вăрман улпуђĕ. Хусан кĕперни.

4. Харкам вĕçлевлĕхĕнђи сăмах ĕçхел сумĕ пĕлтерĕшлĕ пулма пултараŤ: Петĕр кашкăран пахаŤ. Таваттăн пўрте кĕрессĕ. пĕри ђăлана кĕрсе йулаŤ. Тилĕ икĕ уранăн тăрса кăрмашша пахаŤ.

## 102 §. Пару вĕçлевлĕхĕ.

Пару вĕçлевлĕхĕ йапала мĕне тивнине, ăста кайнине, ситмеллине пĕлтерет. Вăл кай, йар, пыр, кил, çўре, çит, кĕр, тух, тар, ўк, ывăт, пăрах, пут, йух, тумла, ђик, сыр, хур, улăх, кӳл, вит,

итле, тата ытти сӑмахсем хыҫҫан кама? мӗне? хӑшне? ӑҫта? (куда) тесе ыйтаҫҫӗ пулсан пулаҭ. Пару вӗҫлевлӗхин тӗп сыпӑкӗ А, Е; хӑш сӑмахсемсенҫе *на, не, йе* пулаҭ.

Ватта туйа, пеҫӗк аҫана сӑпка кирлӗ. Ухмаха тӗнҫе тикӗс. Макӑрман аҫана ҫӗҫӗ памаҫҫӗ. Путеке ҫемере пулҫӗ. Капана икӗ тӗкӗ пенӗ. Вӑл пире хӑта тивет. Урапана ҫу сӗрес. Тӗлӗкре вут курсан уйара. Кашкӑртан таракан упана сулӑхнӑ. Епӗр ҫулас ҫарана аҫакйкен тухминҫҫӗ. Атте лаши турлапа, йури тӗпне кӳлтӗмӗр. Йӗпе ҫула сӗреме йӗс таканлӑ ут кирлӗ. Пӑлтӑра шӑналӑк карнӑ. Мен хака илтӗр?

Еп каймӑттӑм вӑрмана
Хамла ҫырли илӗртет.
Еп тухмӑттӑм ҫак вӑйа,
Хамӑр савни илӗртет.
Пусса кӗмел йарас мар,
Кӗмӗле сайа йарас мар.
Йут йала хӗр парас мар,
Хӗре сайа йарас мар.

### 103 §. Айӑплав вӗҫлевлӗхӗ.

Айӑплав вӗҫлевлӗхӗнҫе сывӑх туллилетӳ сӑмахӗсем: кама? мӗне? кам? мӗн? тесе ыйтӑнакан сӑмахсем пулаҫҫӗ.

Ҫывӑх туллилетӳ ыйтакан ӗҫхӗлсенҫеп хӑшӗ ак ҫаксем: ил, ҫуп, кур, ӗс, ҫи, ҫеле, ҫулат, туп, илт, шухӑшла, ыйт, ҫап, шакка, келет, пус, пӗрӗх, сулла, силле, мӑшкӑлла, ҫӳкле, тӗл пул, пер, хатлан.

Айӑплав вӗҫлевлӗхӗ ҫӑваш ҫӗлхинҫе йе тулли кӗлеткеллӗ пару вӗҫлевлӗхӗ пек пулаҭ, йе кӗске кӗлеткеллӗ—йат вӗҫлевлӗхӗ пек пулаҭ.

Хӑсан кӗске кӗлеткине, хӑҫан тулли кӗлеткине калаҫҫӗ—халӗ ҫавӑн синҫен кӑшт калӑпӑр.

Пуплевре айӑплав вӗҫлевлӗхӗ ҫинҫе уйрӑм йанӑрав пулсан, ҫав сӑмахпа пӗлтерекен йапалана ытти ҫавӑн пек йапаласенҫен уйӑрарӑх паратпӑр пулсан, тулли кӗлетке пулаҭ, ахалин кӗске кӗлетке пулаҭ. 1) Кашкӑр сурӑх тытаҭ. Сурӑха кашкӑр тытнӑ. 2) Епӗ вӗри шыв ӗҫрӗм. Епӗ вӗри шывне ӗҫрӗм. 3) Пулӑ тыт. Ҫав пулла тыт. 4) Купӑс кала. Ҫак купӑса кала. 5) Вӑрман урлӑ ларса каҫрӑмӑр, виҫҫӗн пӗр пӗртӑвана куртӑмӑр. Калаҫа калаҫа каҫ турӑм,

сире ытараймасăр ҫӗр выртрăм. Пăтă тутă тытаť. Вăрмайта арăмне хӗнеме хулă тупайман.

Уйрăм асăрхавлă самахсем айăплав вӗҫлевлехӗнҫе тулли келеткеллӗ пулнăран, санла таврăнăсла, кăтартулла йат выранҫисем; кам сăмахлă, хăшӗ самахла йатвыранҫисем, тата хăш ытти йатвырăнҫисем те йалан тулли кӗлеткеллӗ пулаҫҫӗ: мана (сана, ана, пире, сире, вӗсене) курҫӗҫ. Есӗ хăна пел. Есӗр кама (хăшне, ыттисене, пурне те, кама та пулин) кӗтсе тăтăр? Вăл хăш сураха пусма калаť?

Ҫавăн пиркийех сынсен, выҫахсен пайăр йаҫӗсем, каманнине пӗлтерекен сăмахсем йаланах айăплав вӗҫлевлехӗнҫе тулли келеткелӗ пулаҫҫӗ: 1. Епӗ Ивана куртăм. 2. Епе Маншырана сутса йатăм. Вăрăсем ман лашана варласа кайнă. 3. Аттана тахăн та, ҫăпатăна та каларса ан ыват. 4. Калана сăмахна тыт. Пер ҫăваш та хăй херне Михетер пек пахас сук. 5. Епе сутрам. Хашне?—Усаллине (пелтер лиш[illegible]е, улта сулхине). 6. Аҫар туйа, аҫасем, ура каппе курепер.

### 104 §. Вырăн вӗҫлевлӗхӗ.

Вырăн вӗҫлевлехин ӗҫӗ—таракан вырăна кăтартасси. Вырăн вӗҫлевлӗхӗнҫи сăмахсем ăста (где?) тесе ыйтăнаҫҫӗ: *ра, ре, та, те, ҫе,* сыпăксемне петеҫҫӗ.

Акăш ăста?—Атăлта
Ҫенни аста?—Тинесре.
Ах, аттеҫӗм, аннеҫӗм!
Савнă аҫăрсем умăрта
Еп, савманни, хыҫăрта

* * *

Ҫака сута тӗнҫере
Вăйли те сук етемрен:
Шывсем синҫе ҫӗр синҫе
Хуса пулса вăл тăраť.

Санăн ху ҫумăнта уксу пури? Пăр суна вăхăтра утă султӑмăр. Тӗлӗкре сӗрӗм курсан, кантăрла тӗтре кураť тет. Вăл Елӗкре вӗрентекенре пурăнаť.

Вырăн вӗҫлевлӗхӗнҫе миҫере? тесе ыйтăнакан сăмахсем те пулаҫҫӗ. Пирӗн кукаҫей ҫитмӗлте. Шупашкар Хусантан ҫӗр хӗрӗх ҫухрăмра. Вуннăра икӗ пиллӗк.

Хăш хăш ытти тĕлсем: урпа утмăл кунта кĕрекене лараĭ. Шăп икĕ уйăхра икĕ мăшăр атă çĕлерĕ.

105 §. Туху вĕçлевлĕхĕ.

Туху вĕçлевлĕхĕ ăçтан, мĕнрен тухнине, килнине, пуçланнине кăтартаĭ; *ăçтан, камран, мĕнрен?* тесе ыйтăнаĭ. Туху вĕçлевлĕхĕ пару вĕçлевлĕхне тĕлметĕл вĕçлевлĕх: пару вĕçлевлĕхĕ ăçта кĕнине, ситнине пĕлтерет: ку ăçтан тухнине, пуçланнине, мĕнрен килнине пĕлтерет. Туху вĕçлевлĕхин сыпăкĕсем: *ран, рен, тан, тен, ђен.*

Туху вĕçлевлĕхне—ăçтан? камран? мĕнрен? тесе ыйтакан сăмахсенђен хăшĕ ак çаксем: йул, хăвар, пăрăн, ирт, хăра, вăтан, имен, сивĕн, ӳкĕн, йĕрĕн, савăн, каçар, сыхла, тĕлĕн, тăрăхла, такăн, шакка, тат, çак, сых, турт.

Пиђкерен шыв йухаĭ. Вăйăран вăкăр тухаĭ. Шупашкартан пыраĭ вăл çул. Татрăм çирĕм çĕр çырли,—сĕртен шывран уйăрăлтăм.

Ман сийĕмре шуђ кĕпе;
Аркăм вăрвăр тăваĭçке;
Çак вăйăран йулсассăн,
Ашђик вăрвăр тăваĭçке.

Вăрăран сыхлан. Васкани арăмĕнђен савăнман. Унтан иртрĕм. Сивĕрен вут хутса йатăмăр.

Пӳрте йăвăçран, ђулран, тăмран тăваççĕ. Халăпĕнђен тыт. Ман хыçăмран пыр. Пур тĕлтен те аван: çăкăртан ирĕк, ађанăђаран телейлĕ, ăсран та ăслă, вăйран та хăватлă.

Ашшĕ Петĕртен салам каласа, укса парса йанă. Виçĕ кунтан тырă вырма каймалла. Атăл Сăртан пысăк, Сăр Çавалтан пысăк.

Ĕçхĕлçум пĕлтерĕшлĕ сăмахсем: малтан, кайран, çурмаран—пополам, çĕнĕрен—снова.

106 §. Пĕрпулу вĕçлевлĕхĕ.

Пĕрпулу вĕçлевлĕхĕ йапалăсем пĕр пĕрнипе хутшăннине, пĕрлешнине, ĕçе мĕнле хатĕрпе тунине, пĕр пĕр йапала хăçан; ăçта, мĕншĕн апла пулнине, тата ыттисене те пĕлтерет. Пĕрпулу вĕçлевлĕхин ыйтăвĕсем: мĕнпе? кампа? хăшинпе: сыпăкĕ *на, не.*

Ылттăнпа кĕмĕл тавлашаĭ,
Пăхăр укçан мĕн ĕç пур?
Тăванпа тăван савăнаĭ,
Çиђĕ йутăн мĕн ĕç пур?

Туй халăхне сăра алтăрпа ĕçтерессĕ. Сухапа сухалассĕ, сӳрепе сӳрелессĕ. Пуртăпа касассĕ. Укçапа пурне те тума пулаймаст. Ыран каçпала ханасем килмелле. Кăвак çутăпа вăрмана тухса кайрĕç. Хусантан тухаt хура çул, ик айăккипе шĕшкĕлĕх. Вăйлă çилпеле пĕтĕм вăрман шавласа, кĕрлесе тăнă. Тараса кашти сивĕпе хатăрланса кăшкăрат. Çилпипе тытăнçĕ тет вăрмансене гĕпĕ тымарĕпе ласкама.

Çак шăтăк пĕр витре шывпах тулçĕ. Есĕ унпа мĕн тăвасшăн? Сухалĕпе мухтанат. Кĕçĕн вăрман çеçеклĕ, çеçекĕпе илемлĕ.

Пĕрпулу вĕçлевлĕхĕнçе ĕçхĕлсум пĕлтерĕшлĕ сăмахсем нумай: каçпа, сиккипе, йерипе, кунĕпе, кунĕ кунĕпе, тĕнçипе, килĕпе

### Сăмахсем вĕçленни.

**107 §.** Сăмах тĕпĕ мĕнле сасăпа пĕтнине пăхса йапала йаçĕсем вĕçленни çиçĕ тĕслĕ пулат. Пĕрмĕш тĕс—хупă сасăпа пĕтекен сăмахсем пулаççĕ: сурăх, кĕрĕк, сухан, çумар пек сăмахсем. Иккĕмĕш тĕс—у, ӳ сасăпа пĕтекеннисем: кĕрӳ, пашалу, пăру пеккисем. Виççĕмĕш тĕс—И сасăпа пĕтекеннисем: шăшши пăри пеккисем. Тăваттăмăш—А, Е сасăпа пĕтекеннисем: така, ĕне пеккисем. Пиллĕкĕмĕш тĕс—Ă, Ĕ сасăпа пĕтекен, вĕсен умĕн пĕр хупă сасăллă сăмахсем: пăтă, тилĕ пеккисем. Улттăмăш тĕс—Ă, Ĕ, вĕсен умĕн икĕ хупă сасăллă сăмахсем: пĕрçĕ, хурçă пеккисем. Çиççĕмĕш тĕс—виççĕмĕш сан сыпăкĕ—Е, И сасăпа пĕтекен сăмахсем: ывăлĕ, пулли пек сăмахсем.

Тĕп тĕс—пĕрремĕш тĕс.

### 108 §. Хупă сасăпа пĕтекен сăмахсем вĕçленни.

*Пĕрелĕ хисеп.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| Йат в. | тинĕс— | кĕрĕкĕр — | мĕн— |
| Харкам в. | тинĕс—ĕн | кĕрĕкĕр—ĕн | мĕн—ĕн |
| Пару в. | тинĕс—е | кĕрĕкĕр—е | мĕн—е |
| Айăплав в. | тинĕс—е | кĕрĕкĕр—е | мĕн—е |
| Вырăн в. | тинĕс—ре | кĕрĕкĕр—те | мĕн—ре |
| Туху в. | тинĕс—рен | кĕрĕкĕр—тен | мĕн—рен |
| Пĕрпулу в. | тинĕс—пе | кĕрĕкĕр—пе | мĕн—пе. |

*Нумайлă хисеп.*

| | | |
|---|---|---|
| Й. Тинĕс—сем | кĕрĕкĕр—сем | мĕн—сем |
| Х. Тинĕс—сен—ĕн | кĕрĕкĕр—сен—ĕн | мĕн—сен—ĕн |

| | | | |
|---|---|---|---|
| П. | Тинӗс—сен—е | кӗрӗкӗр—сен—е | мӗн—сен—е. |
| А. | Тинӗс—сем (н-е) | кӗрӗкӗр—сен—е | мӗн—сем (н-е) |
| В. | Тинӗс—сен—ђе | кӗрӗкӗр—сен—ђе | мӗн—сен—ђе |
| Т. | Тинӗс—сен—ђен | кӗрӗкӗр—сен—ђен | мӗн—сен—ђен |
| Пп. | Тинӗс—сем—пе | кӗрӗкӗр—сем—пе | мӗн—сем—пе. |

1. Вӗҫленнӗ ђух вӗҫсем тӳрех сӑмах тӗпӗ ҫумне сыпҫӑнаҫҫӗ, сӑмах тӗпӗ улшӑнмасҭ.

2. Пӗреллӗ хисепри хытӑ сӑмахсенђе, уҫӑ сасӑсен килӗшӗвӗ тӑрӑх (1 7 §) *ӗн, е, ре, те, тен, пе* вырӑнне *ӑн, а, ра, та, ран, тан, па* пулаҭ:

| | | |
|---|---|---|
| Й. | Сурӑх— | пасар— — |
| Х. | Сурӑх—ӑн | пасар—ӑн |
| П. | Сурӑх—а | пасар—а |
| А. | Сурӑх—(а) | пасар—(а) |
| В. | Сурӑх—ра | пасар—та |
| Т. | Сурӑх—ран | пасар—тан |
| Пп. | Сурӑх—па | пасар—па. |

Нумайлӑ хисепре *сем, сен* сыпӑксем ҫемҫерен, вӗҫлевлӗх вӗҫӗсем йалан ҫемҫе пулаҫҫӗ; тури калаҫура кӑна хытӑ пулма пултараҫҫӗ.

Й. Сорӑх—сам— —

Х. Сорӑх—саӊ, сорӑх—сан—ӑн, сорӑх—сам—ӑн.

П. Сорӑх—сан—е, сорӑх—саӊ—а, сорӑх—сан—а, сорӑх—сам—а.

В. Сорӑх—сан—ђе, сорӑх—сан—ра, сорӑх—самра.

Пп. Сорӑх—сам—па.

3. Нумайлӑ хисепре йӗрпулу вӗҫлевлӗхӗнђе авалхи *сен* сыпӑк йат вӗҫлевлӗхӗнђи пекех *сем* пулаҭ. Ку Н саса П саса умӗнђе М сасса тухма йуратнӑран килет пулмалла.

4. Харкам вӗҫлевлӗхӗнђе вӗҫлевлӗх сыпӑкӗ ҫухалма пултараҭ: сурӑхӑн апађӗ—сурӑх апађӗ; сурӑхсенӗн апађӗ—сурӑхсенн, сурӑхсен апађӗ (25,101 §).

5. Айӑплав вӗҫлевлӗхӗ пару вӗҫлевлӗхӗ пек. Анђах ун ҫинђе йанӑрав пулмасан, йе ӑна уйӑрса каламасан, вӑл йат вӗҫлевлӗхӗ пулаҭ (103 §).

6. Вырӑнпа туху вӗҫлевлӗхӗнђе Р сасӑпа пӗтекен сӑмах хыҫҫӑн вӗҫлевлӗх сыпӑкӗнђе Р вырӑнне йалан Т пулаҭ: ҫӗр—те, ҫӗр—тен; вӑкӑр—та, вӑкӑр—тан. Хӑш сӑмахсенђе *н, л* хыҫҫӑн та *т* пулаҭ: арман-та, усал—тан (49,76 §§)

Нумайлӑ хисепре вырӑнпа туху вӗҫлевлӗхӗнђе вӗҫлевлӗх вӗҫӗ *сен* сыпӑк ҫумне хушӑнаҭ; *сен* сыпӑк *н* сасӑпа пӗтет. Ҫавӑн-

па унта *р* вырӑнне йалан ҫемҫелнӗ *т-ҭ* пулаҭ: сурӑхсен—ҭе. сурӑх—сен—ҭен (сурӑх—сен—те. сурӑх—сен—тен вырӑнне).

7. Пӗрпулу вӗвҫлевлӗхӗ *па, пе*—кӗскелнӗ палан. пелен; авалхи тӳрӗк ҭӗлхинҭе, тӑшакаттай·ҭӗлхинҭе берлен, бӗрле; тутарла бѣлен. *Па, пе* вара кӗскелнӗа *пӗрле* пулаҭ. *Па. пе* вырӑнне *палан, пелен* халӗ те калаҫҫӗ: унпалан—унпала—унпа.

8. Вӗҫлевлӗх сыпӑкӗсем икӗ хисепре те пӗрех. анҭах пӗрелле хытӑ пулма пултараҫҫӗ: нумайлӑ хисепре йалан ҫемҫе.

| | |
|---|---|
| Й.———— | В. ра, ре, та, те, ҭе. |
| Х. ӑн, ӗн. | Т. ран, рен, тан, тен. ҭен. |
| П. а, е. | Іп. па, пе. |

9. Епӗ, есӗ сӑмахсем *ӗ* сасӑпа пӗтеҫҫӗ пулсан та, пӗрмӗн тӗс пек вӗҫленеҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӑл сӑмахсем аваԓ хупӑ сасӑсемпе пӗтнӗ (58 §).

*Пӗрелле хисеп.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| Й. Епӗ | есӗ. | В. Ман—ра | сан—ра. |
| Х. Ман—ӑн | сан—ӑн. | Т. Ман—ран | сан—ран. |
| П.А. Ман—а | сан—а. | П.п. Ман—па | сан—па. |

*Нумайлӑ хисеп.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| Й. Епир, епӗр | есир, есӗр. | В. Пир—те | сир—те. |
| Х. Пир—ӗн | сир—ӗн. | Т. Пир—тен | сир—тен. |
| П.А. Пир—е | сир—е. | П.п. Пирӗн—пе | сирӗн—пе. |

Ку сӑмахсен нумайлӑ хисепри пӗрпулу вӗҫлевлӗхин тӗпӗ харкам вӗҫлевлӗхӗ пек. Вырӑнпа туху вӗҫлевлӗхӗсенҭе Т ҫемҫелмест.

10. Вӑл сӑмахӑн вӗҫленекен тӗпӗ ун; ку сӑмахӑн кун:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Й. Вӑл | ку. | В. Ун—ра | кун—ра. |
| Х. Ун-ӑн | кун—ӑн | Т. Ун—ран | кун—ран. |
| П.А. Ан—а | кӑн—а. | Іп. Ун—па | кун—па. |

11. Ҫын сӑмах харкампа пару вӗҫлевлӗхӗнҭе ҫынн—ӑн ҫынн—а пулаҭ. Тен ку сӑмах ӗлӗк Ӑ сасӑпа пӗтнӗ пулӗ, мӗншӗн тесен Ӑ сасӑпа пӗтекен сӑмахсен пек вӗҫленет. Сак, кӗтес. лаҫ сӑмахсем пару вӗҫлевлӗхӗнҭе кӗтесе, лаҫҫа, сакка пулаҫҫӗ.

**109 §. У, ӳ сасӑпа пӗтекен йапала йаҭӗсем вӗҫленни.**

| | |
|---|---|
| Й. Ҫыру | кёрӳ. |
| Х. Ҫырӑв-ӑн | кӗрӗв-ӗн. |
| П. Ҫырӑв-а | кӗрӗв-е. |
| А. Ҫыру (ӑв-а) | кӗрӳ-(ӗв-е) |

В. Ҫыру-ра кĕрӳ-ре.
Т. Ҫыру-ран кĕрӳ-рен.
Пп. Ҫыру-па кĕрӳ-пе.

1. Кунта харкампа пару вĕҫлевлĕхĕнҫе У, Ӳ сасăпа пĕтекен сăмах авалхи кĕлеткине ураҫ: У=АВ. Ӳ=ĔВ. (45 §).

Хăш калаҫура тĕппе вĕҫлевлĕхĕвĕҫе хушшинҫе Й йе Н пăла: ҫыру-й-ăн, кĕрӳ-й-ĕн, йе: ҫыру-н-ăн, кĕрӳ-н-ĕн.

2. Ытти вĕҫлевлĕхсенҫе, тата нумайлă хисепре сăмахсем тĕрĕс вĕҫленеҫҫĕ.

3. У, Ӳ сасăпа пĕтекен иккĕмĕш сăнри сăмахсем кăшт урăхларах вĕҫленеҫҫĕ.

Й. Ҫырăву.
Х. Ҫырăву-н-ăн, н.
П. Ҫыру-н-а.
А. Ҫыру-на.
В. { Ҫырăвăн-та. / Ҫырăвун-та.
Т. { Ҫырăвăн-тан. / Ҫырувăн-тан.
Пп. Ҫырăву-па.

а) Кунта харкампа пару вĕҫлевлĕхĕнҫе сăмах тĕпĕпе вĕҫ хушшинҫе Н пулаҫ. Йĕрке тăрăх: ҫырăвăв-ăн, ҫырăвăв-а теме илемлĕ мар.

е) Вырăнпа туху вĕҫлевлĕхĕнҫе иккĕмĕш сăнăн авалхи кӳлепи—тӳрĕксен ҫелхинҫи ЫН, ИН сасăсем сыхланса йулнă*). Вырăнпа туху вĕҫлевлĕхĕнҫе тĕп сăмах ҫумне Н сасă виҫҫĕмĕш сăн сыпăклă сăмахсенҫе те хушăнаҫ (114 §, 3).

у) Пару вĕҫлевлĕхĕнҫе иккĕмĕш сăн сыпăкĕ У, Ӳ тухса ӳкет: ҫырăвуна, кĕтĕвӳпе вырăнне ҫырăвна, кĕтĕвпе теҫҫĕ. Ҫырăвна, кĕтĕвне сăмах тата туртăнарах параҫ: ҫыруна, кĕтӳне теҫҫĕ.

### 110 §. И сасăпа пĕтекен сăмахсем.

Й. Шăши
Х. Шăши-й-ĕн
П. Шăши-й-е
А. Шăши (й-е)
В. Шăши-ре

тата ыттисем те.

---

*) Тутар ҫĕлхинҫе ҫырăву сăмаха jазуын теҫҫĕ (j—s. З=р; 34 §), уту сăмаха атын теҫҫĕ.

Кунта, уçă сасăсем йунашар пулма йуратманран. Й сасă хушăнаť (50 §. 3-ш тĕс).

### 111 §. А, е сасăпа пĕтекен сăмахсем.

| | |
|---|---|
| Й. Лаша | ĕне |
| Х. Лаша-н-ăн | ĕне-н-ĕн |
| П. Лаша-на | ĕне-н-е |
| А. Лаша (-н-а) | ĕне (н-е) |
| В. Лаша-ра | ĕне-ре |

тата ыттисем те.

Кунта харкампа пару вĕçлевлĕхĕнҫе Н пур. Каҫхи ҫĕлхе йенҫен пахсан, ăна уçă сасăсем хушшине кĕрсе ларнă *инфикс* теме пулаť; тури ҫавашшем ун вырăнне Й кўртсе лартаççĕ; лаша-й-ăн, лаша-йа теççĕ. Анҫах ҫĕлхе пурăнăçĕ йенҫен пăхсан, Н сасă вăл *инфикс* мар, авалхи кĕлетке пек туйăнаť: тутар ҫĕлхинҫе Н сасă хупă сасăпа пĕтекен сăмахсем хыççăн та пулаť: ат-нын=ут-ăн.

### 112 §. Умĕнҫе пĕр хупă сасăллă ă. ĕ. сасăпа пĕтекен сăмахсем.

*Пĕрелле хисеп.*

| | |
|---|---|
| Й. Пулă | ҫĕпĕ |
| К. Пулл-ăн | ҫĕпп-ĕн |
| П. Пулл-а | ҫĕпп-е |
| А. Пулă (л-а) | ҫĕпĕ (п-э) |
| В. Пулă-ра | ҫĕпĕ-ре |

тата ыттисем те.

Кунта тĕп йĕрке тăрăх камăн вĕçлевлĕхĕнҫе пулăăн, ҫĕпĕĕн пулмалла мĕн. Кунта тĕп вĕçĕнҫи Ă, Ĕ çухалаť, ун вырăнне вĕсен умĕнҫи хупă сасă вăрăмланаť. (59 §, 5-ш тĕс).

### 113 §. Умĕнҫе икĕ хупă сасăллă Ă, Ĕ сасăпа пĕтекен сăмахсем.

Çак ушкăна тата вĕçĕнҫи Ă, Ĕ сасса çухатакан сăмахсем те кĕреççĕ: айхă, нимĕҫĕ, мулкаҫă, хĕскĕҫе, пулăçă тата ыттисем те.

| | |
|---|---|
| Й. Хурçă | пĕрҫĕ |
| К. Хурç-ăн | пĕрҫ-ĕн |
| П. Хурç-а | пĕрҫ-е |
| А. Хурçă (ç-а) | пĕрҫҫĕ (ҫ-е) |
| В. Хурçă-ра | пĕрҫĕ-ре |

тата ыттисем те.

Кунта, икĕ усă сасă йунашар тăма йуратманран, харкампа пару вĕçлевлĕхĕнҫе сăмах тĕпĕнҫи Ă, Ĕ сасă тухса ўкет (59 §, 6-ш тĕс).

### 114 §. Виççĕмĕш сăн сыпăклă сăмахсем.

Й. Ывăлĕ — çырăвĕ.
К. Ывăли-йĕн,н — çырăви-йĕн,н.
П. А. Ывăл-не — çырăв-не.
В. Ывăлĕн-ҫе — çырăвĕн-ҫе.
Т. Ывăлĕн-ҫен — çырăвĕн-ҫен.
П. Ывăлĕ-пе — çырăвĕ-пе.

Й. Тарăнăшĕ — лешĕ.
К. Тарăнăши-йĕн, н — леши-йĕн, н.
П. А. Тарăнăш-не — леш-не.
В. Тарăнăшĕн-ҫе — лешĕн-ҫе.
Т. Тарăнăшĕн-ҫен — лешĕн-ҫен.
П. Тарăнăшĕ-пе — лешĕн-пе.

Й. Пăрийĕ — пур те (пурĕ те).
К. Пăрийи-нĕн — пури-нĕн те.
П. А. Пăри (йĕ)-не — пур-не те.
В. Пăрийĕн-ҫе — пурин-ҫе.
Т. Пăрийĕн-ҫен — пурин-ҫен.
П. Пăрийĕ-пе — пурин-пе.

1. Кунта харкам вĕçлевлĕхĕнҫе „ывăлĕ, çырăвĕ“ тĕп вырăнне „ывăли, çырăви“ тĕп курăтпăр. Ку авалхи кўлепе пулмалла.

2. Харкам вĕçлевлĕхĕнҫе нумай калаçура „*ЁН*“ кăна пулаŤ: ывăл-ĕн, çырăв-ĕн. Хăш сĕрте—пăрийĕ пур те сăмахри пек, *нĕн* хушаççĕ: ывăлинĕн, лешинĕн теççĕ.

3. Вырăнпа туху вĕçлевлĕхĕнҫе вĕçлевлĕх сыпăкĕсем умĕн Н хушăнаŤ (109 §, 3, е).

4. *Çавă* сăмах харкам вĕçлевлĕхĕнҫе улттăмăш тĕс пек пулаŤ, ытти вĕçлевлĕхсенҫе çиҫĕмĕш тĕс пек.

Й. Çавă
Х. Çав-ăн.
П. А. Çавă-на, çав-на.
В. Çавăн-та.
Т. Çавăн-тан.
Пп. Çавăн-па.

### 115 §. Вĕçлевлĕхсем çинђен хушша калани.

1. Ђăваш ђĕлхинђе *пирке вĕçлевлĕхĕ* пур тесе калама пулаŤ, *шăн—шĕн* сыпăкпа пĕтекен вĕçлевлĕх. Ђăнан та, вĕçленекен сăмахсен çумне пурин çумне те шăн—шĕн сыпăк хушăнма пултараŤ: лашашăн, маншăн, пирĕншĕн, усалшăн, усалскершĕн, усаллишĕн, усалтараххишĕн, пиллĕкмĕш, пиллĕкмĕшшĕн, кайаканшăн, кайаканнишĕн, кайнăшăн, кайасшăн, кайассишĕн. Çак сăмахсем пăра пирке вĕçлевлĕхĕнђе пулаççĕ.

Пирке вĕçлевлĕхĕ çĕнĕ вĕçлевлĕх. Вăл шăн, шĕн самаххыçĕ хушăннăран пулнă. Пур калаçура та ку вĕçлевлĕх пулса çитейменха. Сăмахран каласан, Шупашкар уйесĕнђе хăш йалсенђе *шĕн* сыпăка çемçенĕн кăна калаççĕ: лаша—шĕн ман—шĕн теççĕ. Шĕн сыпăк кунта сăмах тĕпĕ хытă пулсан та йалан çемçе пулаŤ. Вĕçлевлĕх вĕçĕсем апла мар: хытăпа çемçелĕх тĕлĕшĕнђен вĕсем пĕрелле хисепре йалан сăмах тĕпĕпе килĕштереççĕ.

Ытти тўрĕк ђĕлхисенђе пирке вĕçлевлĕхĕ çук. Унта шăн, шĕн выранне пулакан ӧчӧн сăмах йалан çемçе пулаŤ, ăна умĕнђи сăмахпа уйрăм çыраççĕ; вăл сăмаххыçĕ.

2. Хуланалла, килелле, вăрманалла, унталла, çавăнталла пек кĕлеткесене *йен вĕçлевлĕхĕнђи* сăмахсем теççĕ. Вĕсем пару вĕçлевлĕх çумне *лла, лле,* сыпăк хушăннăран пулаççĕ; йат вырăнђисем вырăн вĕçлевлĕхĕнђен пулаççĕ: çавăнта—лла, унта—лла. Йен вĕçлевлĕхĕнђе вырăна пĕлтерме пултаракан сăмахсем кăна пулаççĕ, ыттисем пулмаççĕ. Тĕслĕхрен: епĕ калакан, усалскер сăмахсенђен йен вĕçлевлĕ пулмасŤ. Йенеллине кăтартас пулсан, вĕсем хыççăн *пат* хушăнаŤ: ман патăмалла, калакан патнелле, усалскер патнелле.

3. Вăхăта пĕлтерекен сăмахсенђен нумайĕшинђен *тухупа пĕрпул вĕçлевлĕхĕ* пулма пултараŤ: кĕртенпе, çавăнтанпа, пулнăранпа, кайнăранпа.

4. Йĕкĕр вĕçлевлĕхри сăмахсенђен тата çакăн пек кĕлеткелле сăмахсене кăтартма пулаŤ: вĕçнерехре—вĕçнерехрен, вĕçĕнђерехре—вĕçĕнђерехрен, варринђерехре—варринђерехрен, тата ыттисем те.

5. Ђăваш ђĕлхинђе йатумĕсем çук. Йатумĕсем вырăнне йатхыçĕсем: лаша патне, карта урлă, сĕтел çинђе. Çавăнпа тăвађ ђĕлхинђе йатумлă вĕçлевлĕх вырăнне йатхыçлă вĕçлевлĕх пулмалла пек: хăшĕ ђăнахах: лаша çинђен, кĕнеке çинђен сăмахсене йатхыçлă вĕçлевлĕхри сăмахсем пулĕ теççĕ. Анђах çапла шухăшлани тĕрĕс мар. Вăл ак мĕншĕн апла.

*Ђăваш пĕлхинче темĕçе сăмах майлашша йунашар тăрат пулсан, вĕсенчен йулашки пăхăнтараканни кăна вĕçленет,* ыттисем вĕçленмеççĕ:

| | | |
|---|---|---|
| Й. Пилĕк | пăт | ыраш |
| Х. Пилĕк | пăт | ырашăн |
| П. Пилĕк | пăт | ыраша |

тата ыттисем те.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Й. Пирĕн | хура | ĕне | апађĕ. |
| Х. Пирĕн | хура | ĕне | апађи—йĕн |
| П. Пирĕн | хура | ĕне | апатне |

тата ыттисем те.

Çавăнпа лаша çинђен. кĕнеке çинђен тесе каланакан сăмахсем йатхыçлă вĕçлевлĕхрĕ мар, туху вĕçлевлĕхĕнђе: кунта та пăхантараканни йулашки сăмах, çавăнна вăл вĕçленет. Пару вĕçлевлĕхĕнђе çав сăмах „çине", вырăн вĕçлевлĕхĕнђе „çинђе" пулаť.

## 116 §. Йапала йађĕçем çинђен пĕрлештерсе калани.

1. Йапала йађĕсем вĕçленеççĕ, камăннине пĕлтерекен кĕлеткесем йышăнаççĕ. Вĕçленес уйрăм тăрсан кăна вĕçленеççĕ, тепĕр йапала йатне пăхăнса тăраççĕ пулсан, вĕçленмеççĕ.

2. Пуплевре йат вĕçлевлĕхĕнђи сăмахсем пуплев хуçисем пулаççĕ. Ытти вĕçлевлĕхрисем уйăрсакалусем, туллилетÿсем, тавраншем пулаççĕ: Иван ĕнер хăй ухмахĕпе тутарçене ашшĕ пÿртне сутса йађĕ.

Уйăрсакалусем йат вĕçлевлĕх кĕлеткиллĕ. пе харкам вĕçлевлĕх кĕлеткиллĕ пулаççĕ, уйăрса каланакан сăмаха пăхăнса тăраççĕ. Айаплав вĕçлевлĕхĕнђи пуплев калавне çывăх тăраť. Ытти туллилетÿсем те, тата тавраншем те калавпа пĕрле тăраççĕ, калавçумĕсем пулаççĕ, анђах унран инçерех тăраççĕ. Çапла вара уйрăмтăрулăх пенђен пăхсан, ђи вайли йат вĕçлевлĕхĕнђи сăмах. Унтан вайсăртараххи вырăн, туху, пĕрпулу, пару вĕçлевлĕхĕнђи сăмахсем. Вĕсенђен вайсăртараххи çывăх туллилетÿ. Ђи вайсарри уйăрсакалу пулакан сăмах.

3. Пĕлтерĕш пенђен пăхсан, ку каласри сăмахсем мĕне пĕлтернине йађĕ хăйех кăтартса параť. Вĕсем йапаласен йатне, тĕрлĕ отвлеченный ăнланусем йатне кăтартаççĕ.

### Паллă йађĕсен пулăвĕ.

117 §. Йапала йађĕсем пекех, паллă йађĕсем те тĕп йатсем, сыпăклисем, йĕкĕррисем пулаççĕ.

### 118 §. Тĕп йатсем.

Тĕп паллă йатсем таса тĕп сăмахсемех, вĕсен хушăннă сыпăк тавраше мĕнĕ çук. Тĕслĕхсем: ула, çемçе, таса, çĕпĕ.

### 119. §. Сыпăклисем.

Сыпăклă паллă йаҫĕсем тĕрлĕ сăмах çумне çапла сыпăксем хушăннаран пулаççĕ:

а) *Лă, лĕ,*—пуррине пĕлтерекен сыпăк: ҫун—ҫунлă, ҫĕпĕ—ҫĕпĕллĕ, вăйлă, тымарлă, куçлăхлă, парăмлă. Тутă сăмахран икĕ паллă йаҫĕ пулать: тутăллă, тата: тутлă.

*Хушша калани.* Сăмах усă сасăпа пĕтет пулсан, тури калаçура *лă* сыпăкри Л сасă вăрăмланать: ҫĕпĕлле, лашалла.

е) *Сăр, сĕр.*—çуккине пĕлтерекен сыпăк: ҫун—ҫунсăр, кĕнеке—кĕнекесĕр, куççăр, татăксăр, савăнăççăр.

ў) *Си, ти, ҫи*—вырăна, ăçтине пĕлтерекен сыпăк: урамри, хулари, пÿртри, килти, ăçти, кĕнекесенҫи, йалсенҫи.

*Хушша калани.* Ку кĕлетке вырăн веçлевлĕхĕ çумне виççĕмĕш сăн сыпăкĕ И хушăннăран пулать: урамра—и (ĕ)=урамри, килте—и (ĕ)=килти, аллинҫе—и (ĕ)—аллинҫи (59 §, 4 мĕш тĕс).

м) *Хи*—вăхăта пĕлтерекен сыпăк: пайан—пайанхи, çĕрле—çĕрлехи, ыранхи, пĕлтĕрхи, ун ҫухнехи.

и) *Ла, ле*—майлăха пĕлтерекен сыпăк: хĕрарăмла (арсын), шуйттапла (лаша) ҫăвапла, тутарла (кĕнеке).

*Хушша калани.* Йапала йаҫĕ усă сасăпа пĕтет пулсан. Л сасă вăрăмланать: укçалла (вăй).

ă) *Ала, але*—тума, пулма тивĕçлине кăтартакан сыпăк: каймалла. килмелле. тумалла. илмелле. Ала, але сыпăк кунта суппин çумне хушăнать (115,149 §§).

е) *Шка, çеçç*ĕ, *çĕ*—пĕҫĕклетсе калание пĕлтерекен сыпăк: лутра—лутрашка, çинҫе (çинçе)—çинҫешке, пĕҫĕккĕ—пĕҫĕкçĕ. пĕҫĕкçеççĕ, вакçеççĕ.

в) *Ăк, ĕк, ă, ĕ*—ĕçхĕлсенҫен пулнă паллă йаҫĕсем: хăр—хăрăк, çĕр—çĕрĕк. хуç—хуçăк. пăсăк, çĕмĕрĕк. хыт—хытă, сутă, уçă, йÿçĕ

л) *Ҫăк*: аванҫăк. сапăнҫăк, пăтранҫăк, хыпаланҫăк.

ҫ) *Мăш, мĕш*—йĕрке сумĕсене кăтартакан, тата вак сумĕсенҫе тĕл пулакан сыпăк: иккĕмĕш. вуннăмăш. çирĕммĕш (133 §), виçĕ саккăрмăшĕ. пилĕк вунçиҫĕмĕшĕ (134 §)

### 120 §. Пайташшем

м) *Акан, екен*—хађхи пайташшем: лар—ларакан, кĕр—кĕрекен, кил—килекен. Ĕçхĕл тĕпĕ А, Е сасăпа пĕтет пулсан, çав А, Е сасă тухса ӳкет: вула—вулакан, çӳре—çӳрекен (вулаакан, çуреекен вырăнне 23 §).

*Хушша калани. Акан, екен* хай икĕ сыпăкран пулнă пулмалла.А—*кан*, Е—*кен*. Пĕр авалхи кĕнекере *кан* вăл хађхи кам сăмахăн авалхи кĕлетки тенĕ. Тен çапла калани тĕрĕс те пулĕ (н=м: 40 §)

н) *Нă, нĕ*—иртнĕ пайташ сыпăкĕ: кай—кайнă, кил—килнĕ, вуланă, çӳренĕ (42 §).

Çуклăх кĕлетки пулсан, Н умĕн *ма, ме* хушăнаŤ А, Ĕ сухалаŤ: кай—ма—н, кил—ме—н, вула—ма—н, çӳре—ме—н.

Хăш йатлаçу сăмахсенђе А çухалмасŤ: Ах, çĕр çăтманă пуçна!

р) *Ас, ес*—пулса пайташ сыпăкĕ: кай—кайас, кил—килес, вула—вулас, çӳре—çӳрес (вулаас, çӳреес вырăнне 24 §).

Йатлаçу сăмахĕсенђе, тухату ђĕлхисенђе пулас пайташра С-вырăнне *шă* куратпăр: Торă хоплашшă пуçна! Çĕр тĕпне кайашшă!

Йе йе, усал, ытлашши.  
Ан кар ĕнтĕ çăварна.  
Аннӳн ăшне çунтартăн.  
Турăран килешшĕ пуçна.

### 121 §. Йĕкĕррисем.

Хутлă паллă йађĕ нумайах мар. Вĕсенђен хăшĕ ак çаксем тимĕркăвак, симĕскăвак, шупкакăвак, сĕмтĕттĕм, сĕмхура; пиçнĕ пиçмен, тунă туман, пули пулми, вули вулами.

Пиçи пиçми çырлашăн.  
Ђĕрес йăтса ан тухăр.  
Ӳси ӳсми хĕрсемшĕн.  
Пар ут кӳлсе ан тухăр.

Пиçи, ӳси пек сăмахсем уйрăм сайра тĕл пулаççĕ: кори куçа корми ту.

### 122 §. Паллă йађĕсен йатвырăнђийĕсем.

*Ы́йтуллисем*: Мĕнле, мĕскерле, йепле. (Йепле сăмах йапала сăмахпа пĕр тымартан). Миçемĕш.

*Кăтартуллисем:* хăйне (хăй малтан) апла (ав—ла 39 §) капла (ку—ла, тутарла булай), ҫапла (ҫав—ла 39 §) ҫавнашкал, ҫавăн пек, ҫавăн йышши.

*Тухуллисем:* нимĕнле те, нийепле те нимĕскерле те.

*Пĕлÿсĕррисем:* темĕнле, темле, темĕскерле, тепле.

*Тĕллевсĕррисем:* мĕнле те пулин, йепле те пулин, мĕскерле те пулин, кирек мĕнле те (йепле те, мĕскерле те).

# ПАЛЛĂ ЙАҪĔСЕН КĔЛЕТКИСЕМ.

## Танлаштару кĕлеткисем.

### 123 §. Танлаштару пусăмĕ.

1. Икĕ йапалана пĕр пĕринпе танлаштараҫҫĕ пулсан, вĕсенҫен пĕри туху вĕҫлевлĕхĕнҫе пулаĭ: Ҫăпата атăран йÿн. Кăҫал тырă пĕлтĕрхинҫен наҫартарах пулҫĕ.

2. Пĕр йапалана тепĕр йапаларан кăшт кăна уйрăммине кăтартма илпетлĕ пусăм тĕпĕ ҫумне *рах, рех* хушăнаĭ: Кармăп Йетĕрнерен пысăкрах. Йытă кашкăртан пĕҫĕкрех. Петĕр Иванран вăйлăрах. Вĕсем пиртен йышлăрах.

*Р* сасă хыҫҫăн йаланах, тата йанăра хупă сасăпа пĕтекен сăмахсем хыҫҫăн *рак, рек* вырăнне хăш сăмахсенҫе *тарах, терех* хушăнаĭ:

| *Илпетлĕ пусăм* | *Танлаштару пусăмĕ* |
|---|---|
| наҫар | наҫар—тарах |
| хайар | хайар—тарах |
| такăр | такăр—тарах |
| кахал | кахал—(та) рах |
| найан | найан—(та) рах |
| йулхав | йулхав—(та) рах |
| нумай | нумай—(та) рах |

3. Танлаштаракан йапаласен хушши ҫылай пысăк пулсан, илпетлĕ пусăм кăна пулаĭ; *рак, рек* хушăнмасĭ: курак ҫерҫирен пысăк. Хусан Ҫĕмпĕртен ҫаплă. Ҫĕмĕртрен хура ҫÿҫĕм пур. Пÿртре тултинҫен ăшă. Пăсасси тăвассинҫен ҫăмăл.

4. Йапаласен хушши пысăккине хытăрах пĕлтерес тесен, хăш ҫух *та, тата* сăмахсем хушаҫҫĕ: Вăл пуринҫен те ăслă. Ку кĕнеке тата лайăх.

*Хушша калани.* Танлаштару пусăмĕ ҫăваш сăмахĕсен ытти кăласĕсенҫе те пулма пултараĭ: йапала йаҫĕсен кăласĕнҫе те,

ĕççумĕсен кăласĕнҫе те: Ыраш куракрах. Вăрманарах кай. Шаларах, кунтарах вăрахăнтарах, пÿрт патнерех, вăтана—вăтанарах, вула—вуларах.

Тепĕр йенҫен пăхсан, нумай паллă йаҫех танлаштару сыпăкне йышăнма пултараймасť. Сăмахран: пайташшене, вăхăта, хисепе, вырăна пĕлтеренен сăмахсене илер: вулакан, ĕнерхи, виççемĕш, вăрманти, тата ытти çаван пек сăмах çумне *рах*, *рех* сыпăк хушăнма пултараймасť.

## 124 §. Илпетсĕр пусăм.

1. Илпетсĕр пусăма пĕлтерме тĕп хутлăх умĕн тĕрлĕ сăмахсем хушаççĕ: ҫи пысăк, ҫăн таса, пит аван, ытла ăслă, ытах лайăх, ытлашши хытă, майсăр, шутсăр лайăх, темĕн тĕрлĕ сарлака, майĕ çук пуйан, ытармалла мар хитре, сĕре хытă. Вĕр çĕнĕ, шак хытă.

2. Паллă йатне иккĕллетеççĕ: шурă шурă, кура кура, ăслăран ăслă, тасаран таса.

Шурă шурă патака
Сăр сăрлама пит аван;
Ларма килнĕ аккасене
Инке тума пит аван.

3. Илпетсĕр пусăм тума тата нумай паллă йаҫĕсенҫен малтанхи икĕ сассине илсе вĕсем çулне *п* сасă хушаççĕ, пулнă сăмаха вара илпетлĕ пусăм умĕн калаççĕ.

| | |
|---|---|
| хура | хупхура |
| сарă | сапсарă |
| йĕпе | йĕпйĕпе |
| хĕрлĕ | хĕпхĕрлĕ |
| тикĕс | типтикĕс |
| çара | çапçара. |

Хăш сăмахсенҫе *п* сасă вырăнне *н* йе *м* пулаť (39, 40 §):

| | |
|---|---|
| кăвак | кăнкăвак |
| йешĕл*) | йемйешĕл. |

Хăш сăмахсенҫе тата *у* вырăнне *а* йе *ă* пулаť (30, 53 §).

| | |
|---|---|
| хура | хупхура |
| çутă | çапçутă |
| шурă | шапшурă |
| тулли | тăптулли. |

*) Йаш, йашă сăмахпа пĕр тĕпрен.

### Виçкĕлеткелĕх.

125 §. Паллă йаҫĕсен тата виçкĕлеткелĕх йатлă кĕлетки пур. Çапла йат ăна кĕлетки висĕ тĕрлĕрен панă.

| *Пĕрмĕш к.* | *Виççĕмĕш к.* | *Иккĕмĕш к.* |
|---|---|---|
| Лайăх | лайăхскер | лайăххи |
| Усал | усалскер | усалли |
| Курас | курасскер | курасси |
| Кайман | кайманскер | кайманни |
| Ырăрах | ырăрахскер | ырăраххи |
| Ҫĕрĕрех | ҫĕрĕрехскер | ҫĕрĕреххи |
| Таптаса | таптасаскер | таптаси |
| Урлă | урлăскер | урли |
| Ҫунлă | ҫунлăскер | ҫунли |
| Кайнă | кайнăскер | кайни |
| Ырă | ырăскер | ырри |
| Типĕ | типĕскер | типпи |
| Ула | уласкер | ули |
| Мĕнле | мĕнлескер | мĕнли |
| Çӳлти | çӳлтискер | çӳлти |
| Пайанхи | пайанхискер | пайанхи |
| Каймалла | каймаллискер | каймалли |

### 126 §. Пĕрмĕш кĕлетке.

Пĕрмĕш кĕлетке—паллă йаҫĕсен тĕпĕ. Йумахра вăл йе уйăрсакалу пулать, йе калав пулать, йе тавраш пулать. Çĕнĕ кĕнеке хитре. Икĕ хутлă пӳрт çӳллĕ. Епĕр тĕкекен ĕнене сутса йатăмăр. Наҫар сырнă кĕнекерен уссп сахал. Митри аван çырать. Ырă ҫĕреллĕ сын кăмăллă каласать. Туй лашисем выçă мар.

Хăш паллă йаҫĕ пĕрмĕш кĕлеткере йапала йаҫĕ вырăнне пулма пултарать: суккăра куçлăх мĕне кирлĕ. Йулхава йалан уйав. Ҫĕлхесĕр каласаймасть.

### 127 §. Иккĕмĕш кĕлетке.

Иккĕмĕш кĕлетке тĕп кĕлĕтке çумне *скер* хушăннăран пулать. *Скер* сыпăк—çармăссен *ӳжгăр* йатлă сăмахĕнҫен пулнă. Ӳжгăр тени йапала тени пулать. Çапла вара сăмахран «ырăскер» тесен, вăл ĕлĕк «ырă йапала» тенине пĕлтернĕ. Халĕ ырăскер тени—ырă йапаласенҫен пĕри тени пулать; çапла каласа епĕр ырă йапаласем çинҫен лурин çинҫен те каламастпăр, пĕрин çинҫен кăна калатпăр.

Пуплевре иккӗмӗш кӗлетке йапала йаҫӗ вырӑнне, йе хушмалҫӑ пулса тӑраӗ. Хушмалҫӑ пулсан, йапала йаҫӗсем умӗнҫе тӑмасӗ, вӗсем хыҫҫӑн тӑраӗ, йапала йаҫӗ вӗҫлевлӗхӗнҫе пулаӗ; йапала йаҫӗ пекех вӗҫленет: Унран, ухмаскертен, тем ыррине нумайах курас ҫук. Йенер кун сана пӗр ҫын килсе ыйтрӗ, ҫамрӑк кӑна аҫа, вӑрӑмскер, сарлакаскер. Шывран илнӗскер йепле ҫунтӑр вӑл.

### 128 §. Виҫҫӗмӗш кӗлетке.

Виҫҫӗмӗш кӗлетке пӗрмӗш кӗлетке ҫумне виҫҫӗмӗш сӑпат сыпӑкӗ И хушӑннӑран пулаӗ: лайӑх-лайӑххи, пысӑк-пысӑкки.

Хӑш сӑмахсенҫе Ӗ хушӑнаӗ: сулахай-сулахайӗ, сылтӑм-сылтӑмӗ, йуг-йуҫӗ.

Хӑш сӑмахсенҫе И те, Ӗ те пулаӗ: мӑн-мӑнни, тата мӑнӗ; кӗҫӗн-кӗҫӗнни, тата кӗҫӗнӗ; вӑталӑх-вӑталӑххи, тата вӑталӑхӗ.

Сайра сӑмахра тата *ӑшӗ, ӗшӗ* хушӑнаӗ: нумай-нумайӑшӗ, пайтах-пайтахӑшӗ, ҫылай-ҫылайӑшӗ. Нумайӑи, пайтаххи, ҫылайӑи кӗлеткесем те пур. Паллах, ку икӗ тӗрлӗ кӗлеткесен пӗлтерӗшӗ те пӗр пек мар.

Пӗрмӗш кӗлетке хупӑ сасӑпа пӗтет пулсан, ҫав хупӑ сасӑ виҫҫӗмӗш кӗлеткере вӑрӑмланаӗ: найан-найанни, ҫылай-ҫылайӑи; кайас-кайасси.

Пӗрмӗш кӗлетке уҫӑ сасӑпа пӗтет пулсан, ҫав уҫӑ сасӑ ҫухалаӗ, ула-ули, ҫемҫе-ҫемҫи, кайнӑ-кайни. Ӑ, Ӗ умӗн пӗр хупӑ сасӑ кӑна пулсан, ҫав хупӑ сасӑ вӑрӑмланаӗ: ҫӗрӗ-ҫӗрри, ырӑ ырри, сивӗ-сивви (59 §-па 5-мӗш тӗс).

Пӗрмӗш кӗлетке И сасӑпа пӗтет пулсан, виҫҫӗмӗш кӗлетке улшӑнмасӗ: пӗлтӗрхи-пӗлтӗрхи, вӑрманти-вӑрманти. Хӑш калура кӑна вӑл урӑхларах пулаӗ—йе хушӑнаӗ: пӗлтӗрхийӗ, вӑрмантийӗ (59 §, 3-мӗш тӗс).

Виҫҫӗмӗш кӗлетке пӗр пӗр палӑллӑ йапаласен йе пӗтӗм ушкӑнне, йе пӗр йапалине анҫах пӗлтерет: вӑйлисене пурӑнма ҫӑмӑл, вӑйсӑррисене хӗн.—Лаша сутрӑм.—Хӑшне?—Ваттине. Ҫакӑ ӗҫ ҫи кирли, ҫи усӑлли.

Атте мана хӗр пӑх тет:
Саррине те вӑрӑммине,
Тути хӗрри ҫӳхине,
Ҫӳҫ хӗррине кӑтрине,
Сӗтпе шыва кӳртнине.

### 129 §. Паллă йаҫĕсем вĕҫленни.

Пĕрмĕш кĕлетке уйрăм тăмасĭ пулсан, уйăрсакалу йе пуплев калавĕ пулса тăраĭ пулсан, вĕҫленмест; уйрăм йапала йаҫĕ вырăнĕнҫе тăраĭ пулсан вĕҫленет.

*Пĕрелле хисеп.*

Й. Суккăр ҫын суккăр
Х. Суккăр ҫыннăн суккăр-ăн
П. Суккăр ҫынна суккăр-а
тата ыттисем те.

*Нумайлă хисеп.*

Й. Суккăр ҫынсем суккăрсем
Х. Суккăр ҫынсен-ĕн ҫуккăрсен-ĕн
П. Суккăр ҫынсен-е суккăрсен-е
тата ыттисем те.

Иккĕмĕш кĕлетке хупă сасăпа пĕтекен йапала йаҫĕ пек, виҫҫĕмĕш кĕлетке виҫҫĕмĕш сăн сыпăклă И сасăпа пĕтекен йапала йаҫĕ пек вĕҫленет.

Й. Ырăскер ырри.
Х. Ырăскер-ĕн ырри-йĕн.
П. Ырăскер-е ырри-не.
А. Ырăскер (-е) ырри-не.
В. Ырăскер-те ыррин-ҫе.
Т. Ырăскер-тен ыррин-ҫен.
тата ыттисем те.

Нумайăшĕ, пайтахăшĕ пек сăмахсем виҫҫĕмĕш сăпат сыпăклă Ĕ сасăпа пĕтекен сăмахсем пек вĕҫленеҫҫĕ. (114 §). Нумайлă хисепĕ ҫук.

### 130 §. Харкам вĕҫлевлĕхĕнҫен пулнă камăннине кăтартакан паллă йаҫĕсем.

Пирĕн кĕнеке, салтакăн пурăнăҫĕ. Кунта *пирĕн*, *салтакăн* сăмахсем камăннине кăтартаҫҫĕ. Анҫах вĕсем кунта уйрăм, хăйне, ăссĕн тăмаҫҫĕ, хыҫăнҫи сăмахсене пăхăнаҫҫĕ. Харкам вĕҫлевлĕхĕнҫи сăмахсем, паллă йаҫĕсем пек, уйрăм та тăма пултараҫҫĕ. Апла пулас тесен, вĕсем хăйсем ҫумне виҫҫĕмĕш сăпат сыпăкне И сасса хушаҫҫĕ, умĕнҫи И сасса вăрăмлатаҫҫĕ: паллă йаҫĕсем виҫҫĕмĕш кĕлеткине йышăнаҫҫĕ: пирĕн-пирĕнни, салтакăн-салтакăнни, хăвăрăн-хăвăрăнни.

*Пěрелле хисеп.*

| | |
|---|---|
| Й. Манăнни | манни |
| Х. Манăннин-йěн | манни-н. |
| П. А. Манăн-не | ман-не |
| В. Манăннин-ђе | маннин-ђе, ман-ђе |
| Т. Манăннин-ђен | маннин-ђен, ман-ђен |
| П п. Манăнни-пе | манни-пе, ман-пе. |

*Нумайлă хисеп.*

| | |
|---|---|
| Й. Манăнни-сем | манни-сем |
| Х. Манăннин-сен-ěн | манни-сен-ěн |
| П. А. Манăннин-сен-е | манни-сен-е. |

тата ыттисем те.

Камăннипе пěлтерекен уйрăм сăмахсем ыттисем те çак „манăнни" сăмах пекех вěçленеççě. Хăш калаçусенђе И вырăнне Ě хушаççě, Н сасса вăрăмлатманнисем те пур: манăннě-манăнě, салтакăннě-салтакăнě, теççě.

Камăннине пěлтерекен паллă йађěсен иккěмěш кěлетки çук; пěрмěшěпе виççěмěшě кăна.

Хăвăнне ан пар, çынăнне ан ил. Пирěннисене куртăра? Вара Инти çынни каланă: сирěннисем ман ывăлăма вěлерђěç, епě сана вилěмрен хăтартăм; хăвăрăннисем патне кай та пирěннисене вěлер, тенě. Пěр мулкађи калаť: пирěн пурăнăç çапах шапасеннинђен лайăх курăнаť, вěсем пиртен те хăраççě, тет.

131 §. Кěлетке тěлěшěнђен шут сумěсемпе *) пуçтарăну сумěсем йапала йађěсем. Йěрке сумěсем—паллă йађěсем. Вак сумěсем шут сумěсемпе йěрке сумěсенђен пулнă, анђах *скер* сыпăка йышăнмаççě; çавăнпа вěсем паллă йађěсем. Валеçў сумěсем çинђен, маттериал сахал пирки хытах тěпђейменрен, ку кěнекере татсах каламан.

Сумсен пулăвě, вěсене хăçан йепле калани çинђен малалли пилěк §-ра каланă.

*) „Сума тăрсан сум çитмě" тийекен халлап пур. Сум кунта хисеп тенине пěлтерет. Сум тесе ěлěк çěр пус хут укçана та каланă. Вăл йанăракан укçаран виççě хут та çурă йўн пулнă.

28½ пус—пěр сум—100 п.

30 пус—сум та пилěк пус—105 п.

60 пус—икě сумта вунă пус—210 п.

### 132 §. Шут сумĕсем.

1.—Пĕрре, пĕре, пĕр.
2.—Иккĕ, икĕ, ик.
3.—Виççĕ, виçĕ, виç.
4.—Тăваттă, тăвату, тăват.
5.—Пиллĕк, пилĕк.
6.—Улттă,ултă, улт.
7.—Çиççĕ, çичĕ, çич.
8.—Саккăр, сакăр.
9.—Тăххăр, тăхăр.
10.—Вуннă, вунă, вун.
11.—Вуннĕр.
12.—Вуниккĕ, вуникĕ, вуник.
20.—Çирĕм.
21.—Çирĕм пĕр
22.—Çирĕм иккĕ, çирĕм икĕ, çирĕм ик.
30.—Вăтăр.
40.—Хĕрĕх.
50.—Аллă
60.—Утмăл.
70.—Çитмĕл.
80.—Сакăр вуннă, вунă, вун.
90.—Тăхăр вуннă, вунă, вун.
100.—Çĕр.
101.—Çĕр те пĕрре, çĕр те пĕр.
102.—Çĕр те иккĕ, икĕ, ик.
111.—Çĕр те вуннĕр
118.—Çĕр те вунсаккăр, вунсакăр
120.—Çĕр çирĕм.
121.—Çĕр çирĕм пĕр.
200.—Икĕ çĕр, ик çĕр.
1000.—Пин.
1001.—Пин те пĕрре, пĕре, пĕр.
1002.—Пин те иккĕ, икĕ, ик.
1101.—Пин те çĕр пĕрре, пĕр.
1119.—Пин те çĕр вунтăххăр, тăхăр.
2000.—Икĕ, ик пин.
25.467.—Çирĕм пилĕк пин те тăват çĕр утмăл çиччĕ, çичĕ, çич. 1000,000—Мелйун.

1. 101-пе 119 хушшинҫи сумсем варрине „ҫӗр“ тенӗ хыҫҫӑн „те“ кӳртсе лартаҫҫӗ: ҫӗр те ҫиҫҫӗ, ҫӗр те вуниккӗ. Сумра пинсем, мӗлйунсем пулсан, „те“ пин хыҫҫӑн, йе мӗлйун хыҫҫӑн пулаҭ: пин те икӗ ҫӗр ҫирӗм пиллӗк—1225, тӑватӑ мӗлйун алӑ икӗ пин те ҫиҫҫӗ ҫӗр хӗрӗх (4052740), ҫиҫҫӗ мӗлйун та хӗрӗх виҫҫӗ—7000043.

Ҫак „те“ йӗркепе валеҫӳ сумӗсене те кӗрсе лараҭ.

2. 1-пе 10 хушшинҫи сумсене йапала йаҫӗсӗр калаҫҫӗ пулсан, вӗсен варринҫи хупӑ сасӑ вӑрӑмланаҭ. Пӗрре, ултта; вуннӑ; йапала йаҫӗпе калаҫҫӗ пулсан вӑрӑмланмасҭ: пӗр ҫын, ултӑ пӑт, ултӑ ҫӗр, вунӑ мӗлйун.

3. Хыҫалти Ӑ Ӗ сасса пит хытах тиркесе каламаҫҫӗ: ҫиҫҫӗ ҫухрӑм „та“ ҫиҫ ҫухрӑм та тӗҫҫӗ.

## 133 §. Йӗрке сумӗсем.

Йӗрке сумӗсем кӗскелмен шут сумӗсем ҫумне *мӑш*, *мӗш* хушӑран пулаҫҫӗ. Йатсӑр калаҫҫӗ пулсан, хыҫала *мӑш, мӗш* ҫумне виҫҫӗмӗш пит сыпӑкӗ Ӗ хушӑнаҭ.

| | |
|---|---|
| 1.—Пӗремӗш, пӗрмӗш. | 4.—Тӑваттӑмӑш. |
| 2.—Иккӗмӗш. | 5.—Пиллӗкмӗш. |
| 3.—Виҫҫӗмӗш. | |
| 11.—Вунпӗрмӗш. | 120.—Ҫӗр ҫирӗмӗш. |
| 20.—Ҫирӗммӗш. | 121.—Ҫӗр ҫирӗм пӗрремӗш. |
| 100.—Ҫӗрмӗш. | 200.—Икҫӗрмӗш. |
| 101.—Ҫӗр те пӗрмӗш. | 301.—Виҫҫӗр пӗрремӗш. |
| 102.—Ҫӗр те иккӗмӗш. | 1000.—Пинмӗш. |
| 110.—Ҫӗр те вунтӑххӑрмӗш. | 1923.—Пинте тӑхӑрҫӗр ҫирӗм виҫҫӗмӗш. |

*Хушша калани.* Хӑш авалхи кӗлеткесенҫе йӗрке сумӗ кӑшт урӑхла—М сасӑпа пӗтет:

| | |
|---|---|
| Виҫӗм | кун |
| Виҫем | ҫул |
| Тӑватӑм | кун |
| Тӑватӑм | ҫул |

Ҫапла пулсан, авал йӗрке сумӗ М сасӑпа пӗтнӗ пулаҭ. Уйрӑм каланӑ ҫух, ун ҫумне виҫҫӗмӗш сӑн сыпӑкӗ *ӗшӗ* хушнӑ пулмалла. Кайран пурӑна киле „*мӗшӗ*“ кӗскелсе „*мӗш*“ кӑна йулнӑ пулмалла, анҫах уйрӑм каланӑ ҫухне, виҫҫӗмӗш сӑна кӑтартма, Ӗ хуша пуҫланӑ пулмалла. Вара хаҫхи уйрӑм каланӑ. ҫухнехи „пӗрремӗшӗ иккӗмӗшӗ“ кӗлеткесем тепӗр хут тухса кайнӑ пулмалла.

### 134 §. Вак сумĕсем.

Халăх ҫĕлхинҫе „ҫурă, ҫуррăн, ҫурри, ҫĕрĕк, уҫмухха“ тенекен вак сумсем пур $^1/_3$ сума виҫ пайран пĕр пайĕ йе виҫҫĕмĕш майĕ теҫҫĕ, $^1/_6$ сума ултă пайран пĕр пайĕ йе ултăмăш пайĕ теҫҫĕ. $^2/_6$ сума ултă пайран икĕ пайĕ теҫҫĕ. $^1/_6$ сума ултăмăш пай—(пĕр) ултăмăш пай тесен, $^2/_6$ сума икĕ ултăмăш пайĕ теме пулаҭ, йатсăр каласан, икĕ ултăмăшĕ пулаҭ. $^2/_6$ сума ик ултăмăшĕ тесен малаллы сумсене вара ҫапла калама пулаҭ.

$^2/_3$—Икĕ виҫҫĕмĕшĕ.

$^3/_4$—Виҫĕ тăваттăмăшĕ.

$^2/_5$—Икĕ пиллĕкмĕшĕ.

$^5/_8$—Пилĕк саккăрмăшĕ.

$^7/_{16}$—Ҫиҫĕ вунултăмăшĕ.

$1^1/_2$—Пĕре те ҫурă.

$4^3/_8$—Тăваттă та виҫĕ саккăрмешĕ йе: 4 пĕтĕм те виҫĕ саккăрмăшĕ.

$7^5/_8$—Ҫиҫҫĕ те пилĕк ҫиҫҫĕмĕшĕ йе: 7 пĕтĕм те пилĕк ҫиҫҫĕмĕшĕ.

Вак сумĕсем йатлă пулсан хыҫалта *мĕш* кăна пулаҭ: икĕ виҫĕмĕш пăт; йатсăр пулсан *мĕш* ҫумне Ĕ хушăнаҭ: икĕ виҫҫĕмĕшĕ.

$2^1/_3+2^2/_5=4^{11}/_{15}$ тесе ҫырнине ҫапла вулама пулаҭ:

а) Иккĕ те пĕр виҫҫĕмĕшĕ ҫумне иккĕ те икĕ пиллĕкмĕшĕ хушшан, тăваттă та вунпĕр вунпиллĕкмĕш пулаҭ.

е) Икĕ пĕтĕм те пĕр виҫҫĕмĕшĕ ҫумне икĕ пĕтĕм те икĕ пиллĕкмĕшĕ хушшан, тăватă пĕтĕм те вунпĕр вунпиллĕкмĕшĕ пулаҭ.

$8^7/_9-3^1/_{18}=5^{13}/_{18}$ тесе ҫырнине ҫапла вуламалла пулаҭ:

а) Саккăр та ҫиҫĕ тăххăрмăшĕнҫен виҫĕ те пĕр вунсаккăрмăшĕ кăларсан, пиллĕк те вунвиҫ вунсаккăрмăшĕ йулаҭ.

е) Сакăр пĕтĕм те ҫиҫĕ тăхăрмăшĕнҫен виҫĕ пĕтĕм те пĕр вунсаккăрмăшне кăларсан, пилĕк пĕтĕм те вунвиҫ вунсаккăрмăшĕ йулаҭ.

$3^5/_6 : 2^1/_7=^{13}/_{45}$ тесе ҫырни: виҫҫĕ те (виҫĕ пĕтĕм те) пилĕк ултăмăшне иккĕ те (икĕ пĕтĕм те) пĕр ҫиҫҫĕмĕшне уйăрсан (валеҫҫен, пайласан) вунвиҫ хĕрĕх пиллĕкмĕшĕ пулаҭ.

### 135 §. Валеҫў сумĕсем.

Валеҫў хисепĕ тума шут ҫумĕ ҫумне *шар, шер* хушăнаҭ:

| | |
|---|---|
| 1.—Пĕрер (пĕршер). | 200.—Икшер ҫĕр. |
| 2.—Икшер. | 201.—Икҫĕр пĕршер. |

3.—Виçшер.
4.—Тăватшар.
5.—Çиҫшер.
10.—Вуншар.
11.—Вуныпĕршер.
31.—Вăтăрпĕршер.
101.—Çĕр те пĕрер.
102.—Çĕр те икшер.
121.—Çĕр çирĕм пĕршер.
300.—Виçшер çĕр.
400.—Тăватшар çĕр.
900.—Тăхăршар çĕр.
1000.—Пиншер.
1001.—Пин те пĕрер.
1002.—Пин те йкшер.
2000.—Икшер пин.
2115.—Икĕ пин те çĕр вун-пилĕкшер.

1. *Шар, шер* сыпăк хыçĕнҫен те, варринҫен те кĕскелнĕ сумсем çумне хушăнаĭ; саккăршар, тăххăршар сумсенҫе кăна варринҫи хуна сасăсем иккĕленнипех йулаççĕ.

2. „Пĕрер“ ахаҫ пĕререн йе „те“ хыççăн пулакан пĕререн пулаĭ: пĕрер; çĕр те пĕрер, пин те пĕрер.

3. Сумра çĕрсем, пинсем пулсан, *шар, шер* „çĕр, пин“ сăмах умĕн пулаĭ: икшер çĕр, пилĕкшер çĕр, тăхăршар çĕр, икшер пин.

### 136 §. Пуçтарăну сумĕсем.

Йĕрке сумĕсем йатсăр тăраççĕ пулсан, епĕр вĕсем виççĕмĕш сăпат сыпăкĕн Ĕ сасса йышăннине куртăмăр: виççĕмĕшĕ, вуннăмăшĕ. Ĕ вак сумĕсем çумне те хушăнаĭ: виçĕ çиҫҫĕмĕшĕ, пĕр çирĕммĕшĕ. Шут сумĕсем çумне тата сăнсене пĕлтерекен ытти сыпăксем хушăнаççĕ:

Ик—с—ĕмĕр ик—с—ĕр икк—ĕ—шĕ.
Виç—с—ĕмĕр виç—с—ĕр виçç—ĕшĕ.
Тăват—с—ăмăр тăват—с—ăр тăватт—ăшĕ.

Кун пек сăмахсене *пуçтарăну сумĕсем* теме пулаĭ.

1. Кунта *ăмăр, ĕмĕр; ăр, ĕр; ăшĕ, ĕшĕ*—камсем иккенне пĕлтерекен сыпăксем (59 §). С сыпăк пулас пайташ сыпăкĕнҫи—„илес, курас“ сăмахри С сасăпа пĕр пулмалла. Тутарла каласан, çав С вырăнне *сă, сĕ* сыпăк пулаĭ: аласă, кўресĕ.

2. Пысăк сумсенҫе пĕрмĕшпе иккĕмĕш сăпат сыпăкĕсене каламаççĕ; виççĕмĕш сăпат сыпăкĕ каланаĭ: тăххăрăшĕ, çирĕмĕшĕ, хĕрĕхĕшĕ.

### 137 §. Паллă йаҫĕсем çинҫен пĕрлештерсе калани.

1. Паллă йаҫĕсем йапала йаҫĕсем пекех вĕçленеççĕ. Унрăн пуçне тата вĕсен танлаштару кĕлеткипе виçкĕлеткелĕх пур, анҫах ку пурин те мар. Çапла вара пур паллă йаҫĕ те пĕтĕм кĕлеткеллĕ мар, пуринҫен ытла нумайăшин танлаштару кўлепи йе иккĕмĕш кўлепе пулмасĭ.

*Тĕслĕхсем:*

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ырă çын | ырăскер | ырри | ырăрах |
| Çĕнĕ пӳрт | çĕнĕскер | çынни | çĕнĕрех |
| Вулас кĕнеке | вуласскер | вуласси | — |
| Килти çын | килтискер | килти | — |
| Иккĕмĕш аҫа | — | иккĕмĕшĕ | — |
| — | — | салтакăнни | — |
| — | — | хăвăрăнни | — |

2. Пуплевре паллă йатсен пуçламăш кĕлеткисем уйăрсакалу пулаççĕ, йапала йатне пăхăнса тăраççе, вĕçленмеççĕ; тата пуплев калавĕ пулаççĕ. Хăш йапала йаҫĕсем—ырă, пуйан пек сăмахсем йапала йаҫĕ пĕк уйрăм тăрса вĕçленме пултараççĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш кĕлеткесем йапала йаҫĕ вырăнне пулса вĕçленеççĕ.

3. Пĕлтерĕш йенҫен пăхсан, ку ушкăнри сăмахсен пуçламăш кĕлеткисем йапаласен паллине, йеплелĕхне пĕлтереççĕ.

4. Вырăс ҫĕлхинҫе йапала йаҫĕсемпе паллă йаҫĕсем хушши пит пысăк. Ҫăваш ҫĕлхинҫе апла мар. Нумай ҫухне вĕсене пĕр пĕринҫен уйăрма та çук. Ырă, пуйан, суккăр пек сăмахсем çинҫен малта каланăҫҫĕ. Тата „тимĕр ҫул, суйа, тĕп“ сăмахсене илер. Çапла хăна илсессĕн, вĕсене пур те йапала йаҫĕсем теççĕ. Халĕ „тимĕр тылă, ҫул çурт, суйа сăмах, тĕп сăмах“ тийекен калусене илер. Çапла каласан вĕсенҫе нумайăшĕ паллă йаҫĕсем тесе калĕç, мĕншĕн тесен, вĕсем ыйтăнасса паллă йаҫĕсем пекех мĕнле? тесе ыйтăнаççĕ, тата уйăрсакалу пулса тăраççĕ. Çапла вара, çак ик йенҫен пăхсан, вĕсем паллă йаҫĕсем пек. Анҫах кĕлеткелĕх йенҫен вĕсене паллă йаҫĕсем тесе калама май килмест, мĕншĕн тесен, вĕсем танлаштару кĕлеткине те, виçкĕлеткелĕхе те йышăнмаççĕ. Вĕсене паллă йаҫĕ тесен, „Йехрем хуçа, Тимĕрçĕ Петĕр, йун кун, çăрттан пулă“ калури „Йехрем, Тимĕрçĕ, йун, çăрттан“ сăмахсене те паллă йаҫĕсем тес пулаҫ, мĕншĕн тесен, вĕсем те уйăрса калусем пулса тăраççĕ, тата мĕнле? тесе те ыйтăнаççĕ*)

## 138 §. Пайташшем.

Пайташшем пĕр йенҫен ĕçхĕлсем пек, мĕншĕн тесен вăхăта пĕлтереççĕ: хаҫхи вăхăта, иртнĕ вăхăта, пулас вăхăта. Анҫах

*) Тĕлĕн тĕлĕн „Лашалласкер ут илсе йатăм“ тес вырăнне „пĕр лашаскер ут илсе йатăм“ теççĕ. „Ҫăваш пулни“ тес вырăнне „ҫăвашши“ теççĕ („Есĕ ҫăвашши пит йурарĕ“) Кунта епĕр çĕнĕ пулăмсем куратпăр. Вĕсем йапала йаҫĕпе паллă йаҫĕсем хушшине тата сахаллатарах параççĕ.

пайташшен ĕçхĕлсенҫи пысăк пaллăлăхĕ çук: вĕсем сăпатланмаççĕ, сăпатланас вырăнне вĕçленеççĕ, тата паллă йаҫĕсем виçкĕлеткелĕхне йышăнаççĕ. Ку йенҫен вĕсем паллă йаҫĕсем. Анҫах тулли паллă йаҫĕсем те мар, мĕншĕн тесен, танлаштару кӳлеписене йышăнмаççĕ. Ку та пĕтĕмпех марха. Ҫăваш ҫĕлхинҫе тата пайташшем, йапала йаҫĕсем пек, камăннине пĕлтерекен сăн сыпăкĕсене йышăнаççĕ. Сăмахран „вĕрентекен, вĕрентес" пайташшене илер. Сăпатсыпăкĕсене йышăнсан, вĕсем ак мĕнле пулаççĕ.

| | | |
|---|---|---|
| 1—ш. Сăпат: | вĕрентекенĕм, | вĕрентекенĕмĕр. |
| | вĕрентессĕм, | вĕрентессĕмĕр. |
| 2—ш. Сăпат: | вĕрентекенӳ, | вĕрентекенĕр. |
| | вĕренессӳ, | вĕренессĕр. |
| 3—ш. Сăпат: | вĕрентекенĕ йе | вĕрентекенни. |
| | вĕренесси, | |

Çапла вара ҫăваш ҫĕлхинҫе пайташшем ĕçхĕлсĕм пек вăхăта пĕлтереççĕ; паллă йаҫĕсем пек виçкĕлеткелĕхе йышăнаççĕ; йапала йаҫĕсем пек камăннине пĕлтерекен сăпат сыпăкĕсене йышăнаççĕ. Пуринҫен ытла вĕсем пуплевре мĕнре паллă йаҫĕсем пулаççĕ.

## Çурă вĕçлевлĕ сăмахсем.

**139 §.** Умĕнҫе кăна тăракан уйăрсакалусемсĕр пуçне, вĕçленекен сăмахсем пур вĕçлĕхре те пулма пултараççĕ. Вĕсене *пĕтĕм вĕçлевлĕ* сăмахсем теме пулаӳ. Вĕсенҫен пуçне тата ҫăваш ҫĕлхинҫе *çурă вĕçлевлĕ* сăмахсем пур. Вĕсем—пăрахăçа тухнă йапала йаҫĕсенҫен пулакап, анҫах йат вĕçлевлĕхĕнҫе пулман, йе сайра хутра кăна пулакан сăмахсем. Çурă вĕçлевлĕ сăмахсене икĕ пайа уйăрма пулаӳ: çурă вĕçленӳллĕ ахаҫ йатсем, тата вĕçленекен йатхыçĕсем.

### 140 §. Çурă вĕçлевлĕ ахаҫ йатсем.

Тĕслĕхсем: шал—внутрь, кай—зад, çӳл—верх, хыçал—зад, тул—наружность, çийел—поверхность, айак—бок, сторона. Вĕсем пару, вырăн, туху вĕçлевлĕхĕсенҫе пулаççĕ, вĕçлевлĕх сыпăкĕсем тӳрех весен çумне хушăнаççĕ.

| | | |
|---|---|---|
| П. Шала | кайа | çӳле |
| В. Шалта | кайра | çӳлте |
| Т. Шалтан | кайран | çӳлтен |

*Хушша калани.* Çурă вĕçлевлĕ ахаҫ сăмахсем йат вĕçлевлĕхĕнҫе те пулкалаççĕ тенĕҫҫĕ. Тĕслĕхсем: Тул сутăлаӳ. Шал йенҫен питĕрнĕ.

### 141 §. Вĕçленекен йатхыçĕсем.

Вĕçленекен йатхыçĕсем камăннине кăтартакан сыпăксемпе пулаççĕ; кĕскетсе каласан, пĕрмĕшпе иккĕмĕш сăнра вĕсемсĕр те пулаççĕ; уйрăм нихăçан та пулмаççĕ пĕр пĕр йат хыçĕнҫе пулаççĕ. умĕнҫи сăмах, йат вĕçлевлĕхĕнҫи пек, тăраĭ, улшăнмасĭ; хăйсем пару, вырăн, туху, вĕçлевлĕхĕнҫе пулма пултараççĕ. Çыкăн пек самахсем нумайах мар; вĕсенҫен хăшĕ ак çаксем:

Ай—низ.
Çи—верх.
Пат—близост,ь близ, и, около, до, у.
Çум—подле, рядом, вплоть.
Ум— перед.
Ăш—внутренность.
Хыç—зад, за.
Çывăх—близко.
Хушă—промежуток, между.
Тĕл—место, цель.
Хĕр—край.

#### 1. Ай.

П. Ман айăма, айа.
В. Ман айăмра, айра.
Т. Ман айăмран, айран.

П. Пирĕн айăмăра, айа.
В. Пирĕн айăмăрта, айра.
Т. Пирĕн айăмăртан, айран.

П. Сан айна, айа.
В. Сан айăнта, айра.
Т. Сан айăнтан, айран.

П. Сирĕн айăра, айа.
В. Сирĕн айăрта, айра.
Т. Сирĕн айăртан, айран.

П. Ун, вĕсен айне
В. Ун, вĕсен айĕнҫе
Т. Ун, вĕсен айĕнҫен

П. Улăм айне
В. Улăм айĕнҫе
Т. Улăм айĕнҫен.

## 2. Пат.

П. Ман патăма, пата
В. Ман патăмра, патра
Т. Ман патăмран, патран

П. Пирĕн патăмăра, пата
В. Пирĕн патăмăрта, патра
Т. Пирĕн патăмăртан, патран.

П. Сан патна
В. Сан патăнта
Т. Сан патăнтан

П. Сирĕн патăрта, пата
В. Сирĕн патăрта, патра
Т. Сирĕн патăрган, патран

П. Ун, вĕсен йуман патне
В. Ун, вĕсен, йуман патĕнҫе
Т. Ун, вĕсен, йуман патĕнҫен.

Иван кашкăрпа тилĕ ҫинҫен халап йарса паҫĕ. Епĕр арман патĕнҫен иртсе кайрăмăр. Кăтăр кăтăр арман ҫулĕ ҫĕре ҫинҫе авăртаҭ, арман ҫулĕ айĕнҫе мĕскĕн ҫĕре ҫурăлаҭ. Апат хыҫĕнҫен сĕтел ҫине кашăк манса йулсассăн, хăна килет, теҫҫĕ.

## 142 §. Пуплевлĕ йатсем.

Аҫасем вăрмана ҫырлана кайаҫҫĕ.
Аҫасем вăрмана ҫырлана кайрĕҫ.
Аҫасем вăрмана ҫырлана кайнă.

Халĕ ҫак виҫĕ пуплев ҫумне пурин ҫумне те уйăрса илнине кăтартакан виҫҫĕмĕш сăн сыпăкне И сасса хушар. Вара пирĕн акă мĕн пулаҭ:

Аҫасем вăрмана ҫырлана кайни.

То, что дети ходят (или ходили) в лес за ягодами, халĕ пулас вăхăта илер:

Аҫасем вăрмана ҫырлана кайĕҫ.

Виҫҫĕмĕш сăн сыпăкне И сасса хушшан
Аҫасем вăрмана ҫырлана кайасси пулаҭ. Ытти тĕслĕхсем:

Пирĕн ĕне хĕрлĕ
Пирĕн ĕне хĕрли.

***

Пирӗн ӗне иккӗ
Пирӗн ӗне икки.

«Аҫасем вӑрмана кайни, аҫасем вӑрмана кайасси, аҫасем вӑрмана каймалли, пирӗн ӗне хӗрли» пек кӳлепесене пуплевле йатсем теҫҫӗ. Пуплевле йатсем ахаҫ сӑмахсем пекех вӗҫленеҫҫӗ. Пуплевле йатсенҫи йулашки сӑмахӗ пуринҫен ытла паллӑ йаҫӗсемпе пайташшем пулаҫҫӗ. Ҫавӑнпа пуплевле йатсем паллӑ йаҫӗсемпе пайташшем пекех вӗҫленеҫҫӗ, вырӑн вӗҫлӗхӗ кӑна сайра пулаӗ.

Тӗслӗхсем: Пирӗн ӗне хӗрли никама та сиен тумасӗ. Пирӗн ӗне хӗрлийӗ сана мӗне кирлӗ? Ҫынсем пирӗн ӗне хӗрли ҫинҫен калаҫаҫҫӗ. Епӗр аҫасем вӑрмана ҫырла татма кайнине куртӑмӑр. Аҫасем вӑрмана кайнинҫен (кайасран, кайнӑран) мӗн хӑрасси пур. Ҫу шӑрӑх тӑнипе тырӑсем ҫунса кайрӗҫ.

Хӑш тӗлсенҫе И сасӑ пулмасӗ (тухса ӳкет пулмалла): Мускава лекетӗн пулӗ.— Есӗ Мускава лекессе ан ӗмӗтлен. Хӗвел анаӗ. — Хӗвел анаспа киле ҫитрӗмӗр. Утӑ ҫулма йавӑр.—Утӑ ҫулма йавӑртан (йаварринҫен) ан хӑра. Епӗ килтен тухрӑм.— Епӗ килтен тухнӑранпа вунӑ ҫул иртрӗ.

Хӑш тӗлсенҫе пуплевле йатра сӑмахсен йӗрки улшӑнаӗ: Пирӗн йысна икӗ ҫул мунҫа кӗмен. — Пирӗн йысна пит хура, икӗ ҫул мунҫа кӗментен. Аҫапӑҫа усал сӑмах калаҫаӗ. — Аҫапӑҫана усал сӑмах калаҫасран ҫарӑр. Ыран шӑматкун. Шӑматкун ыранни маншӑн питех мар.

---

## IV. Улшӑнман сӑмахсем.

143 §. Кӗлеткеллӗ, анҫах улшӑнман сӑмахсене икӗ пайа уйӑрма пулаӗ. Хӑшӗ вӗсем вӗҫленекен сӑмахсемпе килӗшеҫҫӗ, вӗсем хыҫҫӑн пулаҫҫӗ. «Урлӑ, пирки» сӑмахсене илер: урам урлӑ, хӗрли урлӑ, ман пирки, укҫа пирки куп пек сӑмахсем йатхыҫӗнҫисем пулаҫҫӗ. Хӑш улшӑнман сӑмахсем ӗҫхӗлсемпе пулаҫҫӗ, вӗсене пӑхӑнаҫҫӗ: виҫмине пыр, тырӑ сутма кай. «Виҫмине, сутма йышши сӑмахсем кӗлеткеллӗ ӗҫхӗлҫумӗсем пулаҫҫӗ.

### 144 §. Йатхыҫӗсем.

Тӗрлӗ йатхыҫӗ тӗрлӗ вӗҫлевлӗх ыйтаӗ: хӑшӗ йат вӗҫлӗхӗпе хӑшӗ харкам вӗҫлӗхӗне, хӑшӗ тата ыттисене.

1. **Йат вĕçлевлĕхне тата иккĕмĕш йатсен харкам вĕçлевлĕхне** ыйтаканнисем:

ман, пирĕн, лаша, лашасем, вĕсем.

- валли — для
- витĕр — сквозь, через.
- урлă — через, поперек.
- пирки — по причине, из-за.
- тăрăх — вдоль, посредством, по причине.
- таран — до, около
- тавра — кругом, вокруг, окрестность.

Тăрăх сăмах сăмах пару вĕçлĕхне те ыйтма пултарать: урама тăрăх.

2. **Пару вĕçлевлĕхне** ыйтаканнисем: **пула, хирĕç**: мана, сана, лашана, лашасене пула, хирĕç.

3. **Айăплав вĕçлевлĕхне** ыйтаканнисем: **кура**—мана, сире, вĕсене, çынсене кура.

4. **Туху вĕçлевлĕхне** ыйтаканнисем: **пуçне**—манран, унран, лашаран, лашасенҗен пуçне.

5. **Пĕрпулу вĕçлевлĕхне** ыйтаканнисем: **пĕрле**—манпа, унпа, лашапа, лашасемпе пĕрле.

## 145 §. Йатхыçĕсен пулăвĕ.

**Валли** валĕ сăмахран пулнă пулмалла; валеç, валем сăмахпа пĕр тымартан. **Урлă**=ур-лă; ур сăмахпа пĕр тымартан марши? Пирки—пирке сăмахран. Тавра—тав-ра: тавлăк сăмахпа пĕр тымартан. Тавра—тав сăмахăн выран вĕçлевлĕхĕ: пуху вĕçлевлĕхĕ—тавран; таран сăмах тавран сăмахран кĕскелсе пулнă пулмалла. Пула, кура—керуитисем. Пуçнĕ—виççĕмĕш сăнлă сыпăклă сăмахăн пару вĕçлевлĕхĕ.

Йат хыçĕсем пур те пĕрех хăйсен малтанхи пĕлтерĕшĕсене çухатса улшăнми пулнă йапала йаҗĕсем. Вĕсем пур те пĕр лекех хытса çитеймен. Сăмахран «пирке» сăмах туху вĕçлĕхĕнҗе те, виççĕмĕш сăнра та пулма пултарать: «çав пиркерен» йе: «мĕн пирки» теççĕ. Хăш сăмахсем виçтăват вĕçлевлĕхре те пулма пултараççĕ. Епĕр вĕсене çурă вĕçлевлĕ сăмахсем терĕмĕр (140§).

## Ёҫхӗлҫумӗсем.

**146 §.** Ёҫхӗлҫумӗсем хӑйсен йатне йумахра ёҫхӗлсемпе пӗрле тӑнӑран илнӗ. Анҭах вӗҫленекен сӑмахсемпе пӗрле пулакан ёҫхӗлсем те пур. Сӑмахран—Есӗ кӑна килтӗни? тенӗ пуплеве илер. „Кӑна“ кунта ёҫхӗлҫумӗ, ҫапах та вӑл йапала йаҭӗсемпе пӗрле тӑрать. Пӗлтерессе ёҫхӗлҫумӗсем пуплевре таврашшеҫе пӗлтерессӗ: хӑҫан? йепле? миҫе? тесе, тата урӑхла та ыйтӑнаҫҫӗ.

Пуплевне пӑхса ёҫхӗлҫумӗсене икӗ пайа уйӑрма пулать: вӗҫленекен сӑмахсенҭен пулнӑ ёҫхӗлҫумӗсем, тата сӑйланакан сӑмахсенҭен пулнӑ ёҫхӗлҫумӗсем.

### 147 §. Вӗҫленекен сӑмахсенҭен пулнӑ ёҫхӗлҫумӗсем.

1. Кӑтартуллӑ йатвыранҭисен вырӑнпа туху вӗҫлевлӗхӗсем: унта, унтан, кунта, кунтан, ҫакӑнта, ҫакӑнтан, ҫавӑнта, ҫавӑнтан.

2. Хӑш йапала йаҭӗсен пӗрпулу вӗҫлевлӗхӗ: ҫӗрӗпе, ҫӗрӗ ҫӗрӗпе, хӗлӗпе, хӗлӗ хӗлӗпе, ҫавӑнпа, йӗркипе, пӗтӗмпе, пуҫӗпе, йерппе, сиккипе.

3. Хӑш сӑмахсен пару вӗҫлевлӗхӗ: ҫуркунне, кӗркунне, ирхине, ун ҭухне, малашне, виҫмине.

4. Йат вӗҫлевлӗхӗ—айӑплав вӗҫл.: ҫуллен ҫул, каҫал (ку ҫул) хӑш ҭух, пӗрре, пӗрмай, пӑртак, пӗркун.

5. Иккӗленнӗ сӑмахсем: куҫа куҫӑн, тӳрте тӳртӗн, аларан алла, кунтан кун, вырӑнӑн вырӑн.

6. Йатсем ҫумне *ла, ле* сыпӑк хушӑннӑран пулнисем: ҫӗр—ҫӗрле, ҫу—ҫула, хӗл—хӗлле, кӑнтӑрла (кун+тӑрри), месерле.

Ҫак ёҫхӗлҫумӗсем пур те вӗҫленекен сӑмахсенҭен пулни палӑлах. Хӑш хӑш вӗҫленекен сӑмахсен пӗр пӗр вӗҫлевлӗхӗ хытса ларнӑ та, пӗлтерӗшӗ те унӑн улӑшӑнса кайнӑ; анҭах хытса ларни те, пӗлтерӗшӗ улшӑнни те пур сӑмахсен пӗр пек мар. Ҫак шухӑша 115-мӗш. стр. карта туса кӑтартса панӑ.

Йапала йатне пӗлтерет пулсан, «пуҫӗпе» тени «с его головою» тени пулать: хӑй пуҫӗпе шухӑшлать. «Пуҫӗпех парса йанӑ» тесен «пуҫӗпе» сӑмах кунта пӗтӗмпех, йаланлӑха парса йанине пӗлтерет, ёҫхӗлҫумӗ пулать. Малашне, пӗрмай, сиккипе, хӑйаккӑн сӑмахсем пӗтӗмпех хытса ларнӑ: пӗр ӑнланӑва кӑна пӗлтерессӗ.

| Йат в. | Харкам в. | Пару в. | Вырӑн в. | Туху в. | Пӗрпулу в. |
|---|---|---|---|---|---|
| Пӗрмай | — | — | — | — | — |
| — | — | — | — | — | пуҫӗпе |
| — | — | — | — | — | сиккипе |
| — | хӑйаккӑн | — | — | — | — |
| — | — | малашне | — | — | — |
| ыран | — | — | — | ырантан | ыраппа *) |
| — | — | — | унта | унтан | — |
| кай | — | кайа | кайра | кайран | — |
| шал | — | шала | шалта | шалтан | |
| тул | — | тула | тулта | тултан | — |

«Унта» сӑмах—вӑл (он, тот) сӑмахӑн вырӑн вӗҫлевлӗхӗ, анҫах халӗ вӑл ӗҫхӗлҫумне пӗлтерет, „там“ тени пулаҫ. «Вӑл» сӑмахӑн вырӑн вӗҫлевлӗхне каламалла пулсан, епӗр ҫав сӑмахах кӑшт урӑхларах калатпӑр: «унра» тетпӗр. Ку вара йапала йаҫӗ пулаҫ. Ҫапла вара, пӗлтерӗсене уҫӑрах калас тесе, епӗр пӗр вӗҫлевлӗхри сӑмахсенех икӗ тӗрлӗ калатпӑр: *унра*, тата: *унта* тетпӗр. Ку пӗтӗмпех марха. «Унта» сӑмах тӗпӗ туху вӗҫлевлӗхин вӗҫне йышӑннине те куратпӑр: *унтан* тетпӗр. Ку ӗҫҫумӗ пулаҫ; йапала йатне калас тесен, *унран* тетпӗр. Ҫапла вара пирӗн пӗр ӗҫхӗлҫумех икӗ вӗҫлевлӗхре пулма нултараҫ; йе урӑхла каласан, кӑшт та пулин вӗҫленме пултараҫ. „Ыран, ырантан, ыраппа“ сӑмахсем те ҫавӑн пекех.

Кайа йултӑм. Кайра тӑраҫ. Кайран пыраҫ. Кунта кай сӑмах вӗҫленнине, виҫӗ вӗҫлевлӗхре пулнине куратпӑр (140 §). Кайа, кайран сӑмахсем кунта, вӑхӑта та, вырӑна та пӗлтереҫҫӗ; кайра сӑмах вырӑна кӑна пӗлтерет. Вӑхӑта пӗлтереҫҫӗ пулсан, ку сӑмахсене ӗҫхӗлҫумӗсем теме пулаҫ. Ҫапла вара ӗҫхӗлҫумӗсем вӗҫленсе виҫӗ вӗҫлевлӗхре пулма пултарнине куратпӑр. Вырӑна кӑтартаҫҫӗ пулсан, вӗсене те ӗҫхӗлҫумӗсем темелле, те ҫурӑ вӗҫлевлӗ йатсем темелле: тата калама йӑвӑр. Шала, шалта, шалтан

*) Шӑнкӑр шӑнкӑр шыв йухаҫ
Ҫулпа хӑйӑр хушшипҫе;
Ыраппа пайан хушшинҫе
Хӗр ӗмӗрӗ иртетҫке!

сӑмахсене илсен, вӗсем йапала йаҫӗсем, мӗншӗн тесен, вӗсен пӗлтерӗшӗ те, вӗҫлевлӗх хӑваҫӗ те пит вайлӑ курӑнса тӑрать.

«Кӗркунне» ӗҫхӗлҫумне илсен, вӑл йапала йаҫӗ пулса, йапала йаҫӗ пекех вӗҫленме пултарать: кӗркунне, кӗркунненӗн, кӗркунневе, тата малалла та. Ун пек ӗҫхӗлҫумӗсем урӑх та пур.

Ҫапла вара акӑ мӗн курӑнать:

а) Вӗҫлевекен сӑмахсенҫен хӑшӗ ӗҫҫумӗ пулса пӗтӗмпех хытса ҫитнӗ, пӗр улшӑнми сӑмах пулса тӑнӑ.

е) Хӑш йатсем ӗҫхӗлҫумӗ пуласса пулнӑ, анҫах малтанхисем пекех хытса ҫитеймен: иквиҫ вӗҫлевлӗхре пулма пултараҫҫӗ.

у) Хӑш сӑмахсем пӗр пуплевре вӗҫленекен сӑмахсем; тепӗр пуплевре ҫав сӑмахсемех ӗҫхӗлҫумӗсем пулма пултараҫҫӗ. Ҫапла вара ҫӑваш ҫӗлхинҫе таса ӗҫхӗлҫумӗсемпе таса вӗҫленекен сӑмахсем хушшинҫе тӑракан сӑмахсем пур. Йепле хытса ҫитнине, тата мӗне пӗлтернине кура, вӗсем йе ӗҫхӗлҫумӗсене ҫывӑхрах тӑраҫҫӗ, йе вӗҫленекен сӑмахсене ҫывӑхрах тӑраҫҫӗ. Нумай телсенҫе вӗҫленекен сӑмахсемпе ӗҫхӗлҫумӗсен ҫиккине уйӑрма ҫук.

### Ӗҫхӗлсенҫен пулнӑ ӗҫхӗлҫумӗсем.

148 §. Вӗсене икӗ пайа уйӑрма пулать: пӗр пайӗ суппинсем, тепӗр пайӗ керунтисем.

### 149 §. Суппинсем.

Суппин тесе ӗҫе мӗншӗн тунине, тата мӗн тума тытӑннине пӗлтерекен кӗлеткене калаҫҫӗ. Ун пек кӗлетке иккӗ:

*Пӗрмӗш кӗлетки*: сутма, ларма, илме.

*Иккӗмӗш кӗлетки*: сутмашкӑн, лармашкӑн, илмешкӗн.

*Тӗслӗхсем*: Ашкула веренме ҫӳреҫҫӗ.. Йашкана йамашкӑн ҫу илтӗм. Епӗ санӑн тырруна вырса ҫӳреме ухмаха йермен вӗтха. Тарҫӑра пурӑнма хӗн. Ӗнене сутма пӗлмен, йӳне сутса йанӑ. Епӗр вӑййа тухсассӑн, каҫҫӑ тӑма выран ҫук.

Пӗрмӗш кӗлетке ӗҫхӗл тӗпӗ ҫумне *ма, ме* сыпӑк хушнӑран пулать. Ку кӗлетке авалхи ҫӑваш ҫӗлхинҫи *мак, мек* сыпӑкпа пӗтекен кӑтартусӑр тайӑмран К сасса ҫухатсан (42 §) пулҫӑ пулмалла. Иккӗмӗш суппин авалхи кӑтартусӑр тайӑм ҫумне *шӑн, шӗн* хушнӑран пулнӑ, вара „лармашкӑн, илмешкӗн“ сӑмахсем пулнӑ. Хӑш калаҫура халӗ те ҫапла калакансем пур, пуринҫен ытла ҫапла ваттисем калаҫаҫҫӗ. Кайран К сасӑпа Ш сасӑ вырӑнӗсене улӑштарнӑ та (26 §), хаҫхи кӳлепеллӗ лармашкӑн, илмешкӗн пек сӑмахсем тухса кайнӑ.

### Керунтисем.

**150 §.** Керунтисем пуплеври калава йепле çывăх тăнине пăхса, çывăххисем, тата инçетрисем пулаççĕ.

### 151 §. Йунашар керунтисем.

а) *Хал керунтийĕ:* лар-а, ил-е, вула, çӳре (вулаа, çӳрее вырăнне). Аҫасене пайан темскер пулнă: йĕре çӳреççĕ. Атăлта шыв тула пыраҫ. Ана кура упи те хырăмне тата çийе пуçларĕ тет те, вилех кайрĕ тет.

е) *Ĕç керунтийĕ:* лар-са, вула-са, çӳре-се. Çуклăх кӳлепи: лармасăр, вуламасăр. Вăл çитмĕл ултă çула çитсе вилнĕ. Сăмаха илтмесĕр ҫĕлхӳне ан пăтрат. Тӳпелесе парса тӳпелесе илме парăсăнҫҫĕ!

Туй тăваççĕ çĕмĕрсе,
Унăн вĕçĕ хĕрри çук;
Тантăш патне çӳресе,
Йалта тантăш пĕтес çук.

*Хушша калани.* Çывăх керунтисем пулăшу ĕçхĕлĕсенҫе нумай тĕл пулаççĕ: сырса ил, вуласа тух, йарса ил, çапса йар.

### 152 §. Инçери керунтисем.

Вĕсем ытти сăмахсенҫен ак çапла сыпăксем хушăннăран пулаççĕ:

а) *ҫен:* ларн-ҫҫен, лара-ҫҫен; çӳри-ҫҫен, çӳре-ҫҫен; лар-ми-ҫҫен, çӳре-ми-ҫҫен. Ахаҫ тăриҫҫен кĕрĕк аркине те пулин йăвала, теççĕ. Ӳсал сăмах калиҫҫен пĕр çăвăр çăкăр хып. Аҫусене вăй çитеймиҫҫен ан ĕçлеттер. Ҫей ĕçиҫҫен выҫăхсене апат парса килерхă.

*Хушша калани. Ҫен* сыпăк вăхăта пĕлтерекен ытти сăмахсем çумне те хушăнаҫ: ыранҫҫен, касҫен, виç хуҫҫен. Кун пек кӳлепесем „ыран пулаҫҫен, кас пулаҫҫен" сăмахсенҫен кĕскелсе пулнă пулмалла (25 §).

е) *Ссан, сан:* кай-са-ссăн; кай-ма-са-ссăн, кай-ма-сан.

*Хушша калани.* Кайса, каймаса—малтан иртнĕ ĕç вăхăҫин тĕпĕ (80 §, 1). *Ссăн* тутарла *сун*,—„кайран" тенипе пĕр тымартан пулмалла.

у) *Ссерен:* лар-ма-ссерен, ил-ме-ссерен. Пирĕн атте пасара каймассерен пирĕн валли кулаҫă илсе тавăрăнаҫҫĕ.

*Хушша калани. Серен* (кунта пĕр С кăна) йапала йаҫ̌ĕсемпе те, пуринҫ̌ен ытла вăхăта, пĕлтерекен сăмахсемпе килĕштерме пултарать: ирсерен, каҫсерен, килсерен. „Ирсерен" пек йапала йаҫ̌ĕсем „ир пулмассерен" пек сăмахсенҫ̌ен кĕскелсе пулнă пулмалла (25 §).

ў) *Ҫемĕн:* Лартнăҫемĕн, илнĕҫемĕн. Ăс кĕнĕҫемĕн кутăнланарах парать.

